К 84.89(=Чув)
С32
4-50392

АНАТ СЕРЕП

# Ҫырусен пуххи

**Повесть**

*Вӗренекен ачасем валли*

Национальная библиотека ЧР
4-050392

К84,89(=Чув)
С32

Анат СЕРЕП

# Ҫырнисен пуххи

Повесть

*(Вӗренекен ачасем валли)*

Шупрашкар
«Ҫӗнӗ Вӑхӑт»
2020

Дарственный экз.

УДК 821.512.111-31
ББК 84(2=635.1)6-44
С32

Анат Сереп (Афанасьев А.Т.)
Ҫырнисен пуххи. – Шупашкар: «Ҫӗнӗ Вӑхӑт», 2020. – 152 с.

Хисеплӗ вулаканӑм! Ҫак повесть – вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр ҫулсем ҫинчен. Тӑван ҫӗршывӑмӑр умӗнчи пысӑк хӑрушлӑха сирсе ярассишӗн, Аслӑ Ҫӗнтерӳшӗн кӗрешни, яла юлнӑ ватӑсемпе ачасем вӑй-халне хӗрхенмесӗр ырми-канми тӑрӑшни, халӑх куҫҫулӗпе ӗненӗвӗ, ҫирӗп шанчӑкӗ – акӑ мӗн палӑрса тӑрать унта.

Мӗнпур вӑя фронта пулӑшма, мӗнпур вӑя ирӗклӗхпе ҫутӑ пуласлӑхшӑн, телейшӗн! Кӗнекепе паллашнӑҫемӗн, ҫак шухӑша, кашниех лайӑх туйса илӗ. Темле йывӑр пулсан та, тылри пӗчӗк паттӑрсем тӑрӑшса вӗреннӗ, юлташлӑхпа туслӑха ҫирӗп упранӑ. Ку кӗнеке тата ҫут ҫанталӑкпа тӑван тавралӑх ҫинчен. Вулакан унпа кӑсӑкланӗ тетӗп.

И-Б0392
Национальная библиотека
Чувашской Республики

© Анат Сереп, 2020



**Афанасьев Анатолий Трофимович**

## Пролог

Истори калана тăрăх, Мускав патшалăхĕнче, 1466 çулхи çĕртме уйăхĕнче çунă юр темиçе талăк ирĕлмесĕр выртнă. Тепĕр вунтăхăр çултан кăрлачра садсем шап-шурă чечеке ларнă. Анчах пуш уйăхĕнчи сивĕсене пула хăрса пĕтнĕ.

...Шăнкăртатса юхать Ентер шывĕ. Унăн икĕ енĕпе симĕс улăх сарăлса выртать, улăхра – тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕслĕ ем-ешĕл чечек-курăк ешерет. Çуллахи лăпкă та илемлĕ ир. Çулталăкри чи вăрăм кун пуçланать. Çак кун ирхине ирех йывăç-курăксемпе кайăк-кĕшĕксем лăпкăн тĕлĕрнĕ вăхăтра, сивĕ çил хăрушла кĕрлесе тухрĕ те, юр-пăр çума тытăнчĕ. Юрĕ шап-шурă та илĕртӳллĕ мар, хура та хĕрлĕрех тĕслĕ, тискер. Часах вăл пĕтĕм тавралăха хупласа илчĕ, шăнтса лартрĕ, сивĕтсе пăрлантарчĕ, тăвата талăка яхăн тăсăлĕ. Пĕтĕм чечексемпе курăксемшĕн питĕ йывăр вăхăт çитрĕ. Анчах та вĕсем самаях аманчĕç пулин те, парăнмарĕç, пуçĕсене пĕксе чăтрĕç, ютран килнĕ усал юрпа паттăрла кĕрешрĕç.

Хура пĕлĕт айĕнчи хĕвел пайăркисем ерипен шуса тухрĕç, вĕсене темиçе хутчен те çутатрĕç, ăшă ярса пулăшрĕç. Çĕр-анне пĕрмаях чĕрĕ сĕткен парса тăчĕ, курăксемпе чечексене пĕтме-вилме памарĕ. Урнă çил-тăвăл таврари усал юрсене пухса темиçе хутчен те анлă улăхалла талпăнса килчĕ, чечексем çине ĕшкĕртрĕ, вĕсен тĕп тымарĕ сем патне сивĕ ячĕ, шăнтса хăртма хăтланчĕ. Анчах та тĕп тымарсем, ытти вĕтĕ-вĕтĕ тымарсем пекех, вăхăтлăх шăнпа сивве парăнмарĕç.

Çĕр-анне аялтан ăшăтнипе тата хĕвел-пурнăç пулăшнипе чечексем хăйсен çумĕнчи усал юрсене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех ирĕлтерсе пĕтерчĕç, юрăхсăр пăс туса, аяккалла салатрĕç. Унтан çырма леш енчи курăк-чечек тусĕсене пулăшрĕç, ирĕке кăларчĕç, вупкăн юра инçете-инçете хăваласа ячĕç, тĕппипех аркатрĕç, тислĕкпе пĕрле хупласа хучĕç.

Çапах та юрăхсăр юрпа кĕрешнĕ чухне çирĕм мĕльюн чечек çеçки пĕтрĕ. Вĕсем Ентер улăхне хĕп-хĕрлĕ выртса

юлчĕҫ. Вăштăр ҫилĕ вĕсене пĕр ҫĕре пуҫтарчĕ. «Ĕмĕрлĕхех вырăну канлĕ, тăпру ҫăмăл пултăр» тесе, ҫемҫе тусанпа витсе хучĕ. Кун пек хăрушă юра, вăл нумай хушă выртса пысăк сиен тунине таврари ватă йывăҫсем те астумаҫҫĕ.

Хĕвел каллех ҫутатма тытăнчĕ, ăшăтрĕ, тавралăх ирĕклĕн сывласа ячĕ. Анлă улăх та симĕсленчĕ, кайăк юррисемпе тулчĕ; кăтра хумĕсемпе вăй выляса, тĕр тĕрлесе, мăнаҫлăн хумханма пуҫларĕ. Анчах вăл йывăр кунсенче вилнĕ хăйĕн ывăл-хĕрĕсене манмасть, яланах асра упрать. Ҫулсем иртсен, пĕтнĕ ҫеҫкесем витĕр, вĕсен вырăнне тутлă шăршăллă та илемлĕ чечексем тата та йышлăн шăтса тухрĕҫ.

## Ем-ешĕл уйăх

Уй варринчи сукмакпа икĕ ҫын пыраҫҫĕ, ерипен-ерипен утаҫҫĕ. Хушăран тăраҫҫĕ, йĕри-тавра ҫаврăна-ҫаврăна пăхаҫҫĕ. Вĕсем – ашшĕпе ывăлĕ. Ашшĕ, вăтам ҫулхи кĕрнеклĕ ҫын, ывăлне тем калать, аллисемпе йĕри-таврана тĕллесе кăтартать.

– Акă ҫĕртме уйăхĕ те вĕҫленсе пырать, – калаҫăва пуҫлать ашшĕ. – Ĕлĕкхи чăвашсем ăна ҫум е ҫĕртме уйăхĕ тенĕ. Вова, эсĕ пĕлетĕн-и, ыранхи кун мĕнпе паллă?

– Ҫулталăкри чи вăрăм кунпа чи кĕске ҫĕр, – пĕр иккĕленмесĕр калать ывăлĕ. – Кун тăршшĕ хĕллехи пĕр эрнери кунсемпе тан теҫҫĕ. Тата ҫу пуҫламăшĕ, ҫулталăк варри...

– Ҫулталăк варри тени тĕрĕсех те пулмĕ, ывăлăм, июлĕн пĕрремĕш-иккĕмĕш кунĕсенче кăна ҫур ҫулталăк ҫитет. Пирĕн патри ҫу вара, тĕрĕссипе каласан, май вĕҫĕнчех пуҫланать те ҫĕр куна яхăн тăсăлать. Ҫапла, мĕнле илемлĕ вăхăт вăл ем-ешĕл июнь! Кайăксем иртен пуҫласа мĕн тĕттĕмччен, сĕм сĕрлеччен юрлаҫҫĕ, вĕҫсе ҫӳреҫҫĕ, чĕпписем валли апат шыраҫҫĕ. Чĕвĕлти чĕкеҫ талăкра пин ҫухрăм таран вĕҫсе, пилĕкҫĕр хутчен йăви патне пырать, чĕпписене апат ҫитерет. Хĕвел ансан кайăксем нумайăшĕ лăпланаҫҫĕ. Пилеш кайăкĕ вара пуринчен кая юлса ĕҫ пăрахать. Шăпчăксем кăна ҫĕрĕпех юрă шăратаҫҫĕ тата карăшсем авăтаҫҫĕ. Вăрмансем сип-симĕс, ҫаран ҫинчи тĕрлĕ чечексем куҫа илĕртеҫҫĕ. Уйхирте вĕҫĕ-хĕррисĕр тинĕс пек тырă хумханать.

– Атте, ыран ирхине эпĕ вунвиҫҫĕ тултаратăп. Шăллăм виҫĕм кун вуникке кайрĕ.

– Ҫапла, ывăлăм. Эсĕ халĕ пысăк ĕнтĕ. Часах ӳссе ҫитĕнĕн, салтака кайăн.

Ачи ашшĕ çине сăнарах пăхса илчĕ. Картусне хывса, çамка çинчи тарне шăлчĕ. Çырă кăтра çӳçĕсем тӳлек çилпе выляççĕ. Тулли те çавракан пичĕ хĕвелпе йăмăхать.

«Хам та сисмерĕм, мĕн хушăра ачасем ӳссе кайрĕç, – шухăшлать хĕрĕхрен иртнĕ Карпов, кĕрнеклĕ те вăрăм пӳллĕ çын. – Вова хам пек кĕлеткеллĕ, амăшĕ евĕр илемлĕ сăн-питлĕ. Чипер каччă пулать. Шăллĕ кăшт лутрарах. Хĕрĕм кăна, тăват çул каялла вăхăтсăр çуралнăскер, ытла сывах мар. Час-часах ӳсĕркелет».

– Атте, ман санран нумай-нумай ыйтса пĕлес килет те...

х х х

– Паян мана хирти тыр-пулсем еплерех ӳснине тĕрĕслеме, ун пирки правленине пĕлтерме хушрĕç, – терĕ ашшĕ. – Кăçал авă тыр-пул хӳхĕм ӳсет, пурнăç тата лайăхланĕ. Шăматкун пасара кай, хăвна валли шăлаварпа пушмак ил.

– Ыран хирте çум çумлама тытăнаççĕ, атте. Пасарне кĕркуннерех кайăп, шкулта вĕренме тытăниччен.

– Апла та юрать, – килĕшет ашшĕ. – Санăн кăçал экзаменсем тытса ялти шкула вĕренсе пĕтермелле. Кĕркунне, тен, студент пулăн, унччен йĕркеллĕрех çи-пуç илсе парăпăр.

– Эпĕ хирте ĕçлеме ытларах кăмăллатăп. Çитĕнсен тракторист е агроном пулас килет. Сăвăсем çырма вĕренсен вара – тем пекех телейлĕ пулăттăм! Чăваш чĕлхипе яланах хытă кăсăкланатăп.

– Аван, – кăмăллăн хуравлать ашшĕ.

Карповсем ăшшăн калаçса кĕпер урлă каçрĕç. Ашшĕ, ревкомисси членĕ, тулă пучаххисене тыта-тыта пăхрĕ, ĕçре хытнă, çилпе кушăрханă аллисемпе вĕсене авса илчĕ, сăнаса тăчĕ те каллех каялла ячĕ. Шкул ачи йăваш та хăмăр куçĕсемпе йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ.

– Пĕлĕтсем çанталăк улшăнасса систереççĕ-и, атте? – ыйтрĕ тулли те хĕрлĕ питлĕ Вова.

– Çанталăк мĕнле пулассине пĕлĕтсем питĕ тĕрĕс каласа параççĕ, çынсене асар-писер çил-тăвăл е пăрлă çумăр çывхарса килнине те систереççĕ.

Вова паян кӑмӑллӑ, савӑнӑҫлӑ. Унӑн юрлас-ташлас, ҫак ансӑр сукмакпа хир-хир урлӑ ывӑниччченех чупас килет. Ара, сӑлтавӗ пур ҫав! Вӑл улттӑмӗш класа «пит аван» паллӑсемпе пӗтерчӗ. Ыран тата унӑн ҫуралнӑ кунӗ. Авӑ ҫанталӑкӗ те хӳхӗм, тӳлек. Хирте тырӑ пиҫет. Йӗри-тавра илем! Ашшӗпе юнашар утни, унпа кӑмӑллӑн калаҫни пысӑк савӑнӑҫ. Ял историйӗ, салтак пурнӑҫӗ ҫинчен те тахҫантанпах ыйтса пӗлме ӗмӗтленетчӗ.

Пуҫ тӑрринче текерлӗк сасси илтӗнчӗ. Карповсем ун еннелле пӑхрӗҫ. Кайӑк хурлӑхлӑн тиклатса аяккалла хӑвӑрт вӗҫсе кайрӗ. Ҫунаттисемпе вӑш-ваш вылятса ҫӗре анса ларчӗ.

Карповсем Улӑп тӑпри патне – тӳпем вырӑна – ҫитрӗҫ, ял ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Пысӑк ял вӑл Ентер, виҫҫӗр кил ытла. Ял варринче шкулпа клуб тата ял Совечӗпе колхоз правлени ҫурчӗсем аякранах мӑнаҫлӑн курӑнаҫҫӗ. Кӑнтӑр енчи ҫырма хӗрринче, вӑрмантан инҫех мар, колхозӑн пысӑк сачӗ ешерет, куҫа илӗртет.

x x x

– Атте, – терӗ пуринпе те кӑсӑкланакан Вова. – Манӑн питӗ вӗренес килет. Ҫитес ҫул, ҫичӗ класс пӗтернӗ хыҫҫӑн, вӗренме ӑҫта каяс-ши?

– Халӗ ҫӗршыври пур ӗҫ те хисепре: суйласа ил, вӗрен, ӗҫле. Пирӗн халӑх вӗрентекенпе рабочие те, колхозникпе тухтӑра та, ҫар ҫыннипе ученӑя та пӗр пекех хисеплет.

– Эпӗ нимле ӗҫрен те шикленместӗп...

Ашшӗпе ывӑлӗ ҫырма хӗрне ҫитрӗҫ. Унти шыв лӑпкӑн юхать. Вӑл Ҫӗмӗрле вӑрманӗнчен пуҫланать те, хӑйне тӑван тантӑш Выла, Хирлеп тата Нурӑс ятлисемпе пӗрлешсе Кӗҫӗн Ҫавала юхса тухать.

Мӑн Ентер ялӗ Ентер шывӗн вӑтам кукринче, чавса евӗр авӑнса илнӗ вырӑнта, мӑнаҫлӑн курӑнса ларать. Ӗлӗк-авал кунта Кӗҫӗн Ентер, Шурӑ Ентер тата Хура Ентер ялӗсем пулнӑ теҫҫӗ. Кайрантарах вӗсем пӗрле чӑмӑртаннӑ, пӗр пысӑк ял пулса кайнӑ. Тахҫан пӗчӗкҫӗ ял пулнӑ урамсен ячӗсем те пӑрахӑҫа юлнӑ, ҫӗтнӗ, ҫӗнӗлле илтӗннӗ: Хурамалпа Ҫӳҫелӗх, Кӑркӑспа Чулкаҫ тата Майтанпа Хирлеп. Ун ҫывӑхӗнчи Вӑр-

ман Тăван, Кураккасси тата Муркавар ялĕсем пĕтнĕ, çыннисем выçлăхпа урăх çĕрелле куçса кайнă.

– Çу кунĕсенче çак çырма патĕнчи çĕр пÿрте пĕр таркăн килет, пурăнма пуçлать, – каласа парать ашшĕ. Вăл Тупташ ятлă чăваш пулнă, анчах хăй юриех вырăсла калаçкаланă. Унăн чăн ятне-шывне никам та пĕлмен. «Эпĕ Чулхула вырăсĕ, Княгин сутăçă патĕнче тарçăра пурăннăскер. Хуçапа пĕрле ытти патшалăхсенче пулнă, тĕрлĕ япала сутнă-илнĕ. Чăваш çĕршывĕнчен эпир çăм-тир, какай-çăмартапа пăруĕнесем тиесе Франципе Англие тата Голландие те çитнĕ. Ĕмĕрхи юмансене те Балти тинĕсĕ тăрăх чылай çĕршывсене ăсатнă». Çак Тупташ чăваш революционер пулнă, ялсем тăрăх çÿресе Ленин кĕнекисене вуласа кăтартнă, халăха каласа ăнлантарнă. Çавăншăн ăна часах тытнă, Çĕпĕре ăсатнă, ĕмĕрлĕхех пуç янă. Революци хыççăн унăн ывăлĕ яла килсе кайнă теççĕ.

Каç пуласпа Карповсем ял еннелле утрĕç. Хĕвел хĕрелсе анать. Ун çывăхĕнче хĕрлĕрех сарă пĕлĕт таткисем утă куписем евĕр курăнаççĕ, ерипен мĕкĕлтетсе кунталла куçаççĕ. Вĕсен хыçĕнче талккишпех кĕренрех тĕслĕ сарă шупка чаршав. Хĕвел хĕп-хĕрлĕ йăмăхса кунти вырăнсемпе сывпуллашрĕ, вутлă-хĕмлĕ çÿçĕсене тура-тура вăрман хыçне вăрахăн чăмрĕ, куçран çухалчĕ. Ун çывăхĕнчи тÿпе тапăрĕнче, çÿлте-çÿлте, кăпăшка пĕлĕтсем çав-çавах хĕвел тĕсĕпе чÿхенеççĕ-ха, хăйсем те ун тĕслĕ курăнаççĕ, çынсене илĕртеççĕ. Аякри çил вĕсене часах арпаштарса ячĕ, хыçалтан хăваларĕ, инçете-инçете илсе кайрĕ. Анăçри илемлĕ шуçăм курăнми пулчĕ, кăвак чатăр карса илчĕ. Инçетри-инçетри сăрт-вăрман хыçĕнчи йăлйăл хĕвел пайăркисем куçĕсене хупрĕç, канма выртрĕç.

– Сывă пул, хĕвелĕм! – Телейлĕ çул пултăр, тухăçалла лайăх çаврăнса çит, – терĕ Вова хăй ăшĕнче.

## Чечек кăшăлĕ

Вăйă выляса ывăнсан, ирхи çăлтăрсем кăвак тӳпенелле чăмрĕç, тӳнчĕç, курăнми пулчĕç. Шуçăм сенкерленчĕ, хăйĕн чи юратнă шупка кĕрен тĕслĕ кĕпине тăхăнчĕ тата илемлĕрех те çепĕçрех курăнма пуçларĕ. Шăпчăк та юрласа ĕшенчĕ пулмалла, кăштах шăпланчĕ. Лăпкă çилĕ йăмратирек çулçисене çупăрла-çупăрла тухăçалла кустарчĕ. Ял шăпах. Сайра хутра çеç хăш-пĕр урамсенче анчăк хамлатса илет. Таçта хура курак кранклатать. Автансем çунаттисене çапса, пуçĕсене каçăртса ăмăртмалла авăтаççĕ.

Вова хăвăрт вăранчĕ, хăпăл-хапăл тăрса тумланчĕ, вырăнне тирпейлерĕ. Тула тухса сивĕ шывпа питне çурĕ.

– Апат пиçнĕ, ачам, ларса çи, – терĕ ăна амăшĕ, хĕрĕх пилĕк çулсенчи сыв мар хĕрарăм.

– Атте ăçта тата?

– Ĕне чирлесе ӳкрĕ. Аçу ирех выльăх тухтăрĕ патне кайрĕ, – хурлăхлăн пĕлтерет Укçине аппа. – Темле Çĕпĕр чирĕ пур теççĕ-и?

– Шăллăм та çум çумлама пĕлет пулĕ. Авă вăл хăех тăчĕ.

– Какай яшки çиййĕр те ĕçе кайăр, – хушрĕ амăшĕ.

Лаштра йăмрасем айне путнă Ентер ялĕ кĕске те тутлă ыйхинчен вăранчĕ. Тул çутăлсанах çынсем ĕçе васкаççĕ. Вĕсемпе пĕрле – ачисем. Карповсем те тăкăрлăкпа васкаса утрĕç. Уничери пĕчĕкçĕ пĕве çумĕнчи çĕр кĕпер урлă каçрĕç, хирелле çул тытрĕç. Малти вар çуммипе чуптарчĕç. Часах тулă пуссине çитрĕç. Бригадир кам хăш вăхăтра ана çине çитнине çырса пырать, кăкăр умĕнчи пĕчĕк кĕсйинчен сехетне кăларса пăхать. Колхозăн йăрансăр анлă хирне çынсем йышлăн пухăнчĕç: ватти-вĕтти, арçынĕ-хĕрарăмĕ те. Шкул ачисем вара ытларах.

Çурхи тулă уйĕ сип-симĕс ешерет, тӳлек çилпе илемлĕн хумханать. Çуллахи ытарма çук илемлĕ ир. Пурнăç шанчăкĕ – хĕвел-сад пахчинчи кĕмĕшке сывлăм пĕрчи-шăрçисене пуçтарать, çупăрлать. Ентер шывĕ лăпкăн юхать, малалла васкать, шăнкăр-шăнкăр саспа юрлать.

Вĕренекенсем пурте пĕрле пухăнчĕç, хĕррипе карталанса тăчĕç. Çум çумлама тытăнчĕç. Вĕсемпе пĕрле вату учительница – шкул директорĕ. Вĕсем тимлесе тăрăшса ĕçлеççĕ. Парка ўснĕ тулă хушшинчи сиенлĕ çум курăкĕсене хăвăрт-хăвăрт кăкласа пĕр çĕре купалаççĕ. Кăн-кăвак чечеклĕ утмăл туратпа сарă тăраллă антра çарăка, хурхух-пиçенсене ана çинчен тасатаççĕ. Çум курăк куписене ачасем майĕпен ана çинчен çĕклеççĕ. Типĕтме çутă çине сапаласа хураççĕ. Ĕçленĕ май хăйсем шăкăлтатса калаçаççĕ, ахăлтатса кулаççĕ. Çав вăхăтрах юрлама та манмаççĕ. Анлă хирте ирхи сим пыл сывлăмпа чўхенсе, йăпанса юрă янраса вĕçет, инçетеинçете саланать.

Пĕчĕк çеç путене
Сарă тулла юратать.
Колхоз ачи, шкул ачи
Пионера çырăнать.

Тўпе кăн-кăвак, тап-таса, янкăр уяр. Тўлек çилĕ кассăн-кассăн килсе кĕрет, питри тарсене типĕтет, шăм шака канлĕх парать. Тăри юрри кăмăла уçать. Çутă хĕвелĕ хăйĕн ĕçнех тăвать, тўпенелле улăхать, çынсене çупăрлать, вĕсемпе пĕрле савăнать-кулать. Пĕт-пĕльтĕк путенийĕ кĕске кĕввине ĕнерет, ĕçлекенсене саламлать, тырă хушшипе йăпăр-йăпăр чупать, тимлĕрех ĕçлеме хистет тейĕн. Илемлĕ, лăпкă, ăшă кун. Çыннисем савăнăçлă.

– Пичче, – терĕ пĕр харсăртарах ачи уй-хир бригадирне, – утмăл турат чечекĕсем ытарма çук капăр, вĕсене татмасăрах хăварма юрать-и?

Пурте харăсах кулса ячĕç, ача та хĕп-хĕрлех пулчĕ, пуçне пĕкрĕ те тем мăкăртатрĕ: «Пĕтĕмпех кăкласа пĕтерсен, пуç кăшăлĕ тума та чечек юлмасть». Ун çывăхĕнчи вĕтĕршакăр тепĕр хут ахăлтатса кулчĕç.

– Ана çинчи çумсене пĕтĕмпех, тĕппипех кăкласа пырăр, ачасем, – сăпайлăн тавăрать бригадир. – Пуç кăшăлĕсем валли улăхра та чечек нумай. Юрать-и, ачасем?

– Юрать! – хавасланчĕç пĕтĕм ача-пăча.

– Анчах эсир тулă калчисене ан амантăр, ан тăпалтарăр, – асăрхаттарать вĕрентекен. – Кĕркунне кашни тунинчен çирĕм-вăтăр пĕрчĕ тыră тухать, фермăри сурăхсем валли уламĕ пулать.

Савăнăçлă иртет вăхăт. Ушкăнпа ĕçлеме те кал-кал ÿсĕнет. Каннă вăхăтра пĕчĕк хĕрачасем кăвак утмăл турат чечекĕсенчен пуç кăшăлĕ çыхса хатĕрлерĕç. Хушшине шурăпа сарă чечексем чике-чике тухрĕç. Виçĕ тĕслĕ илемлĕ кăшăлсем вĕсен пуçĕсенче ытла та килĕшÿллĕ. Хăшĕсем хăлха çакки курăкĕсенчен алка-çĕрĕсем турĕç. Арçын ачасемшĕн вара – курăк тунинчен шăхлич-шăпăрсем туни, лĕпĕшсем хыççăн чупнипе кутăн-пуçăн чикеленсе выляни чылайлăха асра юлĕ.

– Ачасем, сăнар-ха: паян епле ăшă вылять, – кăсăкланчĕ пĕри.

– Унтан мĕн тĕлĕнмелли пур, – таврать ун çумĕнчи юлташĕ, – ăшă куçать.

– Ман шутпа вăл хăвăрт-хăвăрт чупать, юхать, вĕл-вĕл вĕл туса илет.

– Ăшă выляни шыв юххи пек вĕтĕр-вĕтĕр хумлă, хирти тырăпа улăхри çаран евĕр авкаланса курăнать.

– Йывăç тĕлĕнче ку юхăм тĕксĕмрех пулать, – сăнать тепри. – Çĕр çумĕнче е тыр-пул çийĕн пынă чухне тĕссĕр курăнать.

– Такам хыçран хĕтĕртнĕ пекех васкаççĕ, – хушса хурать виççĕмĕшĕ, – çын чупса çитейми вĕтĕр-вĕтĕр хумсен юххи-хумханăвĕ евĕр анаçалла вирхĕнеççĕ, кукăр-макăр йĕр тăваççĕ.

– Вĕтĕ ала витĕр юхакан шыв евĕр, – калаçăва вĕçлет Вова Карпов. – Ăрша вĕлкĕшет, вылять.

**х х х**

Ялтан икĕ сăра хуранĕ лартнă лав тухрĕ.

– Пăтă килет, пăтă! – тесе кăшкăрса сиккелеме тытăнчĕç лара-тăра пĕлмен ачасем.

– Эй, ку пӑтӑ кунта ҫитиччен сивӗнсе те кайӗ, – терӗ пӗр ачи, ял еннелле пӑха-пӑха. Вӑл кивӗ карттусне хыврӗ те, сулахай аллине ҫамки ҫумне тытса куҫӗсене хӗвелтен пытарчӗ.

– Ан хӑрӑр, шӑпӑрлансем, – лӑплантарать вӗсене Ерми мучи, – пӑтӑ хӗрӗх ҫухрӑм кайсан та сивӗнмест.

– Эпир шӑпӑрлансем мар, шкул ачисем, – ватӑ ҫынна пӳлсех хушса хурать сакӑр ҫулхи тепӗр хӗрача. – Эпӗ хам та халӗ ухмах мар ӗнтӗ, вӗреннӗ ҫын шутланатӑп.

Ҫынсем пурте, кашни харпӑр хӑй майлӑ саспа, пӗр харӑсах кулса ячӗҫ. Хӗрача именчӗ пулас, пуҫне кӑшт чикрӗ те малалла каларӗ.

– Мӗн кулатӑр, кӗркунне иккӗмӗш класа каятӑп. Кӗнекесене те веҫех илсе хутӑм.

– Аван, хӗрӗм, – хавхалантарать ӑна ватӑ ҫын. – Малалла тата лайӑхрах вӗрен.

– Пирӗн ҫӗршывра вак ачасенчен кулнӑшӑн касамата хупаҫҫӗ, – хӑй мӗн пӗлнине кӑтартасшӑн пулчӗ хӗрача. – Ленин атте ҫавӑн пек каласа хӑварнӑ тет. Пире учительница каласа пачӗ. Эпӗ пӗртте суеҫтерместӗп.

– Вак ачасенчен мар, – тӳрлетет хӗрача-комсомолка. – Вак халӑхсене тӑрӑхланӑшӑн, кӳрентернӗшӗн айӑплама пултараҫҫӗ.

– Вак ачасем тени вак халӑхсем тенине пӗлтерет пулӗ? – ыйтать шкул ачи. – Эпир вак халӑхсем шутланмастпӑр-и вара?

– Чӑвашсем вак халӑхсен шутне кӗреҫҫӗ, – малалла ӑнлантарать комсомолка. – Анчах «ача-пӑчасем» сӑмах вак халӑх тенине пӗлтермест.

– Шӑпӑрлан тени те усал сӑмах мар, пепкем, – пӗлтерет Ерми мучи.

– Апла пулсан юрать, – шӑппӑн каласа хучӗ хӗрача. – Эпӗ пӗлмен те...

– Вӑл темех мар-ҫке.

Лав ӗҫлекенсем патне ҫитрӗ. Бригадӑри повар-хӗрсем ӗҫлекенсене хурантан пӑтӑ валеҫме тытӑнчӗҫ. Кладовщик ҫӑкӑр каса-каса парать. Ҫынсем ушкӑнӑн-ушкӑнӑн е ҫемьешерӗн пу-

хăна-пухăна ларчĕç. Кушелĕ-сумкинчен уйран-турăх е çамарта-чăкăт кăларчĕç, çиме тытăнчĕç. Тахăшин çамрăк хăяр пулас – шăршă сарăлчĕ. Ача-пăчасем вара вĕри тулă пăттипе симĕс сухана çăвар туллин чăмласçĕ. Çанталăк уяр, шăрăх та тӳлек. Çил çук. Вова Карповпа юлташĕсем учительница тавра пухăнчĕç, пĕчĕкрехрисем – вĕтĕр-шакăрсем – улăхри пĕве хĕррине чупса анчĕç.

– Ку вырăнта эпир шыва кĕретпĕр, чăмпăлтататпăр, – тет пĕр хĕрачи. – Арçын ачасем пĕве пуçнерех кайрĕç. Атту кĕпесем хутăшса каяççĕ.

– Хутăшасси-мĕнĕ, – хулăн саспа пĕлтерет пĕр арçын ачи, – виçĕм кун çакăнта хĕрачасем манăн йĕме пытарчĕç. Так тупаймарăм. Киле вара, урам тăрăх сиккипе чупса çитаксăр-мĕнсĕр çитрĕм. Сăмса тутрипе кăвапаран аяларах çыхрăм та. Урамри çынсем пурте ахăлтатса кулаççĕ. Эпĕ куçа хупса чупатăп.

– Мана анне пĕлтĕр пурçăн чăлха çыххи илсе панăччĕ, – çепĕç сасăпа калать тепри. – Пĕрре шыва кĕме кайсанах çухалчĕ. Аппа вара уншăн вĕлтĕренпе хытă хĕнерĕ. Виçĕ кун хыпашласа çӳрерĕм. Юрать-ха пичче хĕрхенчĕ, аппана чарчĕ.

– Манăнне çуркунне Чалăш Марине çĕнĕ тутăрах пĕçертрĕ. Хам хур чĕпписем хыççăн чупнăччĕ. Хĕвне илсе чикнине куртăм, çапах тунчĕ, килне кайса ыйтсан та памарĕ.

– Ун пек кукăр алăсем ялĕпе те ик-виç çын анчах, – тет Вова шăллĕ. – Чалăш Марине хăй çапах Турра ĕненет, юмăç та пăхать теççĕ.

– Ачасем, пăхăр-ха, пăхăр! – çухрашса ячĕ тепĕр арçын ача, – тăри çӳлтен тӳп-тӳрĕ ӳкрĕ, чирлĕ пулас.

– Çук, уншăн мар, – ответлет хĕрача. – Таçта вăрман хыçĕнче çынсем пăшалсемпе çапăçаççĕ, машинăсемпе кунталла килеççĕ тет.

– Аха, чăнах та.

– Çынсем вăрçă пуçланнă тесе калаçаççĕ.

– Асту, ачам, усал сăмах ан калаç, – асăрхаттарать тепĕр хĕрачи.

– Эпĕ усал сăмах каламан-иç.

– «Вăрçă» тени тата усал сăмах мар-и?

– Ух, паян хăшкăл пуличченех çум çĕклерĕмĕр вĕт, – тет сакăр çулхи тепĕр хĕрачи.

– Пĕтĕм çумне çырма хĕррине çĕклесе тăтăмăр. Хĕвелпе лайăх типеççĕ, хĕлле валли.

– Аван ĕçлерĕмĕр, бригадир хĕпĕртет ĕнтĕ.

– Бригадир мар, Тимкка пичче теççĕ ăна.

Вĕтĕр-шакăрсем, шăнкăрав пек шăнкăртатса кулса ячĕç.

Муркавар варĕнчи пĕчĕкçĕ пĕвере ача-пăчасем чăмпăлтатма тытăнчĕç. Вĕсен сассипе кайăксем аяккалла вĕçсе кайрĕç.

– Эй, шывран хăвăртрах тухăр! – илтĕнчĕ пĕр сасă. – Аслисем патне кайса итлĕпĕр.

Ик-виç ача пĕве пуçĕнчен чупса иртсе кайрĕç, ялалла вĕçтерчĕç.

– Пирĕн пиччене района чĕннĕ, вăрçа илсе каяççĕ пулас, – илтĕнчĕ вĕсем хыççăн.

Пĕчĕк ачасем туххăмрах ана çине çитрĕç. Çынсем шавласа калаçма, ахлатма пуçларĕç. Хĕвел анăçĕнчен темле хура-хăмăр пĕлĕтсем капланса килчĕç. Çурçĕр енчен кăра çил çавăрттарма пуçларĕ, çанталăк тĕксĕмленчĕ. Тулă пуссинчи путене те шăпланчĕ, – халăх хуйхине сисрĕ тейĕн.

– Ял-йышсем, эсир мĕн шавласа кайрăр, – терĕ вата депутат Яковлев. – Хальлĕхе ним хăрамалли те çук. Нимĕçсене часах хăваласа кăларса ярĕç. Паян тулă анисене çум куракĕсенчен тасатса пĕтерĕпĕр.

– Малашне, – пĕлтерчĕ вата учительница, – шкул ачисемпе вĕрентекенсем колхоза лайăхрах пулăшма тытăнăпăр. Фермăри тислĕке хире кăларăпăр, – уй-хирте, садра ĕçлĕпĕр.

Çулпа пĕр грузовик хăвăрт иртсе кайрĕ. Унта туллиех арçынсем тиеннĕ. Машин хыççăн çăра тусан мăкăрланса юлчĕ, майĕпен-майĕпен аяккалла сирĕлчĕ. Çынсем пурте шăпах, салхуллă, çиллес. Ыттисемпе пĕрле ачасем те каллех ĕçе тытăнчĕç. Ал-ура çыхланать пулин те тата тимлĕрех, тата лайăхрах ĕçлеççĕ. Пĕчĕкçĕ, ĕçчен аласем сиенлĕ çум

куракёсене капалт-капалт каклаççĕ, тымарĕпе каларса аяккалла варкантараççĕ. Урах ан ĕмчĕр вĕсем çĕр сĕткенне!

– Пирĕн салтаксем те кермансене çакăн пек тăпăлтарса тухĕç, – çирĕппĕн каларĕ Вова.

– Çĕр вăтăр çул каялла Наполеон çак вăхăтрах пирĕн çине килнĕччĕ, – пĕлтерет юнашар ĕçлекен учительница.

– Анчах шалчи тулчĕ, – хушса хучĕ тепĕр – аслă вĕренекенĕ.

– Ачасем, – терĕ шкул директорĕ. – Вăрçă шӳт мар, вăл хăçан чарăнассине никам та пĕлмест. Çавăнпа серте-пултран куракксене ытларах пухса типĕтетпĕр. Хĕлле кирлĕ пулĕ.

– Пирĕн асанне икĕ хутаç тултарчĕ...

– Эпир те типĕтрĕмĕр.

– Пирĕн те ыранах тытăнас пулать, – илтĕнчĕç сасăсем.

Каç пулчĕ, çанталăк тĕттĕмленчĕ. Ĕçчен çынсем салхуллăн ялалла утрĕç. Ачасем вĕсем хыççăн пыраççĕ. Малта вată вĕрентекен. Ир кăна лăпкăн тĕлĕрекен ял-хуласене пысăк хуйхă пусрĕ. Ентер шывĕ шавлă, пăтранчăк. Хум хыççăн хум хăвалать, кĕрлесе юхать. Çыран хĕррине хăвăрт çите-çите çапăнать те пур çӳп-çапа аяккалла ывăтать е юхтарса каять. Атăла пулăшма малалла васкать.

## Иккĕмĕш хуйхă

Тепĕр кунне ирхине ирех Карповсем – Вовăпа ашшĕ – Муркавар çырми енне çул тытрĕç. Çулĕ тикĕс мар. Урапи çинче вилнĕ ĕне кисренсе пырать. Çыннисем малта пыраççĕ.

– Сĕт-çусăр мĕнле пурăнăпăр-ха, атте? – ыйтрĕ ачи, тилхепене хытăрах тытнă май. – Часах сана та вăрçа илсе кайĕç. Эсĕ халĕ уксахламастăн, сывалнă.

– Ан кулян, ывăлăм. Хам фронта кайсан та патшалăх сире пăрахмĕ, колхоз пулăшĕ. Фермăран сĕт илĕр. Кĕркунне пушмак пăру илсе ярăпăр, унччен вăрçи те чарăнĕ.

– Санпа инкек пулсан тата?

– Эсĕ ăнланакан ача, Вова, – хаш сывласа илчĕ ашшĕ. – Асли. Апла-капла пулсан, кил хуçи пулăн. Аннӳне итле, кĕçĕннисене пăх. Тен, сана пит çамрăклах йывăр ĕçе кӳлĕнме лекĕ, суккипе хырăм выçни те пулкалĕ. Çапах та ан парăн. Пурне те çĕнтер, малаллах ут. Темле йывăр пулсан та тĕрĕс пурăн. Унтан лайăххи нимĕн те çук.

– Инкек çине синкек тенĕ пекех пулчĕ. Иккĕмĕш хуйхă...

– Ĕнер пуçланнă вăрçă – пĕтĕм çĕршыв, халăх хуйхи, пысăк хуйхă çав. Çĕршыв пулсан, эпир те пĕтмĕпĕр.

– Атте, виçĕмкун иксĕмĕр пурнăç савăнăç тесе пуплерĕмĕр. Халĕ вара пурнăç хуйхă тесе каламалла-и?

– Çын ĕмĕрĕнче вăл та, ку та пулать. Пирĕн малашнехи пурнăç вăл – кĕрешӳ, çĕнтерӳшĕн кĕрешни.

Лав çырма çумĕнчи выльăх масарĕ патне çитсе чарăнчĕ. Карповсем хыпалансах шăтăк чаврĕç, вилене пăрахса таптарĕç. Каялла таврăннă чух Вова тӳрĕ сукмакпа утрĕ. Теренери çăл куçĕ умне çитсен, ун çине кăштах пăхса тăчĕ, кăсăкланчĕ, шухăша кайрĕ.

– Эх, çăлкуç? Тап-таса та сивĕ шывлă, илемлĕ эсĕ. Витĕр курăнатăн, çутă кăвак кантăк пек туйăнатăн. Хĕвел патне çул тытма пĕлетĕн: Тăван çĕршыв пекех тĕрĕс, тĕпне çитиччченех çутă та таса шывлă. Тепĕр чухне эсĕ курăксем хушшинче

И-50392
Национальная библиотека
Чувашской Республики

палӑрмастӑн пулин те, ҫывӑхри пур йывӑҫ-курӑка куратӑн, лӑпкӑн шӑнкӑртатса юхатӑн. Ҫав шӑплӑхра ҫамрӑксем пӑшӑлтатнине илтетӗн. Хура кӗркуннехи ҫил сана сарӑ ҫулҫӑсемпе витсе хурать. Часах юр-пӑр айне пытанатӑн. Ҫуркунне вара алхасма пуҫлатӑн, вӑйлӑ юхӑм пулса тӑратӑн. Хум пулса хум ҫине ӳкетӗн, шавласа юхатӑн. Тавралӑха тӗрлӗ ҫӳп-ҫапсемпе пылчӑкран тасататӑн, туслӑ ҫынсем алӑ тытнӑ пек ҫывӑхри ытти пысӑкрах ҫӑлкуҫсемпе пӗрлешетӗн, вӑйлӑ шывах пулса тӑратӑн. Пирӗн халӑх вӑйӗ те сан пекех хӑватлӑн тапса тӑрать. Нимӗҫ ирсӗрӗсем пире нихӑҫан ҫӗнеймӗҫ. Тепре тӗл пуличчен, шыв тусӑм! Манӑн васкамалла-ха.

Темиҫе ҫул каялла ҫанталӑк питӗ шӑрӑх, типӗ тӑчӗ. Ялти ҫӑлсемпе пӗчӗкҫӗ юхан шывсем типсе ларчӗҫ. Ҫынсем таса шыв ҫуккипе аптӑратчӗҫ. Пӗвери шыва ӗҫнипе, Кӗҫӗн Ентер урамӗнчи темиҫе ача юнлӑ вар виттипе чирлесе вилчӗҫ. Хӗлле те шыв ҫителӗклех пулмарӗ, выльӑхсем валли юр ирӗлтеретчӗҫ. Ҫав шӑрӑх ҫула таврари чӑвашсем шыв типнӗ ҫул тесе асӑнатчӗҫ.

Ҫулла. Шӑрӑх вӑхӑт. Ватӑ учительница Полина Карповна пире ҫӑлкуҫ патне илсе килчӗ. Эпӗ ун чухне виҫҫӗмӗш класра вӗренеттӗм. Пӗр класри ҫирӗм виҫӗ ача ӗҫе тытӑнтӑмӑр. Кӗреҫесемпе юшкӑн тӑприне чакаласа, ҫӑлкуҫа уҫса ятӑмӑр. Лакӑмне самаях тарӑнлатрӑмӑр, тасатрӑмӑр, хӑвӑл юман вырнаҫтарса лартрӑмӑр. Шывӗ ан варалантӑр тесе йывӑҫ валак турӑмӑр. Вӗре ҫӑл умне икӗ тунката ҫине майлаштарса хӑмаран сак турӑмӑр. Шывне ӑсса ӗҫмелли шуҫ банкӑсем те тупӑнчӗҫ. Тепӗр ҫуркунне икӗ йӗрке йӑмратирексем лартса тухрӑмӑр, пӗчӗкҫӗ карта ӑсталарӑмӑр. Авӑ вӗсем хӑйсене чӗр вӑй панӑ ҫынсене тав туса ҫилпе авӑнаҫҫӗ, шӑхӑрса юрлаҫҫӗ, тытҫулҫисемпе алӑ ҫупаҫҫӗ.

Ҫав ҫулсенче эпир, шкул ачисем, Ентер таврашӗнче тата виҫӗ ҫӑлкуҫ тупрӑмӑр, ҫӑл турӑмӑр. Пӗтӗм ял халӑхӗ вӗсенчен шыв ҫӗклеме тытӑнчӗ. Ҫулсеренех ишӗлекен ҫырмасене чылай «сыватрӑмӑр» ҫатан хӳмесем ӑсталанӑ хыҫҫӑн йывӑҫсем лартрӑмӑр. Пӗвесем туса карас пулӑсем ятӑмӑр. Ентерсем халӗ вӗсене карас пӗвисем теҫҫӗ.

Ну, ҫитĕ. Аттерен маларах киле ҫитесчĕ. Авă хĕвел тухать. Ир вăраннă тăрнасем Ҫавал енчен вĕҫсе килчĕҫ те Ентер улăхне анса ларчĕҫ. Хире тухмалла, ĕҫлемелле. Халь вăрҫă вăхăчĕ. Вова сукмакпа килелле чупрĕ. Икĕ енчи ыраш пучаххисем ăна ҫапăнаҫҫĕ, кивĕ пиншакĕпе шăлаварне йĕпетеҫҫĕ. Вăрăм пучахсем ҫинчи сывлăм пĕрчисем ирхи хĕвел шевлипе йăлтăраҫҫĕ.

«Пысăк хуйхă. Ҫĕнтерӳшĕн ҫапăҫмалла», – шухăшласа пырать Вова ашшĕ сăмахĕсене аса илсе.

**х х х**

Вова ашшĕне вăрҫа ăсатса ячĕ те улăх тăрăх киле таврăнать. Ҫанталăк тунсăх. Тӳпери пĕлĕт таткисем васкавлăн куҫаҫҫĕ, ту ҫинчен пăр катăкĕсем евĕр курăнаҫҫĕ. Сулхăн ҫилĕ пит-куҫа уҫăлтарать, кăкăртан кăтăклать, ҫамка ҫинчи тăварлă тар тумламĕсене шăлса илет, типĕтет те вĕрсе тасатать. Шыв хĕрринчи вĕтĕ хăва вуллисем ҫилпе авкаланаҫҫĕ, Вована пуҫ тайса саламлаҫҫĕ. Вĕсен ҫинҫе мĕлкисем шыв ҫинче тĕрĕ тĕрлесе вăйă выляҫҫĕ, хумханаҫҫĕ, кутăн ӳпĕннĕ тӳпе тĕпĕнче ярăнаҫҫĕ.

Чĕрĕп ҫурисем ҫывăрма выртиччен выляҫҫĕ иккен. Вова ҫĕленпе чĕрĕп вăрҫнине асăрхарĕ. Чĕрĕпĕ ҫĕлене вĕлерчĕ.

«Маттур, усăллă чĕрĕп тусăм», – терĕ те Карпов аллинчи патаккине аяккалла ывăтса ячĕ, ҫыран патĕнчен пăрăнса кайрĕ.

**х х х**

Вова яла ҫитрĕ. Тавралăха каҫхи ĕнтрĕк хупăрланă, хăйă ҫутисем курăна пуҫларĕҫ. Урамри салтак юррисем кăмăла пăтратаҫҫĕ, чĕрене ҫураҫҫĕ. Авă уничере халăх хĕвĕшет, ахлатать, куҫҫульпе йĕре-йĕре тăванĕсене вăрҫа ăсатать. Арҫынсем пиллĕкĕн-улттăн ларса района каяҫҫĕ. Йышлă ача-пăчасем ашшĕ-пиччĕшĕсене ăсатса яраҫҫĕ, макăраҫҫĕ, аллисемпе сулаҫҫĕ. Хĕрарăмсем пĕчĕк ачисене йăтса-ҫавăтса лав хыҫҫăн чупаҫҫĕ, тусанлă ҫул еннелле тăртанса хĕрелнĕ куҫĕсемпе тинкереҫҫĕ.

Ентер вăрманĕ хыçĕнчи хĕвел анăç сап-сарă, хĕп-хĕрлĕ. Хĕрлĕ кăвак пĕлĕтсем ылмашăнса, картлашкаланса курăнаççĕ. Хăшĕсем шатра пит пек лаптăкăн-лаптăкăн е ула-чăла кĕпе евĕр саплăклăн-саплăклăн: теприсем çĕтĕк-çатăк тумтир пек е çурхи пĕве çинчи симĕс кăвак пăр евĕр татăкăн-татăкăн унта-кунта курăнаççĕ, аяккалла тĕлсĕр-мĕнсĕр куçаççĕ, ерипен-ерипен шуçаççĕ. Часах хĕрлĕ сарă тĕссем çухалаççĕ. Вĕсене каçхи кăвак хăмăр чатăр карса илет, çил шăлса тан-лаштарать, якатать те пĕр тĕслĕ тӳпе пулса тăрать.

– Анне, мĕншĕн кĕçĕр хĕвел ытла хĕрелсе анчĕ? – ыйтрĕ Вова амăшĕнчен хăйсен тĕлне çитсен.

– Çанталăк пăсăласса вăл, ывăлăм. Çитес кунсенче асар-писер çанталăк пуçланать пулĕ, – анăçалла тинкернĕ май хуравларĕ амăшĕ.

– Аттене пуйăс çине лартсах ăсатса ятăм анне. Мускавалла кайрĕç. «Вырăна çитсен çырса пĕлтерĕп», – терĕ. Вакун çине улăхсанах юлташĕсемпе пĕрле юрласа ячĕ:

Смело мы в бой пойдем
За власть Советов.
И как один умрем
В борьбе за это.

## Сереп пулăшать

Урамра ача-пăчасем шакăлтатса калаçса пыраççĕ. Часах вĕсем хире тухрĕç. Çулла! Илемлĕ-илемлĕ кунсем! Çанталăк лăпкă. Хирти пин-пин тĕслĕ илем пин-пин тĕрлĕ курăнать, йăлтăрать, техĕмлĕ шăршă сарать, куçа илĕртет, сăмсана кăтăклать. Лăпкă-лăпкă шăплăх кăмăла çĕклет. Вĕçĕ-хĕррисĕр анлă, капăр та илĕртӳллĕ çуллахи уй-хир! Асăрханă-и çавна эсĕ, вулакан тусăм? Хирти çав илемлĕ тĕс этем пекех яланах улшăнать: ирхине пĕр тĕслĕ – шуçăм сăнарлă, кăнтăрла урăхла чатăрлă, каçхине вара тата урăхларах, тĕксĕмрех. Уяр çанталăкра тепĕр çи-пуçлă, аслати вăхăтĕнче вуçех урăхла, çиллес. Тĕксĕм кунсенче – хĕвел аннă чухне хăйне евĕр – урăх сăнлă – кăмăлсăр. Çумăр чашлаттарнă самантра йывăç-курăксем чӳхенеççĕ, кайăк-кĕшĕксем чăпăл кĕреççĕ.

– Утă çулма тухиччен çырлисене пухса илер, – тет пĕр ачи, иккĕмĕш класс вĕренсе пĕтернĕскер.

– Малтан Ентер улăхне каятпăр пулĕ? – кăсăкланать Вова шăллĕ.

– Унта та, вăрман уçланкине те çитĕпĕр, – хуравлать пиччĕшĕ.

Вĕсем хурăн хуппи пуракĕсене çĕклесе ансăр çулпа малалла утрĕç. Карпов малта. Ун хыççăн сакăр-тăхăр пĕчĕк ача пырать. Хĕрачасем вĕтĕлтетеççĕ, арçын ачасем лаплаттарса чупаççĕ, хăйсем çара пуçăн, çара уран. Вĕсенчен пĕр арçын ачи аллине пĕчĕкçĕ йывăç чĕрес тытнă; утсан-утсан аллипе йĕмне турта-турта илет, сăмсине нăшлаттарать. Çул хĕррипе, ик енĕпех, çамрăк çеçкеллĕ чечексем шур тутăрлă хĕрсем пек йăрăс лараççĕ, иртен-çӳрене сăпайлăн пуç таяççĕ. Илемлĕ вĕсем, вăр çаврака чечексем: пĕчĕкçĕ çеçкисем кăшăл туса çаврăннă, симĕс шăрçисене варрине хупнă. Кашни чечекĕ шкул ачисен телейлĕ куллине аса илтерет. Аякран пăхсан анлă улăх симĕс, сарă, шурă, кăвак, кĕрен, шупка тĕслĕн курăнать. Унта теттесем пĕр харăс хумханса ташланă, авкаланса юхнă-чупнă евĕр туй-

ăнаççĕ. Кам эрешлесе-тĕртсе ăсталаса тунă-ши çав улăх кавирне? Пархатар çут çанталăк хăех!

Улăх ачасене ăшшăн кĕтсе илчĕ, хапăл туса йышăнчĕ. Унти нумай тĕслĕ чечексем лăпкă тинĕс евĕр савăнăçлăн хумханаççĕ. Хăмăр кăвак шăнкăрав курăкĕсем çилпе авăна-авăна илеççĕ, вĕçĕмсĕр йышлă супăнь курăкĕсем куçа илĕртеççĕ. Йĕри-таврах тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕслĕ пысăк, пĕчĕк чечек-курăксем. Авă лере, çырма хĕрринчи тăмлă та нӳрлĕ вырăнта, ватă йăмрасем лараççĕ. Вĕсен айĕнче сарă чечеклĕ пысăк та тачка çулçăллă шапа хупаххисем ӳсеççĕ.

Ача-пăчасем каллех шакăлтатма пуçларĕç. Пиччĕшаппăшĕсенчен пĕр шит те хăпмаççĕ, аслисем те шăллĕйăмăкĕсене пăрахса утаймарĕç. Çур сехетрен улăха çитрĕç. Ура айĕнчех мĕкĕлтетсе пыракан кĕçĕннисем савăнăçлăн кăшкăрашма тытăнчĕç.

– Акă çитрĕмĕр те, – терĕ пĕр хĕрачи.

– Урра, авă çырласем курăнаççĕ! – çĕхĕрет тепĕр арçын ачи.

– Ман куçа та темле хĕрлĕскерсем курăнса кайрĕç.

– Çук, ку çырла мар, унăн хăмăртарах çулçи çех пулчĕ.

– Эх, унта та телей пулмарĕ, темиçе çырла тупса тутанса пăхас тенĕччĕ.

– Кунта пурак-чĕрес мар, хырăм тĕпне те сараймăн.

– Ачасем, паян çумăр пулать пулас, – терĕ Вова чечексене сăнарах пăхса. – Авă шĕпĕн курăкĕн чечекĕсем çĕрелле усăннă, хĕрлĕ клеверăн çеçкисем хупăнсах ларнă. Çак паллăсем çумăр пуласса пĕлтереççĕ.

– Тӳпери пĕлĕтсем те пĕр-пĕрне хирĕç шăваççĕ, – пĕлтерет тепри. – Пĕр харăсах темиçе пĕлĕт ĕречĕ курăнать: кăтрисем, хумлисем, якисем.

– Чĕкеçсем те çĕр çумĕпех вĕçеççĕ, – калаçăва хутшăнать виççĕмĕшĕ.

– Чечексенчен тутлă шăршă вăйлă кĕрет.

– Ай-ай, çĕлен! – çинçе саспа çухăрса ячĕ пĕчĕкрех хĕрача.

Сасартăк пурте картах сикрĕç. Тахăшин аллинчи пурак çĕре ӳкрĕ, тепри чĕркуççи çине тĕшĕрĕлчĕ. «Ай-уй!» – тесе

кăшкăрса ячĕ. Çак самантра пĕчĕккисем «Мулкач! Мулкач!» тесе кăшкăрса, ушкăнĕпех ана çинелле вĕçтерчĕç. Хăшĕсем улăх урлă каçса тепĕр еннелле чупрĕç. Кăвак мулкач хăлхисене чанк тăратса кайри урисемпе талт-талт сикрĕ те туххăм тарса çухалчĕ.

– Эй, куян тусăн хӳри кĕске тесе ахальтен каламан пулĕ çав.

– Ку мулкач çури кăна пулчĕ пулас, ытла пĕчĕк.

– Çапах та пирĕнтен тарчĕ, тырă ăшне пытанчĕ.

Темиçе хĕрача улăхри ăшăх юхан шыв урлă каçрĕç те ушкăн патне çывхарчĕç.

– Леш енче çырласем сахал, симĕссисем анчах, – тет вĕсенчен пĕри, питĕнчи тарне тутăрпа шăлса.

Çырла ытларах хĕвел питĕнче ӳсет, хăвăртрах пиçет, – тавăрать тепри.

– Çанталăк шăрăхланчĕ, кăнтăрла çитет, – калаçăва хутшăнать шурă карттуслă арçын ача. Вăл аллине çамки тĕлне тытса хĕвел çине пăхса илчĕ.

– Самаях вĕри, юрать çилĕ кăшт вĕрет.

– Манăн хырăм та выçа пуçларĕ, çапах пурак тулаймарĕха. Чĕрес-пуракне тепре килсен тултарăпăр, – пĕлтерет виççĕмĕш хĕрачи. – Манăн тата кăвакал чĕпписене астумалла. Майĕпен килелле çаврăнас пулать. Анне Выла пасарне кайрĕ.

– Эх, çав усал вăрçă пулман пулсан...

– Пирĕн пичче-аттесем халь колхозра мĕн чухлĕ ĕçлетчĕç.

– Тата мĕнле савăнăçлă пулмалла.

Çапла, тусăмсем. Телее, вăрçă нумая пымасть теççĕ. Хамăрăннисем часах нимĕççене парăнтарĕç акă.

– Киле кайиччен тепĕр ик-виç ывăç татар-ха эппин.

Инçех мар, тĕмеске вырăнта, кăткă йăвисем курăнаççĕ. Хĕрачасем унта пычĕç те икĕ алăпах хурăн çырлине татма пуçларĕç. Курăк сахал, кĕске, тĕмĕн-тĕмĕн çырлисем хĕп-хĕрлĕн курăнаççĕ, ачасене астараççĕ. «Ман пата кил, ман пата, эпĕ те кунтах» тесе чĕнеççĕ; куç хĕссе кăчăк

туртаççĕ. Вырăнĕ илемлĕ, симĕс пустав çине такам хĕрлĕ шăрçасем вырнаçтарса тухнă тейĕн. Тӳпере тăри тăрлатать, çывăхри вăрманта куккукĕ такам ĕмĕрне шутлать.

Аллисене сарă кăткăсем ăшалантарса хĕреличченех хĕвĕшрĕç ачасем çак вырăнта. Çырли те нумай, куçа илĕртет. Пурте тăраниччченех çирĕç, пĕчĕкçĕ пуракĕсене ӳпĕнтерсе ячĕç, пухрĕç. Каллех çирĕç. Умлă-хыçлă утса аслисем патне çывхарчĕç.

– Ачасем, эпĕ тепĕр сăмах-юмах калам-ха сире, – шӳтлет Вова шăллĕ. – Ĕлĕк-авал, пĕр пӳртре икĕ усал çын пурăннă тет. Арçынĕ Трахом ятлă пулнă, арăмне Чахотка тесе чĕннĕ.

Пурте каçса кайсах кулаççĕ. Карпов çех шăпăрт тăрать, малалла калать.

– Трахомпа Чахотка нумай çынсене асаплантарнă. Совет влаçĕ кăна çав усалсене пĕтерчĕ тет.

– Пăхăр-ха, пĕр çын кунталла килет, – кăшкăрчĕ çут çинче тăракан ача. – Элекçи пичче пулас. Çарана таптанăшăн вăл пире ятлать пулĕ.

– Эпир курăксене таптамастпăр, асăрханса çӳретпĕр, – хирĕçлет тепри. – Йĕркеллĕ çынна никам та ятламасть.

– Вăл çын Алексей Яковлевич мар, уй-хир хуралçи. Йытти те хыçран чупса пырать.

– Хĕвел пăхать, анăçра çумăр çăвать пулас, – мăкăртатрĕ пĕри. – Авă тухăçри тӳпере асамат пĕкки карăнчĕ.

Пурте çӳлелле пăхрĕç. Епле илемлĕ те капăр, янкăс пĕкĕ-кĕпер! Темле ăстаçă эрешленĕ, çичĕ тĕспе сăрласа чечекленĕ тейĕн! Ылттăн-кĕмĕл пĕкечен ахах-мерчен масмакĕсем, йĕс шăрçисем-ункисем. Сăнарах пăхсан, унта çичĕ тĕслĕ çул-кавир асăрхатăн: çӳлте чи вăрăмми – хĕрлĕ; ун çумĕнче хĕрлĕрех сарă, юнашар сарăпа симĕс тата шупка кăвакпа кăвак; чи кĕске пĕкки – хĕрлĕ кăвак. Ку тĕссем йăлтăртатса вылясах, пĕр-перинпе улшăнсах тăраççĕ, юнашар тăрăхри тĕсе йышăнаççĕ.

– Эй, асăрхăр-ха, – пӳрнипе тĕллет Карпов, – çӳлте тата тепĕр кĕпер палăрать. Анчах кунти йĕрсем-тĕссем çӳлтине

хирĕсле: чи аялти хĕрлĕ, тӳпере хĕрлĕ кăвак. Чи ҫӳлти кăшăлĕ-йăрăмĕ аялтинчен тепĕр хут вăрăм.

Карпов ҫывăхри ҫил арманĕсем ҫинелле пăхрĕ, амăшĕн сăмахне аса илчĕ. Халĕ вĕсен ҫуначĕсем ҫилпе мар, халăх хуйхипе ҫаврăнаççĕ. Ҫумăр та куççуль пек туйăнать.

Ҫул хĕрринчи виçĕ кивĕ арман ерипен кăлтăртатса авăрать. Ачасем яла ҫитрĕç.

## Пилотка

Утă уйăхĕ. Вовăпа икĕ юлташĕ çырла тултарнă хурăн хуппи пуракĕсене çĕклерĕç те хулана васкарĕç.

– Эпĕ ĕнер пухнă çырлана станцăра сутатăп та анне валли кулач илсе килетĕп, – утнă май пакăлтатать Пĕри, тункатаран такăнса.

– Мана та укçа питĕ кирлĕ, анчах çырлине вăрçа каякан салтаксене парас тетĕп, – хирĕçлет Карпов. – Вĕсенчен укçа илме аван мар.

– Тĕрĕс шухăш, – килĕшет виççĕмĕшĕ.

Вăрман хĕрне çитсен, сенкер шуçăма çĕнтерсе ăшă хĕвел йăлтăр пуçне кăтартрĕ, илемлĕ те лăпкă ир пуçланчĕ. Кайăксем чĕвĕлтетме тытăнчĕç.

– Пĕлтĕр эпĕ çырла сутсах пушмак туянтăм, вĕренме кирлĕ кĕнекесене те илтĕм.

– Кăшт хăвăртрах утар-и? – хистет Пĕри. – Çăкăрсем илсе киле таврăнмалла тата. Тен, тӳрĕ сукмакпа чупатпăр. Апла пĕр çухрăм çывăхрах.

– Каçчен ĕлкĕретпĕр, тусăмсем, – лăпкăн хуравлать Карпов. – Утă çулма тепĕр эрнерен тин тухаççĕ. Унччен кăштах канас пулать.

Умри вăрманти улах вырăнти юман çинче куккук авăтать. Ачасем чарăнчĕç, пăхса тăраççĕ, куккук авăтнине сăнаççĕ. Акă вăл, çамрăк чăпар куккук, кукăр турат çинче пытанса ларать, ури кĕске, хӳри вăрăм, сăмси шĕвĕр те кукăр. Кайăк çывăхри çынсене асăрхаймарĕ пулас. Тавралăха ян янратса, пысăкрах сасăпа мăнаçлăн, янăравлăн авăтать, пĕсехине вылятса сывласа илет. Хушăран кăшт чарăнать те турат çинче çаврăнать. Йĕри-тавра пăхса илет, асăрханать. Унтан каллех, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе, хавхаланса куккуклатма пуçлать. Çав самантра вăл хăйне пĕтĕм таврари кайăксен пуçлăхĕ пек туять пулас: «Эпĕ уй-хирпе вăрман юрăçи, асли; тĕнчери мана пур çĕршыври пур халăх та лайăх пĕлет, юрататать, ман сасса итлесе киленет; пурнăç шăпипе çынсен ĕмĕрне виçет, хĕпĕртет, малалла ĕмĕтленет;

хам юррăма эпĕ шуçăмла тытăнатăп та мĕн тĕттĕмччен уйăхпа çеç пĕтеретĕп».

Кайăк чарăнчĕ, тарăннăн сывласа илчĕ. Сулхăнри хурткăпшанкăсемпе лĕпĕшсене асăрхарĕ, тăк-тăк тутарса çиме пикенчĕ. Унтан пуçне çĕклерĕ, тавралла пăхса илчĕ, çуначĕсемпе вăш-вăш-вăш авăсса улăха хăвăрт вĕçсе анчĕ, çаран çийĕн йăпăр-йăпăр чупса кайрĕ, тем сăхма тытăнчĕ. Ачасем шĕшкĕ тĕми хыçне пытанчĕç, лăпчăнса ларчĕç.

– Çырла çиет пулас, – терĕ Карпов.

– Куккук çырла çининчен ним тĕлĕнмелли те çук, – тавăрать юлташĕ.

Чăпар куккук çаран тăрăх унталла-кунталла хăвăрт чупкаласа çӳрерĕ, апат шырарĕ. Тĕм хыçĕнчи ачасене асăрхасан, çĕр çумĕпе хăвăрт вĕçсе кайрĕ, самантра вăрмана кĕрсе çухалчĕ.

**x x x**

Кăнтăр тĕлĕнче виçĕ вĕренекен хулана çитрĕç. Радио калаçма тытăнчĕ. Оборона комитечĕн председателĕ халăха чĕнсе калать иккен.

– Юлташсем! – илтĕнчĕ лăпкă сасă. – Граждансем! Шăллăмсемпе йăмăксем! Çарпа флотăн боецĕсем! Сире чĕнсе калатăп эпĕ, манăн тусăмсем!

Вова тимлĕн итлет, кашни сăмахне тăнлать. Ашшĕне аса илет. Малтанхи çырăвĕнчех вăл «Смоленск еннелле каятпăр» тесе систернĕччĕ.

«Пирĕн Тăван çĕршыв пысăк хăрушлăхра, – диктор хыççăн пăшăлтатать Карпов вĕренекен. – Е вилĕм, е пурнăç. Тăшман вăйлă та чее, хăрушă та ултавлă. Çавăнпа та пĕтĕм ĕçе вăрçă чухнехи пек туса пымалла. Пĕтĕмпех фронт валли, веçех Çĕнтерӳ валли. Пĕтĕм ĕç – Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшасси». Юпа çинчи репродуктор патне çынсем йышлăн пухăнчĕç, пĕр-пĕринпе калаçма пикенчĕç.

– Оборона комитечĕн председателĕ хуйхăллăн пуплет, вăл чирлĕ мар-ши?

– Чирли-мĕнĕ, вăл халь çамрăк мар ĕнтĕ, утмăл икĕ çулта.

– Леш шуйттанĕ: çын çиен Гитлерĕ миçере-ши тата?

– Вăл, чупкăн йытă, аллă виççе кайнă теççĕ.

– Эпир çĕнтеретпĕрех. Пирĕншĕн те уяв çитĕ.

Ентер ачисем малалла салхуллăн утрĕç. Чугун çул станцийĕ патне çитрĕç. Унта çынсем туллиех. Ачасем те пур. Вĕсем ашшĕсемпе пиччĕшĕсене ăсатма пынă ĕнтĕ. Хайсем тĕрлĕ чĕлхепе калаçаççĕ, тумĕсем те тĕрлĕрен.

– Атте, кермансене хăвăртрах хăваласа ярăр.

– Часрах киле кил, пичче!

– Ан парăнăр нимĕçсене!

– Çырсах тăрăр, ачасем.

– Ан хуçăлăр, тăвансем! Сире патшалăх манмĕ. Эпир тăшмана кунталла ямăпăр.

– Сывă пул, ывăлăм!

– Сывă пулăр, пурте!

Пăравус чуна ыраттармалла çĕхĕрсе ячĕ, вырăнтан тапранса майĕпен малалла шурĕ, пысăк урапиcем çаврăнма пуçларĕç. Хĕрарăмсем тутрисемпе сулаççĕ, аллисемпе кăнтараççĕ. Акă пĕр пĕчĕк хĕрачи тĕшĕрĕлсе анчĕ, анăçалла пăхса хыттăн макăрма тапратрĕ.

– Атте, пичче! Мĕншĕн харăсах каятăр? Каялла васкарах килĕр, васкарах! Йывăр пулать пире.

Эшелон курăнми, юрă сасси илтĕнми пулчĕ. Çынсем куçĕсене шăла-шăла çаплах вăрман еннелле пăхса тăраççĕ.

– Эх, хамăр та çав, – юлташсене чавсинчен кăшалт тĕкрĕ Вова. – Çавара карса тăтăмăр, çырлана салтаксене парайманăмăр.

– Чăнах та! Ну, юрĕ, салтаксем татах килĕç-ха...

– Эй, пăхăр-ха, эшелон каялла таврăнать, – илтĕнчĕ хыçалти пĕр сасă.

– Ан ухмахлан, вăрçă чарăнмасăр вĕсем кунта таврăнас çук, – хирĕçлет тепри.

Чăнах та, каллех поезд сасси илтĕнчĕ. Анăçран, çар эшелонĕ халь кăна кусран çухалнă вырăнтан, тепĕр состав курăнса кайрĕ, часах станцие çитрĕ. Ку санитарнăй пуйăс пулчĕ иккен. Симĕс вакун кантăкĕсенчен шурă

тӳшек-минтерсем курӑнаҫҫӗ, аманнисем пуҫӗсене ҫӗклесе пӑхаҫҫӗ. Вӗсен алли-урисене шап-шурӑ бинтсемпе чӗркенӗ, гипсланисем те пур. Акӑ темиҫе салтак туясем ҫине таянса вакун алӑкӗ патне пычӗҫ, тулалла тинкерчӗҫ. Ҫынсем пырса вӗсене апат-ҫимӗҫ тыттараҫҫӗ, сывлӑх сунаҫҫӗ, ыйтса пӗлеҫҫӗ. Нарсем ҫинче ахлатса ҫап-ҫамрӑк каччӑсем выртаҫҫӗ. Ачасем ҫине йӑвашшӑн пӑхаҫҫӗ, аллисене кӑкӑрӗ ҫине хурса тав тӑваҫҫӗ.

– Хӑвӑртрах сывалӑр, пиччесем.

– Эпир сирӗншӗн ют ҫынсем вӗт-ха.

– Ҫук, апла мар. Халь пирӗншӗн фронтри пур ҫын та ҫывӑх.

– Ачасем, ҫимелли япаласене кантӑк витӗр, пирӗнтен вӑрттӑн пама юрамасть, – асӑрхаттарчӗ ҫамрӑк тухтӑр, шурӑ халат тӑхӑннӑскер.

– Эпир сутӑнчӑк мар. Хӑрамалли ҫук.

– Ҫапах та... – Тухтӑр-офицер куҫлӑхне хывrӗ, вӗрсе тасатрӗ, куҫӗсене шӑлкаласа илчӗ. Куҫлӑхсӑр вӑл тата ҫамрӑкрах пек курӑнчӗ. Акӑ тепӗр вакун тӗлӗнче хӗрарӑмсем пухӑннӑ: аманнисемпе калаҫаҫҫӗ.

– Кунта Ентер ялӗн ҫыннисем ҫук-и?

– Пур, – евитлерӗ Вова, калаҫакансем патне пырса.

– Эсӗ хӑш районсем тата, пирӗн яла пӗлетӗн?

– Эпӗ Ҫӗпӗрти чӑваш. Иркутск облаҫӗнчи Канск станцийӗнчен. Ман атте-анне Ентерте ҫуралса ӳснӗ. Кишӗр Ҫирки ачисем. Вӗсем выҫлӑх ҫулхине ялтан тухса кайнӑ.

– Илтсе, илтсе, – васкасах пӗлтерчӗ тепӗр ачи. – Аттесем каласа панине астӑватӑп.

– Нимӗҫсем кунтах килӗҫ-ши? – кӑсӑкланчӗ ват хӗрарӑм.

– Ан хӑрӑр, юлташсем. Тӑшмана урӑх кунталла ямаҫҫӗ. Лере пирӗн ҫарсем сахал мар, – ҫирӗппӗн пӗлтерчӗ тепӗр аманнӑ ҫынни.

Станцин икӗ енчен те пуйӑссем килеҫҫӗ, каяҫҫӗ. Ҫар эшелонӗ ҫинчен аннӑ пӗр ҫап-ҫамрӑк салтакӗ станцӑналла васкарӗ. Ҫынсем ӑна ҫӗлӗк ҫӗклесе саламлаҫҫӗ, ырлӑх-сывлӑх, телейлӗ ҫул сунаҫҫӗ.

Урам кĕтессинчи, столовăй тĕлĕнче салтак самантлăха чарăнса тăчĕ. Хуйхăллăн тăракан çамрăк амăшĕпе пĕчĕк хĕрачана курсан, вĕсем патне пычĕ. Амăшĕ çумĕнче именчĕклĕн тăракан вĕренекене пусĕнчен ачашларĕ, икĕ аллипе çӳлелле хуллен çĕклесе, кăкăрĕ çумне пăчăртарĕ.

– Сирĕн çемьене те хуйхă çитрĕ-им, пепкем? – ыйтрĕ салтак.

– Ашшĕпе куккăшне вăрçа ăсатрăмăр, – пĕлтерет амăшĕ.

– Эпĕ халь сакăр çулта, – хăюсăррăн калать ачи.

– Пĕрремĕш класа лайăх вĕренсе пĕтертĕм.

– Малашне тата аванрах вĕрен, – питĕнчен çупăрлать ăна сухал хырма пуçламан салтак.

Вĕсем малалла утрĕç, ытти çынсемпе хутăшса кайрĕç. Пĕчĕк хĕрача çав-çавах салтак ытамĕнче, сăпкари пек сулланса-пăркаланса пычĕ, вĕçĕмсĕр чĕвĕлтетрĕ. Чĕр кĕмел тумламĕсем ют çыннăн тарлă пичĕ тăрăх юхса анчĕç, çирĕп аллисем çине пăт-пăт тумларĕç.

– Пичче, ан хурлан. Сана курсан, манăн та макăрас килет. Тепре кунта килсен пирĕн пата кĕр. Кантра тытса лашалла выльăпăр. Юрать-и, пичче?

– Юрать, палламан йăмăкăм, юрать. Вăрçă пĕтсен каллех çак пасарта тĕл пулăпăр.

– Тăшмана çĕнтерсе хăвăртрах киле тĕрĕс-тĕкел таврăнмалла пултăр, – хушса хучĕ амăшĕ.

Салтак сылтăм аллипе хĕрачан тутăрне салтрĕ, хăйĕн симĕс пилоткине ăна тăхăнтартрĕ те çӳçне тирпейлесе чикрĕ.

– Капла эпĕ те салтак пекех пуль?

Анчах ăна хирĕç чĕнекен пулмарĕ. Амăшĕ çех саспах йĕрсе ячĕ. Салтак хĕрачана тата çӳлерех çĕклесе сулахай хулпуççи çине лартрĕ, вокзал патнелле васкарĕ. Вĕсен умне тепĕр ача пырса тăчĕ. Хай вун-вуник çулта пулĕ, Вовăран чылай пĕчĕкрех.

– Лерелле каятăр пулĕ, пичче, – сăмах хушрĕ вăл, аллипе анаçалла кăтартса.

– Çавăнталла, шăллăм.

– Вăрçăра пирĕн пиччесене курсан салам кала. Вĕсем виççĕн тăшмана тустараççĕ.

– Юрать, шăллăм, – килĕшет фронта каяканни. – Эпир унта ытла нумаях пурăнмăпăр: фашистсене çапса аркатсанах киле таврăнăпăр.

– Тем пекехчĕ, тем пекехчĕ, – илтĕнчĕç темиçе сасă пĕр харăсах.

– Акă курăпăр, хамăрăннисем çапах аяла пулмаççĕ, – чăтаймарĕ тепĕр çамрăк ачи. – Куратăр-и, мĕн чухлĕ салтакĕ, машинĕ куçать? Ешалон хыççăн ешалун иртет вĕт-ха. Салтак станцăна çитсенех пуйăс тапранса кайрĕ.

– Пичче, сан пилотка манса юлчĕ! – çинçе саспа кăшкăрчĕ хĕрача.

– Вăл санах пултăр! Асăнмаллăх. Манăн тепре пур.

Пилотка тăхăннă пĕчĕк хĕрача вокзал умĕнче каллĕ-маллĕ утать. Салтаксен симĕс пилотки ăна килĕшет.

## Тӑлӑх текерлӗк

Тул ҫутӑлать. Ҫывӑхри вӑрманта кайӑксем чӗвӗлтетеҫҫӗ, сад пахчинче шӑпчӑк юрлать. Илемлӗ, лӑпкӑ ир. Атӑл хӗрринчи Шупашкар енчен хӗвел хӗрелсе тухать. Ӑшӑ, ачаш ҫил пит-куҫа мамӑк пек ҫупӑрлать. Хӗвел шевли тунсӑх куҫать, симӗс курӑк ҫинче мерчен сывлӑм пӗрчисене пухса илет, куҫ хупмалла пытанмалла вылять, унтан хӗвне чикет. Хуралтӑсем ҫинчи витнӗ улӑм лапчӑнса сип-симӗс тӗслӗ кӗҫҫе евӗр курӑнать. Хуйхӑллӑ Ентер ялӗ ыйхӑран вӑранчӗ. Чӗриклетсе хапхасем уҫӑлаҫҫӗ. Ҫынсем ҫавасем ҫӗклесе улӑхалла хыпаланса утаҫҫӗ. Часах тӳрем Ентер улӑхне вӗренекенсем йышлӑн пухӑнчӗҫ. Вӗсемпе пӗрле ватӑ учительница Полина Карповна та пур.

– Ачасем, – йӑваш сасӑпа пӗлтерчӗ шкул директорӗ. – Паян эпир ҫак улӑха ҫулма тытӑнӑпӑр. Пӗчӗкреххисем утӑ тавӑраҫҫӗ, пухаҫҫӗ, вуник-вунвиҫ ҫулхисем ҫулма хӑнӑхӑпӑр. Кунта курӑк пит ҫӑра та ҫӳллӗ мар, ҫулма ҫӑмӑлрах пулӗ, хуллен вӗренӗпӗр.

– Вӑйлӑрах ҫулакансене маларах ярас, – пӗлтерет пӗр ачи.

– Апла мар, – хирӗҫлет Полина Карповна. – Тин ҫех ҫулма вӗренекенсем ман хыҫҫӑн пулӑр. Ҫулма пӗлекенсем сире хыҫалтан асӑрхаса, пулӑшса пырӗҫ. Вара ҫӑмӑлтарах пулӗ. Эпӗ хам та ҫавӑн пек вӗрентӗм.

– Хыҫалтисем пирӗн ҫине кӗрсе ан кайччӑр, – асӑрхаттарчӗ тахӑшӗ.

– Урасене касӗҫ тата. Аслисем ҫавасене лапаткалама пулӑшӗҫ. Унсӑрӑн аллӑрсене суранлама пултаратӑр. Халӗ пурте ман хыҫҫӑн ерипен ҫулса пырӑр, малтанлӑха ытлашши васкама кирлӗ мар.

– Утӑ ҫулассипе хресченӗн чи йывӑр ӗҫӗ пулнӑ ҫав, – сӑмах хушать Вова Карпов. – Эпӗ виҫ-тӑват ҫул каяллах ку ӗҫе тытӑнтӑм. Малашне машинӑсемпе ҫулма, пухма тытӑнӑпӑр, пурнӑҫ юсанӗ.

Пурте, пӗр-пӗрин хыҫҫӑн хуракӑшсем пек йӗркеленсе тӑрса ерипен ҫулма тытӑнчӗҫ. Ҫивӗч ҫавасем сывлӑмлӑ ку-

рӑка хӑвӑрт ҫулаҫҫӗ. Курӑк карти-картипе купаланса пырать. Ҫинҫе те пӗчӗк паккуссем улӑх урлӑ тӑсӑлса юлаҫҫӗ. Курӑк ҫинчи сывлӑм кӗмӗшке шӑрҫа пек йӑлтӑртатать, хӗвел ҫутипе йӑпанать. Уҫӑ, таса сывлӑш кӑкӑра килентерет. Кассӑн-кассӑн вӗрекен лӑпкӑ ҫилӗ пит-куҫа ҫупӑрлать, пӗсехене кӗрсе кайса кӑтӑклать.

– Ай-уй, эпӗ ывӑнтӑм та, – илтӗнчӗ пӗр хӗрачан ҫинҫе сасси.

– Манӑн та питрен хура тар патӑр-патӑр юхать, – хушса хучӗ юнашар пыракан арҫын ача.

– Ӑслайпа ҫулас тесен кӗлеткене малалла кӑшт тайӑлтармалла, ҫавине хыҫаларах ямалла, ҫаврӑнса ҫулмалла. Вара паккуссем лайӑх купаланса пыраҫҫӗ.

– Ӑслайпа ҫулсан, вӑй упранать. Ытлашши тапалансан – час ывӑнатӑн, усси те ҫук.

– Вӑрҫӑ пулман пулсан, тен, эпир те утӑ ҫулман пулӑттӑмӑр. Аттесем ҫук чух хамӑрӑнах ҫулас пулать.

– Аттесем ҫех мар, пиччесем те фронтра. Ҫавӑнпа пире йывӑр килет.

– Ан кулянӑр, ачасем, – лӑплантарчӗ учительница ҫамрӑк вӗренекенсене. – Ку вӑхӑтлӑх йывӑрлӑхсене чӑтса иртторетпӗрех, часах вӑрҫи те чарӑнӗ. Ӗлӗк пире тата йывӑртарах пулнӑ, ҫапах парӑнман. Айтӑр-ха юрӑ пуҫлӑпӑр, юрлани ҫынна ялан хавхалантарать.

Анлӑ улӑхра юрӑ сасси хуллен илтӗнсе кайрӗ. Кӗвви хурлӑхлӑ, чуна пырса тивет.

Пӗчӗк ҫеҫ путени
Сарӑ тулла юратать
Юратать, юратать
Сарӑ тулла юратать.

Ачасен калаҫӑвне, юррине итленӗ май, утмӑла ҫывхаракан учительница ӗлӗкхине аса илчӗ. Камсем пулнӑ-ха революциччен вӗсен ашшӗсемпе аслашшӗсем? Чылайӑшӗ чухӑнсем, лашасӑр, ӗнесӗр е ҫӗрсӗр ҫынсем. Ял куштанӗпуянӗсем вӗсене пусмӑрланӑ, тӑрӑхласа усал ятсем парса тултарнӑ. Ҫара Ҫтаппан, Ухмах Унтри, Выҫӑ Ваҫли, Кӗлмӗҫ

Кавӗрле тата ыттисем те. Пӗтӗм тавралӑха тӗшмӗш ятсемпе чӗннӗ: Турӑ ҫӑл куҫӗ, Киремет уйӗ, Чӳк ҫырми, Йӗрӗх варӗ, Хӗрт-сурт вӑрманӗ... Аслӑ Октябрь хӗвелӗ кӑна халӑха ирӗке кӑларчӗ, ырлӑх-пурлӑх пачӗ.

– Вова, эсӗ урусене асӑрха, – васкатать Карпов хыҫӗнчи хӗрача, юлташӗсем ҫине ӑшшӑн пӑхса.

– Ҫав тытамаклӑ Гитлерӑн урисене, – хушса хурать учительница хыҫҫӑн ҫулса пыраканни, – ҫак ҫивчӗ ҫавапа вӑйлӑн сулса чашлаттарас килет. Икӗ ури те харӑсах касӑлса ӳктӗрччӗ.

– Вӑхӑт ҫитӗ ак, – ӑнлантарать Полина Карповна, – ӑна пӗтӗм тӗнче суд тӑвӗ. Кунта пӗр Гитлер ҫех мар, фашистсем айӑплӑ. Вӗсене ҫӗр ҫинчи пӗтӗм халӑх ылханать.

Хӗвел ҫӳлеллех хӑпарать. Ҫил лӑпланчӗ. Тӳпере текерлӗк макӑрать. Ӑна май ҫырма леш енче путене авӑтать.

Вӗрентекенпе ачасем паккуссене ҫулса тухрӗҫ, канма ларчӗҫ. Полина Карповна йӗри-тавра ҫаврӑнса пӑхрӗ. Аякра ача-пӑчасем кӑшкӑрашни, шавласа калаҫни илтӗнчӗ. Вӗсем ялтан тухрӗҫ. Ик-виҫ вар урлӑ каҫрӗҫ те йывӑҫ кӗреплисене ҫавӑрттарса кунталла утрӗҫ. Малта сенӗк ҫӗкленӗ ватӑ хӗрарӑмсем тата пионер вожатӑйӗ. Чулкаҫ варне ҫитсен типнӗ утта пӗр ҫӗре пухма тытӑнчӗҫ. Ваттисем купа туса пыраҫҫӗ. Йӗтем ҫинче утӑ тиенӗ тулли лавсем курӑнаҫҫӗ. Акӑ вӗсем тапранчӗҫ, мӑн ҫул ҫине тухрӗҫ, хуланалла ҫул тытрӗҫ. Хыҫран ҫӑра тусан мӑкӑрланса юлчӗ, хуллен-хуллен аяккалла саланчӗ. Ҫултан инҫех мар лашасемпе суха тӑваҫҫӗ. Вӑкӑрсем те пур. Вӗсем тапса туртаҫҫӗ, пуҫӗсене вӗҫӗмсӗр сулкалаҫҫӗ. Хушӑран тапах чарӑнаҫҫӗ, ӳркенсе утаҫҫӗ. Суха кассисем тӑрӑх хура кураксем пӑркаланса пыраҫҫӗ, ӑмансем шыраҫҫӗ, вӗҫе-вӗҫе каяҫҫӗ. Шӑши улӑхӗнче те халӑх туллиех. Ҫынсем васкаса утӑ ҫулаҫҫӗ. Аякран вӗсем ула-чӑла курӑнаҫҫӗ. Шур кӗпеллисем ытларах. Вӗсем, паллах, хӗрарӑмсем ӗнтӗ. Юрӑ та илтӗнет. Хастар халӑх хурлӑхлӑн юрлать, ҫиллес хавхаланса ӗҫлет. Улӑх ути йӗрки-йӗркипе суха касси евӗр купаланса выртса юлать. Анчах вӑл сип-симӗс курӑнать. Ҫилпе кушӑрханӑ, хӗвелпе хӗрелнӗ-сарӑхнӑ ҫирӗп

алари ҫавасем сехет маятникӗ пек каллӗ-маллӗ выляҫҫӗ, вӑрӑм та ҫӑра куракка пӗр тикӗс ҫулаҫҫӗ. Пӗтӗм уй-хир тӑрӑх ӗҫ шавӗ саланать.

Ҫамрӑк ачасем каллех ӗҫе пикенчӗҫ. Чӑш-чаш, чӑш-чаш тӑваҫҫӗ ҫавасем. Лапаткисем, вӗсене витленӗ евӗр, вшин-вшин, вшин-вшин теҫҫӗ, ҫавасене ҫивӗчлетсе вӑй параҫҫӗ, хаярлатаҫҫӗ. Ентер улӑхӗ шавлама пуҫларӗ: калаҫни-кулни ахлатнипе хутӑшса пӗр сасӑ пулчӗҫ, тӑри юррине илтӗнми турӗҫ. Мӑшӑрне ҫухатнӑ пӗр текерлӗк кӑна пуҫ тӑрринче тӗвиклетсе вӗҫсе ҫӳрет. Йӑви ҫывӑхӗнче ҫаврӑнать те, хӑйӗн тӑшманӗсене улталас тесе аяккаллаваскать, ҫинҫе сассипе тата хытӑрах ҫухрашать.

– Ку пӗччен текерлӗк мӗншӗн ытла ҫуйхӑшса ҫӳрет-ши? – кӑсӑкланчӗҫ ҫамрӑксем. – Е ҫӑткӑн хурчка чӗпписене тытнӑ-и?

– Аскӑн йытӑпа чее тилӗ те текерлӗк йӑвине аркатма, чӗпписене тытса ҫиме пултарнӑ.

– Шел ӑна, тӑлӑхскерне. Халӗ унӑн мӑшӑрӗ те, ҫамрӑк пепкисем те ҫук пулас.

Кунӗпех ӗҫлерӗҫ вӗренекенсем улӑхра, ҫулма вӗренчӗҫ. Виҫҫӗшӗ ҫависене лапаткаланӑ чухне аллисене кӑштах суранлатрӗҫ. Тепри, сасартӑк ҫӗлен ҫурине курнипе, урине ыраттарчӗ.

– Пӗр кун ҫулнипех хытӑ ывӑнтӑм, – шакӑлтатса калаҫса пырать пӗр пӗчӗкрех ачи, пиллӗкмӗш класра вӗренекенскер.

Пуҫламӑшӗ яланах йывӑр ҫав, – тавӑрать тепри, кӑшт мухтанарах. Эпӗ акӑ, вуникӗ ҫулта ҫех пулин те, вуҫех ывӑнмарӑм.

– Э, куна пӗлнӗ пулсан, эпӗ те хамӑн вуникӗ ҫулхи шӑллӑма илсе килеттӗм, – кӑмӑлсӑрланать виҫҫӗмӗш хӗрачи. – Вунвиҫ-вунтӑват ҫултан ҫамрӑккисене ҫулма юрамасть терӗҫ те. Ыран шӑллӑма илсе килетӗпех, вӑл та вӗрентӗр. Унӑн кӗлетки манран патвартарах, хӑй те вӑйлӑ. Эпир иксӗмӗр вӑрҫа кайнӑ аттепе пичче шӗн ӗҫлетпӗр.

– Аттесем ҫук чухне хамӑрӑн ытларах ӗҫлес пулать. Хӗрлӗ Ҫара пӗтӗм вӑйран пулӑшмалла.

– Полина Карповна, çулма вĕреннисен ыран пысăккисемпе пĕрле ĕçлеме юрать-и?

– Халĕ çитĕннисем хушшинче те ватăсемпе хĕрарăмсем ытларах. Вăйпитти арçынсем кунсеренех сахалланса пыраççĕ, – хушса хучĕ улттăмĕш класра вĕренекен.

– Ачасем, эпир хамăрах уйрăммăн ĕçлĕпĕр, – ăнлантарать шкул пуçлăхĕ. – Сире те çамрăклах йывăр ĕçпе хуçма шел. Кам паян хытă ывăннă, ыран канма пултаратăр. Е утă пухма кайăпăр, унта çăмăлрах.

– Çук, халь канмалли вăхăт мар, – çирĕппĕн калать Вова Карпов ушкăнри чи асли. – Эпир пĕчĕкренех ĕçе хăнăхнă. Питрах йывăрах мар. Вăхăтлăха чăтас пулать.

– Полина Карповна, мĕншĕн Мироновсем пĕри те ĕçе тухмаççĕ? Вĕсем пĕри вунпиллĕкре, тепри вунвиççĕре. Ачисене пионера çырăнма чарать теççĕ.

– Вĕсемпе сахал мар калаçнă, – пĕлтерет шкул директорĕ. – Ял Советне те чĕнтерчĕç. Сывă мар тесе юптараççĕ.

– Вĕренекенсен комитетĕнче, пионерсен сборĕнче Мироновсем çинчен сахал мар сăмах хускатнă, – аса илет Вова. – Стена хаçатĕнче те асăрхаттарнă.

– Халĕ вĕсем кăштах йĕркеленчĕç, – тет вĕрентекен.

– Вăрçă тата миçе кунтан чарăнать?

– Вăрçă хăçан пĕтессине калама çăмăл мар, – тет учительница. – Тăшман халлĕхе вăйлă, чее те тискер. Хĕрлĕ Çар ирĕксĕрех вăхăтлăха чакать. Апла пулин те пирĕн салтак-командирсем нимĕçсемпе паттăррăн çапăçаççĕ. Эпир çĕнтеретпĕрех. Ирпе каç клубра радио итлĕр, ун çинчен килтисене каласа парăр. Эсир пионерсем.

Ватă вĕрентекенпе çап-çамрăк вĕренекенсем шăкăлтатса калаçса килелле утрĕç. Кашнин аллинчех эмел курăкĕсем. Каç пулчĕ. Улăхри тăлăх текерлĕк çав-çавах вĕçсе çӳрет, хурлăхлăн макăрса йĕри-тавра çаврăнать.

x x x

Пĕр ирхине сенкер шуçăма çĕнтерсе ăшă хĕвел йăлтăр пуçне кăтартрĕ. Илемлĕ те лăпкă ир пуçланчĕ. Шкул пахчинче хĕрӳ ĕçе тытăнчĕç. Вĕренекенсем карта-хура юсаççĕ. Вовăпа вуникĕ çулхи шăллĕ шăтăк чавса юман юпасем вырнаçтараççĕ. Тайăлнисене тӳрлетеççĕ, çирĕплетеççĕ. Тепĕр виçĕ ачи каштасем хурса, пăта çапса лартаççĕ. Классенче те шăн-шан туни, шаккани-таккани илтĕнет. Арçын ачасем партăсемпе сĕтелпукан юсаççĕ, сăрлаççĕ.

– Паян ку ĕçсене вĕçлетпĕр пулĕ, ачасем? – сăпайлăн ыйтрĕ шкул директорĕ, пӳлĕмсене пăхса çӳренĕ май.

– Тен, касчĕнех пĕтĕ, Полина Карповна, – илтĕнчĕç сасăсем. – Ытти вĕренекенсем тата ăçта?

– Аслăрах классенчисем пурте фермăра ĕçлеççĕ. Урапасем çине тислĕк тиесе, хире турттараççĕ. Кĕçĕнреххисем колхоз садĕнче ĕçлеççĕ.

Ватă учительница пахчана тухрĕ, ĕçлекенсене саламларĕ. Чылайччен тăрăшса ĕçлерĕç вĕренекенсем. Юпа хыççăн юпа лартрĕç, пĕчĕк алăксене сăйларĕç. Пур çĕрте те тирпейлерĕç. Хуп-хура тара ӳкрĕç.

Кăнтăрлапа шăрăхланчĕ, пăчă пусса илчĕ. Куç умĕнчех çумăр пĕлĕчĕсем пĕр çĕре хăвăрт пуçтарăнчĕç, купаланчĕç. Таçта аякра, тухăçра, çиçĕм çиçрĕ, аслати хантăртаттарни хуллен илтĕнчĕ: кĕр-кĕр-кĕр кĕрлесе, вăрăммăн кĕпĕр-кĕпĕр турĕ. Унтан вăл кăлтăртаттарса кăнтăралла куçрĕ. Çӳллĕ тусен тăрринче хăнтăртатса илчĕ. Часах кунталла кĕмсĕртетсе çитрĕ. Хытăрах ятлаçма, чăрн-чăрн-чăрн! кисрентерме, вутхĕм аллисемпе хăлаçланма тытăнчĕ. Йĕри-тавра халтăртатса çаврăнчĕ те самантлăха шăпланчĕ.

– Ачасем, пӳтсĕр çумăр килет, – пĕлтерчĕ Полина Карповна. – Шкула кĕрĕпĕр.

– Эпĕ кĕместĕп. Мăн тирек çумне тăратăп та çиçĕмпе аслатие сăнатăп, – пĕлтерчĕ пĕр ачи.

– Аслати вăхăтĕнче пысăк йывăç çумне нихăçан та тăмаççĕ, – ăнлантарчĕ вĕрентекен. – Çиçĕм лекме пултарать.

– Шкула лекмест-и тата?

– Шкул çумĕнче çиçĕме çĕре ямалли пур. Авă хăвăрах куратăр пулĕ: вăрăм шăчă çумне майлаштарнă пысăк пралук çĕр çумнех перĕннĕ. Вăл шалалла метр ытла кĕрет, – ăнлантарчĕ Полина Карповна.

Ачасем пурте шкулалла чупрĕç. Сивĕ çил вĕрме тытăнчĕ, çумăр шăпăртаттарса çума пуçларĕ. Аслати пушшех вăйлăрах кутăнлашать. Малтанах хулленрех хăлтăртатса-халтăртатса пырать-пырать те, чăнт-чаант! тутарса илет: часах тепĕр çĕре çитсе кăрнлаттарать, тавралăх чантлатать. Çĕр кисренет, сасă кăштах тамалать, аслати канать. Унтан каллех-каллех çатăртатса-шатăртатса тепĕр çĕрелле чуптарать. Çиçĕм пĕрхĕнет, кăрнлаттарса сас салатать, силлентерсе çатăртатать, чĕтрет – пур чĕрчуна шиклентерет. Çуллахи, тĕрĕсрех каласан, июль уйăхĕнчи, яра куна çакăн пек алхаснă хыççăн чăн тӳпене çитсе, вăрăммăн кăрн-кăрн-кăрн тутарса, хыттăн янăратса илчĕ те çĕр çинелле чалт-чалт! тутарчĕ, чăрнт-чăрнт! çапрĕ, хĕлхем тăкрĕ. Кăшт тăхтасан, чарăнчĕ, шăпланчĕ.

Вова Карпов кантăк витĕр нумай хушă тинкерсе пăхрĕ. «Акă мĕнле ятлаçать иккен аслати. Киле çитсенех ун çинчен çырса хуратăп. Эпĕ пĕчĕкренех çанталăка сăнаса пыратăп, дневник çыратăп. Атте вĕрентрĕ».

– Кун кĕскелме тытăнчĕ, çанталăкĕ çапах шăрăх тăрать, – пĕлтерчĕ пĕр вĕренекенĕ.

– Паян утă уйăхĕ пуçланчĕ çав, – тет Вова. – Вăл çулталăкри чи шăрăх та аслатиллĕ-çиçĕмлĕ вăхăт. Кунĕ-çĕрĕ вăл талăкра вăтамран ик-виç минут кĕскелсе е вăрăмланса пырать. Тепĕр чухне пилĕк минут таранах.

– Паянхи пек пăчă шăрăхсенче пĕвери пулă та антăхса çитет, – хушса хучĕ Вова шăллĕ.

– Ăшши те кирлĕ, ачасем, – тет шкул директорĕ. – Утă çулса типĕтмелле. Çырласем, тырăсем пиçеççĕ. Халĕ шăпах çуллахи вăхăтăн вăтам кунĕсем тăраççĕ. Ӳсен-тăрансен чечекĕсем тăкăнаççĕ, çимĕçĕсем пулаççĕ. Авă шкул пахчинчи çăкасем çинче вĕлле хурчĕсем епле сĕрлеççĕ, пыл пухаççĕ.

– Полина Карповна, мана калама юрать-и? – ирĕк ыйтрĕ Вова Карпов. – Шкулта зоологи вĕреннипе çакна

пĕлетпĕр. Çак уйăх вĕçнелле кайăксем юрлама пăрахаççĕ, тĕк тăкаççĕ. Теприсем иккĕмĕш пусалăх чĕп кăлараççĕ. Хăш-пĕрисем, аталаннă чĕпписемпе пĕрле ерипен-ерипен кăнтăралла куçаççĕ. Кураксем пек туххăмра мар. Мулкачкуян вара виççĕмĕш хут çура тăвать.

– Эпир вăрман хĕрринчи урамра пурăнатпăр, – чăтса тăраймарĕ пĕр хĕрачи. – Тепĕр чухне утă уйăхĕнче кăмпасем тухаççĕ. Упа кăмпапа çырла çисе самăрланать, хĕлле валли çу пухать. Пăши вăкăрĕн туратлă-туратлă мăйраки ÿссе çитет. Пăрушĕсем те пысăкланаççĕ, амăшĕ хыççăн сиккелесе çÿреççĕ. Анчах вĕсене, çараскерсене, ÿпре-пăвансем питĕ аптăратаççĕ.

– Тыркассем çывăрма выртаççĕ. Вĕсен йăвинче тырă туллиех ĕнтĕ, – сăмахне вĕçлерĕ Вова.

– Çапла, çанталăкшăн шăрăх вăхăт, халăхшăн йывăр кунсем çитрĕç, – калаçăва пĕтĕмлетрĕ вĕрентекен. – Малашне уяр кунсем сахалтарах пулмалла теççĕ. Уй-хирте нумай ĕçлеме тивет.

Тавралăх шăпланчĕ. Ачасем каллех пахчана тухрĕç. Хĕвел пăхать. Вĕçен кайăксем чĕвĕлтетме тытăнчĕç.

«Вова Карпов питĕ йĕркеллĕ ача, – шухăшлать шкул пуçлăхĕ, ун çине ăшшăн пăхса. – Уçă кăмăллă, çилленмесĕр... тавлашма юратмасть. Ерипен те шухăшласа пуплет. Ваттисем... аслисем каланине итлет, хытă тăнлать. Калаçнă чух, юлташне куçĕнчен сăнаса пăхать».

## Хурлăхлă хыпар

Карповсем килĕнче ирех вăранчĕç.

Çумăр лăплансанах Вовăпа шăллĕ хире тухрĕç. Çĕлен уйĕнче, Ентер ялĕн çурçĕр енче, çынсем ыраш выраççĕ. Вун-вуник çулхи ачасем те йышлă. Вĕсем çул хĕррипе вырса пыраççĕ. Варринче Полина Карповна. Çивĕч çурласем парка ыраш хăмăлне кăчăрт-кăчăрт касаççĕ. Хыçра кĕлте хыççăн кĕлте, тĕмсем юлса пыраççĕ.

Вовăпа шăллĕ те хăвăрт та тирпейлĕ ĕçлеççĕ. Пĕчĕккисем пучах пухаççĕ. Кашниех хутаç çакнă.

– Полина Карповна хытă вырать. Пирĕн атте пекех.

– Эпир те çынсенчен юлмăпăр, шăллăм.

– Учительница, кунти тырра мĕншĕн машинăпа вырмаççĕ? – кăсăкланчĕç ытти вĕренекенсем.

– Вăрлăх валли алăпа выратпăр. Хăш-пĕр вырăнсене машинăпа выраççĕ, – пĕлтерет вĕрентекен. – Авă Майдан уйĕнче жнейка ĕçлет.

Ачасем хыçалалла çаврăнса пăхрĕç. Ялăн кăнтăр енче икĕ лаша кӳлнĕ жнейка ваkкасах хăлаçланать, тырра çулсавырса тăкать. Ун хыççăн çынсем кĕлтесем çыхса пыраççĕ, çĕмелсем купалаççĕ.

– Ачасем, эсир пĕлетĕр-и? Ĕлĕкхи ватăсем çурлана мухтаса юрă та хывнă. Акă вăл:

Пĕчĕкçеççĕ пĕкече

Пĕтĕм хире пуçтарать.

– Малашне тыр-пула веçех машинăпа вырăпăр. Юррисем те вĕсем çинчен пулĕç.

Вăхăт каçалла сулăнчĕ. Вăрмантан пĕр хĕрарăм тухрĕ, мăн çулпа кунталла килет. Хăй ывăннă пулас: ерипен утать. «Ку çын хамăр тăван тавраш мар-ши? – шухăшлать Вова, чи хĕрринче ĕçлекенни. – Темле палланă çын пек туйăнать». Ют çын ĕçлекенсем патне çывхарчĕ те:

– Кунта Карповсене пĕлекен пур-и? – терĕ ачасем патне çитсен.

– Пур, – илтĕнчĕç сасăсем.

Вова çурлине хулпуççи çине хурса хĕрарăма хирĕç утрĕ. «Тăванах пулас, – хĕпĕртерĕ вăл. – Ырă хыпарпа пултăрччĕ. Шăм-шак çӳçенет темле». Карпов хĕрарăма сывлăх сунчĕ, тинкерсе пăхрĕ. Ун умĕнче илемлĕ сăн-питлĕ ют çын тăрать. Вăтăр çулсенче пулĕ. Куçĕсем хĕрелсе тăртаннă.

– Сирĕн ялта Назар Ваççукĕ ятлă çын пулнă-и? – ыйтрĕ кутамкка çакнă хĕрарăм.

– Пурччĕ. Халь вăл вăрçăра. Эпĕ унăн ачи пулатăп.

– Аван.

«Ăçтан пĕлет-ха ку ют хĕрарăм ман аттене? Е темскер инкек сиксе тухнă-и? Хăвăртрах пĕлесчĕ».

– Эс кам пулатăн вара? Ăçти çын?

– Эпĕ кӳршĕри Нухрат ялĕнчен. Ман мăшăр сирĕн аçупа пĕрле вăрçа кĕнĕ. Халĕ вăл, йывăр аманнăскер, Çĕперелле иртсе кайрĕ. Мускавран телеграмма янă та...

– Ман атте...

– Ан васка, ачам. Темле аванах мар хыпар. Эсĕ тата ытла хăраса ан ӳк. Карпов хытă аманчĕ тет. Бомба ӳкнипе.

– Атте вилнĕ тет-и?

– Çапла пулас, ачам. Çав вырăнтисем пурте пĕтрĕç тет. Пирĕн арçын кăшт аяккарах пулнă.

– Ку ĕç хăçан пулнă вара?

– Пĕр эрне каялла.

– Çитет. Урăх ан кала.

Вовăн пуç çаврăнса кайрĕ. Çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ. Хăмăл каснипе якалнă çурли урапа йĕрне ӳкрĕ. «Атте вилнĕ! Халĕ пирĕн мĕнле пурăнас? Ку хуйха анне епле чăтса иртерĕ? Çук, ăна пĕлтерместĕп. Никама та каламăп. Атте чĕрĕ тесе пурăнăпăр».

– Ан хуçăл, ачам. Ман мăшăрăн та алли-урисем шапшурах, гипсланă. Юсанасси темле çав.

– Эсĕ те ывăннă пулĕ, – терĕ Карпов, куçĕсене шăлашăла.

– Тавах, ывăлăм. Киле хуллен çитес. Пирĕн бригада паян кая юлса пулнă урпана вырса, пăрçине çулса пĕтерет. Ĕçе çитмелле.

– Кĕрсе чăрманнăшăн тав. Иртсе çӳренĕ чух çакăр-тăвара кĕр.

– Сана курман пулсан, эпĕ ял Советнех çитсе каласшăнччĕ.

Вова кӳршĕ ял хĕрарăмĕн сăмахĕсене илтмерĕ. Хăлхисем чиксе кайрĕç, пуç кашлама тытăнчĕ. Кивĕ çăпатине тирĕннĕ сарă хăмăл пĕрчисем вĕлт-вĕлт çиçсе илчĕç. Юнашар выртакан çурлине асăрхарĕ. «Кукăр çурла. Атте унпа салтакран килнĕренпех тырă вырнă. Халĕ мана юлчĕ. Ман телее вăл пысăк та кăнттам мар, меллĕ те çăмăл. Вăрçă пуçланиччен атте ăна хăех çивĕчлесе хучĕ». Вова пуçне çĕклерĕ те çынсем çине пăхрĕ. Вĕсем пурте çул çинелле пăхса тăраççĕ, тем пуплеççĕ пулас. Шăллĕпе юлташĕсем кунталла утнине асăрхарĕ, хуллен вĕсене хирĕç утрĕ. Пурте хуйхăллă.

– Мĕн пулчĕ, Вова? Ку хĕрарăм хуйхăллă хыпар пĕлтерчĕ-ши?

– Çук, нимех те пулман, – пĕлтерчĕ Вова. Унтан сăмса тутрипе пит çинчи тарне, кушăрханă тутине шăлса илчĕ. – Вăрçăри пĕр юлташĕнчен атте салам калама хушса янă. «Нимĕçсене парăнмастпăр, вăйлăн пыра-пыра çапатпăр», – тенĕ.

Ана çине çитсенех Вова кĕлте тĕмĕ çине ларчĕ, пуçне чикрĕ.

– Эпĕ кăшт выртса канам-ха, – терĕ те куçне хупсах выртрĕ. Унăн куççулĕ çĕре тумларĕ.

– Карпов эсĕ питĕ ывăннă, киле кайсах канас пулать, – канаш пачĕ вĕрентекен.

– Ывăнмаллăх пур ĕнтĕ, – пиччĕшĕ умне чĕркуçленнĕ май хуравларĕ Карпов – кĕçĕнни. – Вăрçă тухнăранпах пĕр кун та ĕçрен юлман.

– Вăл иртсе каять, – ăнлантарать Полина Карповна, – малтанлăха, вырма хăнăхиччен, манăн хамăн та алăсем шыçрĕç.

– Çапла, ачасем, çĕр ĕçĕ çăмăл мар, – хушса хурать ватă хĕрарăм.

– Кашни ĕçех хăйне кура йывăр, хăйне евĕр илемлĕ, – тӳрлетрĕ шкул директорĕ.

– Тен, Вовăна больница леçмелле пулĕ? Е ялти фельдшерицăна чĕнес.

– Çук, эпĕ чирлĕ мар, – пĕлтерчĕ Карпов. – Кăштах ывăнтăм. Часах иртсе каять.

Каç пулса тĕттĕмленчĕ. Киле çитнĕ-çитменех амăшĕ ачисене хирĕç тухрĕ.

– Анне, ыран ыраш вырса пĕтеретпĕр: хавхаланса пĕлтерет кĕçĕн ывăлĕ. – Вова виçмине ака тума каять. Эпир сĕлĕ кĕлтисем çыхма. Бригадир çапла каларĕ.

– Аçу çыру çырнă, ачасем, – савăнăçлăн пĕлтерчĕ амăшĕ, ачисен сăмахĕсене илтмĕш пулса. – Акă, вуласа пăхăр.

– Чăнах-и, анне! – тапăртатса илчĕ Вова, виç кĕтеслĕ çырăва тытса. – Анчах ăна уйăх пуçламăшĕнчех çырнă. Паян вара июлĕн вăтăрмĕшĕ.

«Смоленск таврашĕнче çапăçатпăр, – хăш-пĕр йĕркесене саспах вулать Вова. – Киле халех пырассине шанма çук. Тăшман хытă талпăнать. Çапах унăн шалчи тулатех. Сывă пулăр. Лайăх пурăнăр».

Вова çĕрĕпех канлĕн çывăраймарĕ. Кантăк витĕр чылайччен пăхса выртрĕ, шухăша кайрĕ: «Аттен юлташĕ аманни эрне кăна. Ку çыру вара виçĕ эрне таçта выртнă. Кӳршĕ ял хĕрарăмĕ калани йăнăш хыпар пултăрах. Е атте вилнех пулсан... Çук, тем тесен те атте сывах. Вăл ăста командир».

Çĕрле. Тĕттĕм. Таçта аякра çиçĕм çиçсе илчĕ. Аслати чылай хушă вăраммăн кĕмсĕртетсе пычĕ-пычĕ те хăнтăрхăнтăр! турĕ. Хăлхана çурас пек саспа питĕ хăвăрттăн чантлатса ячĕ: таçта тĕтĕм йăсăрланса тухрĕ, вут-хĕлхем хыпса илчĕ. Унтан татах кăлтăртатса, халтăртатса е çинçе саспа чанкăлтатса тӳпе урлă чупа-чупа каçрĕ, йĕри-тавра кукăр-макăр çиçĕм салатрĕ, йăл-ял, чăлт-чалт турĕ. Куçа йăмăхтарса пĕр чарăнмасăр çиçĕм çиçет, чуна çӳçентерет.

## Вĕрентнĕ вăкăрсем

Кăнтăрлапа шкул ачисем колхоз правленине пырса кĕчĕç, председателе сывлăх сунчĕç те вăрăм сак çине ларчĕç. Хăйсем вăрттăн тем çинчен пăшăлтатаççĕ, анчах пуçлăха сăмах хушма хăяймаççĕ. Домна Егоровна вĕсене сисрĕ те ăнланчĕ, хăй сăмах хушрĕ.

– Ну, ачасем, мĕнле ĕçлетпĕр? – тет вăл амăшĕ пек йăвашшăн. – Паян мĕнле иртерех ячĕç тата?

– Вăрман хĕрринчи урпана вырса пĕтертĕмĕр, халĕ апата килтĕмĕр, – пĕлтерчĕç ачасем.

– Маттур, маттур, ачасем, – мухтать вĕсене председатель. – Ял халăхĕ сире чĕререн тав тăвать, малашне те колхоз ĕçне ан манăр, пулăшăр.

Ачасем хаваслансах кайрĕç, йăл та йăл кулаççĕ, пĕр-пĕрин çине савăнса пăха-пăха илеççĕ.

– Эпир санран пĕр сăмах ыйтасшăн, Домна Егоровна.

– Тархасшăн калăр, итлетĕп.

– Эпир, мĕн вă-ă-к-ăр... – ниепле те калаймасть пĕр селĕпрех те тытăнчăклăрах калаçакан пĕчĕкрех ача, улттăмĕш класра вĕренекенскер.

– Мĕнле вăкăр, мĕн пулнă вĕсене? – тĕпкĕчлет пуçлăх.

– Эпир вăкăрсемпе хăш-пĕр хĕсĕр ĕнесене кӳлме вĕрентесшĕн, – ăнлантарчĕ тепри. – Часах кĕрхи ака пуçланать, анчах колхозра лашасем çитмеççĕ.

– Пире бригадир та вĕсене вĕрентме чармасть, – пĕлтерет виççĕмĕшĕ.

– Акă мĕн иккен, тинех ăнлантăм. Анчах колхоз вăкăрĕсемпе уй-хир бригадирĕсем мар, ферма пуçлăхĕ хуçа, унпа калаçас пулать.

– Ватă çынсем вăкăр хăмăчĕ-ĕнерчĕкĕсене те туса хатĕрлерĕç. Вĕсене мĕнле кӳлмеллине, туртма епле хăнăхтармаллине эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ: Украина ачисем каласа пачĕç. Унта тахçанах вăкăрсене кӳлсе çӳреççĕ, тет.

– Аван, ачасем, пит аван: Эпĕ хам та ун çинчен тахçантанпах шухăшласа çӳретĕп, – тет председатель. – Анчах çынсем çукки чăрмантарчĕ, никама та хушаймарăм.

– Эпир ун пирки тахҫанах шухăшларăмăр, анчах правленинчен ыйтмасăр хăтланни аван мар пек туйăнчĕ. Пире, кирлĕ пулсан, ватăсем те пулăшĕҫ.

– Пурте пĕрле пухăнса вĕрентме шутлатпăр.

Ачасем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла васкасах каласа пачĕҫ. Львова вĕсене хăй ăсĕнче кула-кула тимлĕн итлесе ларчĕ.

– Юрĕ, ачасем, – терĕ председатель, – кăмăлăр пулсан, ферма кайăр та хăш вăкăрне епле, хăҫан ĕҫлеме хăнăхтармаллине калаҫса татăлăр. Ĕнесене халлĕхе ан тĕкĕнĕр, вăкăрсемпе ҫитĕ. Вунпĕр вăкăра ĕҫе хăнăхтарсан тем пекех аван пулĕччĕ. Ырă канашшăн тавах, ачасем. Малашне те ҫапла килсе ҫӳрĕр, пирĕнпе канашлама ан шикленĕр.

Пилĕк-ултă ача тĕрткелешсе чупса тухрĕҫ.

Савăннă ачасем килĕсене кĕмесĕрех фермăналла вĕҫтерчĕҫ. Ҫул тăршшĕпех шакăлтатса калаҫса пычĕҫ.

– Вăт, каларăм сире, ĕҫ тухать тесе.

– Лайăх ҫын ҫав вăл, пирĕн Домна Егоровна.

– Япăх ҫын пулсан, халăх ăна председателе суйламасть те.

– Куштан ҫынсем анчах «Качака Тюмми» тесе тăрăхлаççĕ.

– Ял халăхĕ хисеплесе чĕнет: «Домна Егоровна», – тет.

– Колхоза лайăх ертсе пынăшăн ăна района та илесшĕн тесе калаççĕ. Анчах Львова хăй ялтан каясшăнах мар иккен.

– Вĕсене, Яковлевпа иккĕшне, халăх ялтан ямасть ĕнтĕ. Ял халăхĕпе ĕҫлеме, вĕсене ертсе пыма та ҫăмăл мар пулас. Пурте пултарас та ҫук.

– Вăкăрсене кӳлме вĕрентресси ҫăмăл ĕҫ мар, – каласа парать Украина ачи. – Питĕ асăрханулла пулмалла. Алăурана амантма пулать. Пĕррехинче эпир пиччепе иксĕмĕр урампа пыратпăр. Вăкăр пĕррех аяккалла туртăнчĕ те пĕр кил хушшине сиккипе кĕрсе кайрĕ. Юрать-ха хамăр сиксе юлма ĕлкĕртĕмĕр. Хапха алăкне чутах йăтса антаратчĕ. Унтан урапи-мĕнĕпех сарайне ҫĕмĕрттерсе кĕчĕ. Сулхăнра хашкаса ҫех тăрать.

– Эпир те ҫырманалла карлаттарса антăмăр та пĕвене кĕрсе кайрăмăр. Юрать-ха шывĕ тарăн мар. Вăкăрĕ чĕркуççи

таран шывра тӑрать те тӑрать. Хамӑр урапа ҫинче лара паратпӑр. Аран-аран тухрӑмӑр. Пӗве хӗрринчи ачасем хырӑмне тытса ахӑраҫҫӗ.

Вӗренекенсем пӗр хушӑ шӑпланчӗҫ, кашниех хӑй шухӑшӗпе кӑсӑкланчӗ.

– Ҫитӗ ачасем. Авӑ ферма пуҫлӑхӗ кунталла килет.

Вӗренекенсем ферма патне савӑнӑҫлӑн ҫитрӗҫ. Хырӑм выҫнине те, ывӑннине те маннӑ вӗсем, хӑвӑртрах хӑйсен кӑсӑклӑ ӗҫне тытӑнасшӑн.

– Пӑхӑр-ха, сар кайӑксем ҫерҫипе ҫапӑҫаҫҫӗ, – пӳрнипе тӗллесе кӑтартать пӗр ачи. – Карта ҫинче ларакан ват ҫерҫи айӑпа кӗнӗ иккен.

Ачасем пахча еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Икӗ сар кайӑк ҫерҫи патне черетлӗн вӗҫсе пыраҫҫӗ те урисемпе тапаҫҫӗ, сӑхса илеҫҫӗ. Ҫерҫийӗ лӑпкӑнах ларать, шикленмест пулас. Чылай хушӑ ҫапла кӗрешрӗҫ-кӗрешрӗҫ те пӗчӗк илемлӗ кайӑксем хӑмла ҫырли хушшине кӗрсе ҫухалчӗҫ. Лӳппер те ывӑннӑ ҫерҫи кӑна пӗр тапранмасӑр ларать, пӑшӑрханать.

– Вӑрманта утӑ ҫулнӑ чухне эпӗ те чакакпа шӑнкӑрчсем ҫапӑҫнине асӑрхарӑм, – пӗлтерет тепри. – Темиҫе шӑнкӑрч пӗр пуҫтах чакака ҫӳлте нумай хӑваласа ҫӳрерӗҫ. Ула чакак тарать, лешсем пӗр шит юлмаҫҫӗ, тӑшманӑн вӑрӑм хӳри ҫумне пыра-пыра ҫулӑнаҫҫӗ.

Кӗрхи ҫанталӑк хӑвӑрт улшӑнать. Каҫхине таҫта аякра ҫиҫӗм ҫиҫрӗ. Кунта уяр та лӑпкӑ. Тӳпери ҫӑлтӑрсем ахӑлтатса кулаҫҫӗ, куҫӗсене йӑл-йӑл вылятаҫҫӗ. Алтӑр ҫӑлтӑр та аллине ҫупать, ҫиҫӗме витлет тейӗн. Ҫук, ҫӑлтӑрсем кулмаҫҫӗ, савӑнмаҫҫӗ. Вӗсем ҫиллес, вут чӗлхепе ятлаҫаҫҫӗ. Анӑҫри тӑшмансене юнаса вилӗм сунаҫҫӗ.

Фермӑра пулнӑ ачасем ҫӗрӗпех канлӗн ҫывӑраймарӗҫ. Тӗлӗкре те вӑкӑрсемпе тӗрмешрӗҫ. Урапана туртма, суха касси хӗррипе утма хӑнӑхтарчӗҫ пек.

x x x

Икĕ çулхи кӳлме вĕрентнĕ вăкăрне çавăтса, Вова ĕçе васкарĕ. Ял варринчи çырма хĕрринчи шкул тĕлне çитсен чашлаттарса çумăр çуса ячĕ. Хушăран кăштах тамалать те вĕтĕртетме тытăнать.

Çил вăйлăланчĕ. Ватă çил амăшĕ темшĕн часах кăмăлсăрланчĕ, ачисене тухăçалла хăвалама, хĕтĕртме пуçларĕ. Çил каччисем ытарайми тумлам-тусĕсене ытамларĕç, хĕпĕртерĕç. Куçа курăнми çуначĕ шуç тупанĕсем çине лартса, ши-ши-уу-ӳ! тесе шăхăрса инçетелле çул тытрĕç, юрла-юрла куçран çухалчĕç. Ем-ешĕл вăрманти кăсăя, кунта чĕпĕ кăларма килнĕскер, вĕсем çине тинкерсе пăхать, сăпайлăн сиккелет, вĕлт-вĕлт çаврăнать, хупă çинчи хуртсене сăхать, чинк-чинк туса илет.

Çумăр часах чарăнчĕ. Вова хирелле çул тытрĕ. Вăрман хĕрринче шкул ачисем йышлăн тĕрмешеççĕ, тункатасем кăлараççĕ. Плугсем сухалайман вырăнсене кĕреçепе касаççĕ. Хăйсем ĕшеннĕ, çапах савăнăçлăн шăкăлтатаççĕ.

– Кун пек пысăк юман тункатине вăрçă хыççăн машинăсемпе тăпăлтарăпăр акă.

– Сухине те тракторпа сухалĕç.

– Вăхăт çитĕ. Вăрçă пĕтсен пурнăç та лайăхланĕ.

– Халĕ плугсемпе ĕçлеме çăмăлтарах, – ассăн сывласа пĕлтерет Карпов. – Атте мана вунă çулта чухнех сухана илсе каятчĕ. Суха пуçне тытса пыма, ай-ай! питĕ йывăр, тертлĕ. Вăй кирлĕ.

– Вăрçăри салтаксемпе хулари рабочисене те çăмăл мар.

Вăкăр-ĕнесемпе плугсене çаклатса Вовăпа юлташĕсем, çеремлĕ çĕре çĕтме тытăнчĕç. Мăйракаллă выльăхсем пĕрин хыççăн тепри ерипен утаççĕ, хăш-пĕр нӳрлĕрех вырăнта тапса туртаççĕ. Тимĕр плугсем çереме çаврăрса пăрахса, вăрăм касăсем купаласа, шăрçаласа пыраççĕ. Хуп-хура касă йĕрĕсем шыв çинче хум чупнă тата унăн кăтрисем вылянă пек курăнаççĕ. Унăн çийĕпе хĕвел шевли вылять, тӳпере ташлакан тăрие илĕртет, сухаçăсене ыră сунать.

– Çанталăкĕ кансĕрлерĕ-çке, – вăкăрне хулăпа хăратнă май пуплет Вова. – Халĕччен кĕр акине те, тыră вырса та пĕтермеллеччĕ.

– Виҫӗм кун, йӗпе вар ҫывăхӗнчи улттăмӗш уйра, – калаҫава хутшăнать тепри, хӗсӗр ӗнепе сухалаканни, – ут урисем путма пуҫларӗҫ. Касă хыҫҫăн, вӗсем пуснă вырăнсенче, шыв тухма тытăнчӗ. Аран-аран сухаласа-акса пӗтертӗмӗр.

– Иртнӗ уйăхра Ентер улăхӗнчи утта виҫҫӗ салатса пухрăмăр. Ҫапах типӗтсе купа турăмăр. Пирӗн звено та ял пуҫӗнчи урпана нушаланса пуҫтарчӗ. Хăш-пӗр вырăнти ҫӗр лачăртатса урпана нушаланса пуҫтарчӗ. Хăш-пӗр вырăнти ҫӗр лачăртатса путатчӗ те шыв тухатчӗ. Ҫавăнпа урасем айне кивӗ чус хăма татăкӗсем пăрахса хăтлантăмăр. Темӗн те туса пăхрăмăр. Вырнă тыррине ик-виҫ кун ҫилпе кушăхтартăмăр, кайран тин кӗлте туса ҫыхрăмăр. Кӗлтисене турттарнă чухне те урапа кустăрмисем путса анатчӗҫ. Кун пек йӗпе ҫул сайра пулать. Ҫанталăкӗ паян кăмăлне уҫрӗ тата.

– Пилӗк вăкăрпа тата икӗ ӗнепе тӗрмешсех кунти вунă гектар ҫӗре икӗ эрне сухаларăмăр. Паян пӗтеретпӗрех. Утсем вăл вăхăтра кӗлте турттарчӗҫ, патшалăха тырă леҫрӗҫ.

Тӳпери тăри ҫамрăксем хыҫҫăн кунтăксемпе тырă акса пыракан шап-шур сухаллă ватăсене саламларӗ. Кӗрхи тулă аяккалла пӗрчӗн-пӗрчӗн сирпӗнет, ана ҫине ӳкет. Пӗр ҫамрăкӗ икӗ лашапа сӳрелесе пырать, хушăран тимӗр сӳрисене тасатать, учӗсене пушăпа хăратса илет.

Чулкаҫ ҫырми леш енче ӗҫлекен шап-шурă кӗпеллӗ хӗрарăмсем аякранах курăнаҫҫӗ. Ача-пăчасемпе ватăсем те чылай. Вӗсем пурте вырса тăкнă паккуссене пухса кӗлтесем ҫыхаҫҫӗ, тӗм туса купаласах пыраҫҫӗ. Пысăккисем каннă самантра вӗтӗр-шакăр ачасем хăмăл урлă сиккелеҫҫӗ, чаштăртаттарса чупаҫҫӗ. Йӗри-тавра шăтăклă-путăклă хыр йӗкелӗ евӗр ҫӗмелсем. Тăпăл-тăпăл кӗлтисем сарă хӗрӗн яштака кӗлетки пек курăнаҫҫӗ. Икӗ лаша кӳлнӗ жнейка малта хăлаҫланса шуҫать, ӳснӗ тырра ҫивӗччӗн касать.

## Кĕр илемĕ

Çурла уйăхĕ вĕçленсе пырать. Пуян вăхăт вăл: çакăрлă, тараватлă. Анчах ку илеме хăрушă вăрçă тĕксĕмлетрĕ, йывăрлатрĕ. Апла пулин те Ентер ачисем аслисемпе пĕрле ырми-канми ĕçлеççĕ, пĕтĕм вăйран тăрăшаççĕ. Акă паян та хирте çынсем туллиех. Хăшĕсем тырă выраççĕ, теприсем авăн çапаççĕ. Суха туса кĕр тырри акнине те куратăн. Çамрăксен тепĕр ушкăнĕ (ăна фронт бригади теççĕ) кунсеренех патшалăха тырă леçет.

Авă лере, колхоз садĕнче, ачасем йышлăн тĕрмешеççĕ. Мĕн тăваççĕ-ши вĕсем?

– Ачасем, – асăрхаттарать шкул директорĕ. – Халĕ эпир кая юлса пиçнĕ викторипе хăмла çырлине пуçтаратпăр. Тата ир пулакан панулмисене татмалла. Анчах хĕллехи сорчĕсене ан тĕкĕнĕр. Вĕсене тепĕр уйăхран пуçтарма юрать. Ытти çимĕçсем пирки çул çинчех каларăм. Ăнланмалла-и?

– Ăнланмалла. Пиçмен шăлан çырлисене те татмастпăр.

– Апла пулсан, ĕçе тытăнăпăр. Хăш звенон мĕн тумалли сире паллă.

Уяр кун пуçланчĕ. Ытарма çук кĕрхи капăр çулçăчиперкксем çине вĕçĕмсĕр пăхса тăрас, алăра вылятас килет.

– Анчах халь вăхăт сахалтарах çав, – хурлăхлăн каларĕ Вова, – çутçанталăк илемĕпе йăпаннă май. – Ĕçе хăвăртрах пĕтерĕпĕр. Вăрçă хыççăн тăван тавралăх тата илемлĕрех те пуянрах пулĕ.

Ачасем каллех ĕçе пикенчĕç. Арçын ачасем панулмисем татаççĕ, хĕрачасем ещĕке тултараççĕ. Пиçсе çитнĕ пан улмисем! Саррисем, симĕссисем, хĕрлĕреххисем те пур.

– Эх! Ку улма тутлă та кĕрпеклĕ пулчĕ-çке! – сурчăкне çăта-çăта калать пĕри шултра çимĕçсене асăрхануллăн хурса.

– Мичурин сорчĕ вăл. Ку ещĕксене веçех фронта яраççĕ. Хăшĕсене аманнисем валли госпитале леçеççĕ.

– Леш звено шăлан çырли нумай пухнă, – пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ тепри. – Вăл аманнă салтаксене питĕ сиплĕ теççĕ.

– Вунă килограмм ытла.

– Хăярпа помидор та самаях пуҫтарнă. Кĕр мăнтăр теҫҫĕ ҫав.

– Веҫех салтаксене мар, хамăр валли те хăвармалла пулĕ, – тўрккессĕн хирĕҫлерĕ Хурчка, Кавĕрле Мирунĕн кĕҫĕн ывăлĕ, ачашскер, – хамăр та аран-аран...

– Эсĕ, мемме, мĕн яланах хирĕҫле калаҫатăн, – ҫивĕччĕн касса татрĕ Вова шăллĕ. – Утă ҫулнă, тырă вырса авăн ҫапнă чух – эсĕ ҫук. Вăрҫă пуҫланнăранпа та хире тухса курмарăн. Халь ҫырла-панулми ҫиме килтĕн.

– Мĕнле намăс мар сана ҫавăн пек калаҫма?

– Вунпилĕк ҫула ҫитрĕн, ҫаплах пиллĕкмĕш класра вĕренетĕн.

Улмуҫҫи ҫинчи пĕр ача чăтаймарĕ, кушак пек хăвăрт сиксе анчĕ те Хурчка патне пычĕ. Ик хăлхинчен ярса тытса, ҫўлелле ҫĕклерĕ.

– Пăх анăҫалла, Услап! Мускав курăнать-и?

Ҫав хушăра ик-виҫ ача Хурчкана ҫурăмĕнчен тўплеттерсе илчĕҫ.

– Учительница, мана хĕнеҫҫĕ! – ҫухăрашать Миронов.

– Ан ачашлан, сана кам хĕнет? Кала, Мускав куртăн-и?

– Тархасшăн ярăр. Курап. Акă курăнать!

– Апла пулсан аван. Анчах асту: Мускав пулсан, эпир те пурăнăпăр, тăшмана ҫĕнтерĕпĕр.

Кахал ачана ҫĕре антарчĕҫ, тепре кутĕнчен тапрĕҫ.

– Малашне туслă пурăнăпăр. Урăх пĕр ĕҫрен те ан юл, – канаш пачĕ Вова.

Хурчка, хыттăн кăшкăра-кăшкăра, сиккипе килелле тарчĕ.

– Ăнлантăм, анчах пирĕн атте... – ҫĕхрешсе пычĕ вăл. – Хĕрлĕ Ҫар ҫапах ҫĕнтерет. Юмăҫ та ҫапла каларĕ.

Ачасем ахăлтатса кулса ячĕҫ, чышкисене кăтартрĕҫ.

– Вĕсен ашшĕ-амăшĕсем кулак пулнă, Ҫĕпĕре янă теҫҫĕ.

Полина Карповна кунталла утса килчĕ. Вăл та тарланă.

– Мĕн пулса иртнĕ кунта?

Ачасем пĕр-пĕринпе ăмăртсах мĕн пулнине каласа пачĕҫ. Хăйсем хаваслă, кулаҫҫĕ.

– Тахҫанах ҫапла кирлӗччӗ ӑна. Пире намӑс кӳрет. Тарӑхса ҫитрӗмӗр.

– Апла харкашни, тӳпелешни аван мар, – ӑс парать вӗрентекен. – Малашне ун пекки ан пултӑр.

– Эпир ӑна темех туман. Вӑл хӑй качака путекки пекех ҫӗхӗрет.

– Ну ҫитӗ, Карпов, эсӗ кунта асли пулатӑн, – хушрӗ шкул директорӗ. – Паян ҫак ӗҫсене вӗҫлӗпӗр. Эпӗ кӑвайт патне ҫитем. Тепӗр виҫӗ кунтан шкула кайма вӑхӑт ҫитет. Ҫимӗҫӗ те самаях пухӑнчӗ. Кӑҫалхи пек тупӑш халиччен илмен теҫҫӗ.

Вӗрентекен малалла утрӗ. Лере, ҫырма хӗрринче, ачасен тепӗр ушкӑнӗ тӗрмешет. Арҫын ачасем чие-улмуҫҫи ҫинчи хурт-кӑпшанкӑсене, вӗсен ҫӑмартисене пуҫтараҫҫӗ. Ҫырмари пӗр вырӑна купаласа ҫунтараҫҫӗ. Вӑйсӑр тӗтӗм улӑх тӑрӑх саланать.

Лӑпкӑ кун. Илемлӗ вырӑн. Сад йӗри-тавра ҫамрӑк хурӑнсем йышлӑн ӳсеҫҫӗ.

Вова пӗр пӗчӗк ҫулҫине алла илчӗ те ун ҫине кӑмӑллӑн тинкерсе чылайччен пӑхса тӑчӗ.

Каҫалапа шкул ачисем тулли ещӗксемпе бидонсене склада леҫрӗҫ.

х х х

Авӑн уйӑхӗ пуҫланчӗ. Ачасем ирех шкулалла чупаҫҫӗ, хӗпӗртесе шӑкӑлтатса калаҫаҫҫӗ, ахӑлтатса кулаҫҫӗ, каялла ҫаврӑнса пӑха-пӑха утаҫҫӗ. Шап-шур пиртен ҫӗленӗ пӗчӗк сумкисене хулпуҫҫи урлӑ ҫакса янӑ. Унта кӗнеке-тетрадьсем, пӗчӗкҫӗ йывӑҫ арча тата пӗр татӑк ҫӑкӑр е ик-виҫ улмапа чӑкӑт тури. Хытӑрах утнӑ-чупнӑ чухне сумкисене хӑрах аллипе тытаҫҫӗ, ҫапах та ҫурӑм ҫинчи сумкӑ силленет, арчари перо-кӑранташсем шакӑртатса пыраҫҫӗ.

Ачасем пурте таса кӗпесемпе, урисенче ҫӗнӗ ҫӑпатапа шурӑ пуртенкке, чылайӑшӗ мӑйӗсене хӗрлӗ галстук ҫыхнӑ. Карттуссем тӑхӑннӑ, тутӑрсем ҫыхнӑ, анчах атӑ-пушмак тӑхӑннисем пӑт-пат кӑна. Акӑ пӗр хӗрарӑм ачине ҫавӑтса

пырать. Ачин аллинче пахчари шурă кĕрен, сарă кăвак чечексем, ахăртнех хăйĕн малтанхи учительницине валли пулас. Çамрăк амăшĕ те малтанхи ывăлĕ ӳссе шкула каймалла пулнишĕн чĕререн савăнать. Вĕсем хыççăн шур сухаллă ватă çын шĕшкĕ туйипе хытă çула таклаттарса мăнукĕпе юнашар утать, иртнине аса илет.

Ун чухне вăл вунсакăр çулхи çамрăк пулнă, халĕ вара – тăхăрвунна çывхарать.

Малта, çĕр кĕпер тĕлĕнче, пĕр ушкăн вĕтĕр-шакăр ача утать. Часах вĕсене тепри хуса çитрĕ, хăй савăнăçлă, пичĕ хĕрлĕ, аллисем шурă, таса. Унăн вĕр çĕнĕ сумки çине виçĕ йĕрке туса «Тульă, сумкă, Трахвин» тесе чернилла кăранташпа çырнă. Ахăртнех, пĕрремĕш хут шкула чупать-тăр: саспаллисем чалăш-чĕлĕш кукăртнинчен, унти йăнăшсенченех паллă ĕнтĕ.

– Паян мĕнле кун, ачасем? – ыйтрĕ аслăрах ачи ыттисенчен.

– Парттăсем йышăнмалли кун.

– Тунтикун. Кĕрхи уяв.

– Пирĕншĕн Çĕнĕ çул, – илтĕнчĕç сасăсем.

Ачасем урăх пуплемерĕç, шарламарĕç. Хыçалти ачи кăна сăмсине нăш-нăш туртса илчĕ, юлташĕсенчсен иртсе мала тухрĕ те:

– Вăрçă вăхăтĕнче чи малтанхи хут вĕренме пуçлатпăр, – терĕ, ыттисемпе юнашар утма тытăнчĕ. – Мана паян анне çапла каларĕ.

Ку сăмахсене илтсен, пурте хăвăртах шăпланчĕç, пусĕ сене усрĕç, ассăн сывласа илчĕç. Шкул карти тĕлĕнче вĕсене аслăрах классенче вĕренекенсем кĕтсе илсе малалла ертсе кĕчĕç.

– Паян та митинг пулать-ши? Халĕ вĕсем тăтăшах пулкалаççĕ.

– Митинг мар, ачасем, линейка пулать. Тепĕр майлă утренник теме юрать.

Пĕчĕккисем ку сăмахсене ăнланаймарĕç, хăйсене евĕр тавçăрчĕç. Пуху пулать, çынсем пухăнаççĕ: калаçаççĕ. «Пур-

нăç», «вилĕм» сăмахсене асăнаççĕ. Сывă пултăр е тĕп пултăр! тесе кăшкăраççĕ, юлашкинчен пурте алă çупаççĕ.

Тимĕр витнĕ кивĕ шкул çурчĕсем ял варринчи пĕчĕк çеç юхан шыв хĕррине вырнаçнă. Йĕри-тавра ĕмĕрхи тирек йывăççисем, хыçалта пĕве, пысăк сад пахчи. Вĕренекенсем шкул картине кĕрсе вырнаçрĕç, икшерĕн йĕркеленсе, пĕкĕ евĕр çурункă пулса тăчĕç. Пĕр енче аслисем (çиччĕмĕш класрисем), тепĕр енче – чи малтанхи хут кунта ура ярса пуснисем. Вĕсем хăйсен ашшĕ-амăшĕсем çине савăнăçлăн пăха-пăха илеççĕ, йăл та йăл кулаççĕ. Вăрăм та сарлака строй варринче вĕрентекенсем, ялти пуçлăхсемпе ют çынсем. Икĕ çамрăк учителĕ çӳçне шакла кастарнă. Акă вĕсенчен пĕри, куçлăхли, темиçе утăм маларах тухрĕ, кĕхĕм-кĕхĕм туса илчĕ те:

– Юлташсем, шкул коллективĕ хушнипе савăнăçлă линейкăна уçма ирĕк парсамăр, – терĕ. – Сăмах шкул директорне, Николаева юлташа, паратпăр.

– Хисеплĕ ачасемпе вĕрентекенсем, ашшĕ-амăшĕсемпе чĕннĕ юлташсем, – терĕ уçăмлă сасăпа Полина Карповна. – Паян пирĕн пысăк уяв – çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Анчах çак савăнăçлă куна çĕршывăн анăçри шкулĕсенче ирĕклĕн паллă тума май çук. Унта хаяр вăрçă пырать. Çавăнпа сирĕн пек ачасем те, ытти халăхпа пĕрле, йывăр пурнăçпа тертленеççĕ, çапах Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшаççĕ, партизансемпе çыхăну тытаççĕ. Вĕсен тĕп девизĕ вĕренӳ мар – кĕрешӳ. Кăçал пирĕн шкулти çичĕ класра 173 ача парта хушшине лараççĕ, вĕсенчен 75-шĕн тăванĕсем фронтра. Эпир шута илне тăрăх, сирĕн кĕнеке-тетрадьсем халлĕ хе çителĕклĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи пек тăрăшса вĕренмелли, йĕркеллĕ пулмалли кăна юлчĕ.

Пурте шапăртаттарса алă çупса ячĕç, пĕчĕккисем алă тупанĕсене сура-сура çатлаттараççĕ.

– Халĕ, – терĕ шкул директорĕ, – çара каякан хамăр юлташсемпе сывпуллашатпăр. Çамрăк комсомолец-учительсене ирсĕр тăшманпа паттăрла çапăçма, шкула çĕнтерӳпе таврăнма сунатпăр. Сывă пулăр, тусăмсем!

Пулас салтаксем вĕрентекенсемпе хăнасене алă тытса тухрĕç, карттусĕсене тăхăнчĕç, урари пушмакĕсене шарт тутарса çаврăнчĕç, аллисене харăс сулласа, хапха патнелле стройпа утса кайрĕç. Велосипедсем çине хăвăрт утланчĕç те военкомат еннелле кустарчĕç.

Пĕрремĕш класа килекенсенчен чи çамрăк хĕрачи, аллинчи шăнкăравне çĕклесе строй тăрăх утса тухрĕ, пирвайхи шăнкăрав пачĕ. Класăн-класăн йĕркеленсе ачасем пӳлĕме кĕме тытăнчĕç. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Мĕнле пулĕ-ши вăл ачасемшĕн, учительсемшĕн?

x x x

Коридорти йĕс шăнкăрав кĕмĕл саслăн чăнкăр-чăнкăр шăнкăртатса, уроксем вĕçленнине хыпарларĕ. Полина Карповна уроксем вĕçленнине пĕлтерчĕ. Директор коридорта тăракан вĕренекенсем енне çаврăнса çывăхарах пычĕ.

– Ачасем, – терĕ вăл йăвашшăн, – ыран канмалли кун, шкула килес çук. Çавăнпа та кĕçĕр пирĕн ушкăнăн-ушкăнăн пулса ял тăрăх саланмалла, вăрçăри çынсен ашшĕ-амăшĕсем патне çитмелле, вĕсемпе калаçмалла. Фронтран килнĕ çырусене вуласа кăтартмалла. Вăрçă пуçланни виçĕ уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Çав вăхăтра Хĕрлĕ Çар тăшманпа паттăррăн çапăçнине кăтартса парăр. Хаçат-журнал çинчи тĕслĕхсемпе усă курăр. Çак кунсенче кĕрхи кунпа çĕр танлашаççĕ. Халĕ каç вăрăмланса пырать. Фашистсен вăрçăри ĕçĕ-хĕлĕ те çавăн пекех тĕттĕмленсе, йывăрланса пырĕ. Пирĕн çĕнтерӳ пулатех, анчах та унта çитме вăрăм та çăмăл мар çул пулĕ. Каннă хыççăн, паян, йĕтем çинче ĕçлемелле. Ĕçленĕ çĕрте те, каçхи рейд вăхăтĕнче те сирĕнпе пĕрле учительсем пулĕç. Хăвăра пур çĕрте те йĕркеллĕ тытăр, ачасем. Ăçта çитмеллине, хăш урамра пулмаллине аслă вожатăй ăнлантарĕ. Ыйтусем е ăнланманнисем пур-и?

– Манăн пур, – илтĕнчĕ сасă. Строй умне белорус ачи тухса тăчĕ те çапла каларĕ:

– Ытти вырăнсенчи вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар валли пушă кĕленчесем пухаççĕ. Вĕсенчен, темле çунтаракан шĕвек тул-

тарса, гранатăсем тăваççĕ, нимĕç танкĕсене аркатаççĕ. Пирĕн те çак ĕçе хутшăнасчĕ.

– Питĕ тĕрĕс шухăш, – мухтать ăна директор. – Эпир ун çинчен учительсемпе калаçса пăхнăччĕ, военкоматрисем килсе ăнлантарасса кĕтрĕмĕр, анчах çитеймерĕç-ха.

– Мана ыйтма юрать-и? – илтĕнчĕ пĕр хулăн сасă. Ачасен умне Карпов тухса тăчĕ. – Шкулта çăпата кружокĕ йĕркелеме пулать-ши?

Коридорта тăракансем пурте харăсах ахăлтатса кулса ячĕç. Вова вăтаннипе пуçне чикрĕ, хăй сисмесĕрех куççулĕсем йăр та йăр юхса анчĕç, тусанлă урая пат-пат тумларĕç. Вĕренекен пуçне тата ытларах усрĕ, пӳрнисемпе сăмсине чăмăрта-чăмăрта илчĕ.

– Ха-ха-ха-ха, çăпата кружокĕ.

– Тупнă сăмах вакламалли.

– Эпир социализм çинчен вĕренетпĕр, вăл...

– Урăх ыйтусем çук, киле хăвăртрах васкамалла тата.

– Ачасем, пурте шăпланăр! – хыттăн каларĕ директор. – Капла аван мар, каласа пĕтер, Карпов.

– Малтан эсир итлесе пĕтерĕр, кайран кулма та, макăрма та юрать, – каллех хăюлланчĕ Вова. – Шкулта пирĕн тĕрлĕ кружоксем пур. Юрă-ташă, драма, çутçанталăка сыхлакансемпе вут-кăварпа кĕрешекенсен тата оборона кружокĕсем. Ку питĕ аван. Эпир спектакль-концертсем лартатпăр, стена хаçачĕсемпе литература журналĕсем кăларатпăр, тимуровецсен ĕçне те манмастпăр. Анчах... Ну, эпĕ хам çинчен калам-ха. Эсир пурте пĕлетĕр ĕнтĕ, ман аттепе икĕ кукка тахçанах вăрçăра. Куккасенчен кайнăранпа пĕр хыпар та çук. Анне те сыв марланса кайрĕ, ĕçлейми пулчĕ. Эпĕ ирхине, шкула киличчен, вут хутса апат пĕçеретĕп, выльăх-чĕрлĕхе пăхатăп. Вара тин вĕренме килетĕп. Шкултан таврăнсан колхоза ĕçлеме каятăп. Килте те ĕç сахал мар, пахчари çĕр улмине те кăларса пĕтерейменĕмĕр. Йăмăкпа шăллăм çамрăк-ха. Çăпатасем пурин те çĕтĕк. Пĕр канмалли кун вăрмана пушăт касма кайрăм. Анчах лесник чышкисене кăтартсах хăваларĕ, аран-аран тарса ӳкрĕм. Эпĕ кĕнчеле арлама тата пир тĕртме тахçанах пĕлетĕп. Чуста çăрса

çăкăр унама та вĕрентĕм. Эпир, пиччепе иккĕн, кăçал утмăл çичĕ ĕçкунĕ турăмăр, – хушса калать Карпов-кĕçĕнни. – Унăн çур тупăшне оборона фондне куçартăмăр. Ытти вĕренекенсене те çавăн пек пулма сĕнетпĕр.

– Тĕрĕс калать Вова, – терĕ тепĕр хĕрачи. – Пирĕн килте те çăпата тăвакан çук, эпĕ вăл кружока хĕпĕртесех çырăнатăп.

– Хăш-пĕр çемьери арçын ачасем те çип арласа пир тĕртме, çĕлеме, тĕрлеме тата чĕнтĕр çыхма пĕлеççĕ.

– Ялти чылай аннепе аппасем çăпата тума, суха туса тырă акма ăста, – хушса хучĕ тепĕр ачи. – Кунта ним кулмалли те, тĕлĕнмелли те çук. Ялти çыннăн вĕсене пĕлни питĕ усăллă.

– Кун пек çынсем нумаях мар. Анчах çăпата ăсталама тата суха тума пĕлни питĕ кирлĕ, уйрăмăнах халĕ.

– Тен, салтаксене çăпата кирлĕ пулĕ, тепĕр чухне.

– Карповсем питĕ кирлине каларĕç, – калаçăва пĕтĕмлетет Полина Карповна. – Ĕçкуньсен тупăшне оборона фондне пурин те куçармалла. Асăннă кружока çитес вăхăтрах йĕркелетпĕр. Манăн тата тепĕр сĕнӳ пур. Тунтикун, уроксем хыççăн, пĕрле вĕренекен юлташĕсен Карповсене килне кайса пулăшмалла, унтан тӳрех йĕтем çине.

– Каятпăр, класĕпех каятпăр, – илтĕнчĕç сасăсем.

– Ыттисем патне те черетпе çитĕпĕр. Ушкăнпа.

– Пĕр-пĕрне çапла пулăшас пулать.

– Урăх ыйтусем çук-и?

– Çук!

– Ачасем, – терĕ юлашкинчен шкул пуçлăхĕ. – Хăш-пĕр çĕрте тиф пуçланнă, теççĕ. Çав чиртен хытă сыхланас пулать. Пуçа мунчара кĕл тăррипе çăвăр. Кĕпесене те çавăн пек шывпах ухмалла, унтан вĕретмелле. Вара пыйтă-шăрка пулмĕ. Таса пурăнни – чир-чĕре çĕнтерни пулать.

Часах вĕренекенсемпе учительсем килĕсене саланчĕç. Шкул пушанса юлчĕ.

...Каçхине Карповсен килне пилĕк вĕренекенпе вожатăй пырса кĕчĕç. Вова амăшĕ вĕсене кăмăллăн кĕтсе илчĕ,

сӗтел патне иртсе ларма сӗнчӗ. Пӳртӗнче таса та тирпейлӗ, шӑтӑр-шӑтӑр. Алӑк патӗнче, стена ҫинчи ҫекӗллӗ туратлӑ хурама пӑта ҫинче, хӗрарӑм сӑхманӗпе кӗрӗк тата кивӗрех аҫам ҫакӑнса тӑраҫҫӗ.

– Хам та час-часах чирлекен пулса кайрӑм, ахлаткаласа ҫех ҫӳретӗп. Юрать-ха эсир хӑш-пӗр ӗҫсене тума тӑтӑшах килсе пулӑшатӑр. Тавах сире уншӑн, ачамсем. Пӗрре шкула ҫитсех каласшӑнччӗ те.

– Юрӗ, халӗ хамӑр та килтӗмӗр, – тет вожатай. – Шкула пыма кирлӗ мар.

Вӗренекенсем ҫапла калаҫа-калаҫа, сӗтел хушшине вырнаҫса ларчӗҫ. Кил хуҫине «Чӑваш коммуни» хаҫатсене вуласа кӑтартрӗҫ, каласа пачӗҫ, альбомри сӑн ӳкерчӗксене пӑхрӗҫ.

– Ксени аппа, эпир сирӗн пата юриех юлашкинчен килтӗмӗр, – тет пӗр вӗренекенӗ. – Пирӗн ӗлӗкхи ҫинчен пӗлес килет, кӑштах каласа кӑтартмӑр-ши? Ыран канмалли кун, шкула каяс ҫук, васкамасан та юрать.

– Хӑвӑрӑн вӑй-хал ҫитсен.

– Калӑр-ха, тархасшӑн, питӗ-питӗ пӗлес килет. Иртнӗ ҫулта эсир ун ҫинчен ялти ҫамрӑксемпе клубрах калаҫу ирттернӗ теҫҫӗ, халӗ те ырӑпа асӑнаҫҫӗ.

– Э-э, аса илтӗм, – хуравлать Вова амӑшӗ. – Ун чухне темле тӗлпулу пулчӗ, мана та чӗнчӗҫ, старикпе иксӗмӗр те кайрӑмӑр. Анчах эп каланине ырламаллиех ҫук пулӗ, эпӗ хутла вӗренмен те.

– Апла мар ӗнтӗ, эсир питӗ йӗркеллӗ калаҫатӑр, сире ялта никам та хурламасть.

– Итлеме кӑмӑлӑр пулсан, каласа парам эппин. Ӑшӑ пулсан, пиншак-тутӑрсене пӑтана ҫакӑр, меллӗрех вырнаҫса ларӑр. Ҫапах та эсир мана каҫарӑр, эпӗ хушӑран самаях ӳсӗркелетӗп.

Вова амӑшӗ альбомсене тирпейлесе кӗтессе хучӗ, тӗпеле пырса витрери шыва кӑштах сыпса илчӗ.

– Ку сӑмах-юмаха мана хама та асанне каласа панӑччӗ. – Ҫак самантра пӳрте виҫӗ ача кӗрсе тӑчӗҫ: икӗ укра-

инкăпа белорус. Вĕсем пурте пиллĕкмĕш класра вĕренеççĕ. Юлташĕсем кунта кĕрсе кайнине асăрханă та, унта чавтарса та çитрĕç. Хăйсем хăштик-хăштик хашкаççĕ, пичĕсем хĕрлĕ, çамкисем тарлă.

– Пире те итлесе ларма юрать-и? – терĕ пĕр хĕрачи, пĕчĕк тутăрпа питне-куçне шăлса.

– Эпир çавăншăн кунта килтĕмĕр те, пире вожатăй вырăсла куçарса парĕ, – терĕ пысăкрах пуçлă, мăн сăмсаллă арçын ачи сăмсине нăш-нăш туртса.

– Юрать, юрать, – ответлет кил хуçи, – тархасшăн кунталла иртĕр. Ăçта та пулин вырнаçса ларăр.

Вĕсем шăпланса ларчĕç кăна, тата икĕ ача çитрĕç. Кусем Ленинград таврашĕнчи вырăс ачисем пулчĕç. Вĕсем те пушмаксене хывса ыттисем патне хуллен пычĕç, шăппăн итлеме пикенчĕç. Ксени аппа ахлата-ахлата ĕлĕкхи нушаллă пурнăç çинчен каласа пачĕ.

## Шурă çерçи

Вова шкултан таврăнчĕ. Чирлĕ амăшне апат пĕçерсе çитерчĕ. Унтан иккĕшĕ те пахчана тухрĕç. Амăшĕ упăшки ăсталанă пĕчĕк пукан çине пырса ларчĕ. Тунсăх хĕвел хĕрелсе анать, канмаваскать. Вова чиепе улмуççисем çине пăхса тарăн шухăша путрĕ. «Атте, атте! Çак йывăççене те иксĕмĕр лартрăмăр вĕт-ха пилĕк çул каялла. Халĕ вара ăçта-ши эсĕ, аттеçĕм?»

– Анне, эпĕ халĕ йĕтем çине каятăп, – сăпайлăн пĕлтерчĕ ывăлĕ амăшне. – Тен, час таврăнаймăп, ан ӳпкелеш. Шăллăм та киле таврăнсанах унта пытăр. Хĕлле валли силос хатĕрлемелле терĕç.

– Юрĕ, ывăлăм, юрĕ. Хĕл хырăмĕ пысăк. Сахал мар кирлĕ йышлă выльăха. Колхозăн пулсан, пурăнăпăр. Кай, ывăлăм, ĕçле.

Тăхта-ха, ку тата мĕнле тĕлĕнтермĕш? Пĕр кайăк чĕппи, шап-шурăскер, çерçисем хыççăн вĕçет. Кивĕ карта çине пырса ларать, амăшĕ патне çывхарать те хурлăхлăн чик-чик! туса, çăварне карать. Пĕчĕк çунаттисене сарнă май, амăшĕнчен апат ыйтать пулас. Анчах ватă çерçи ăна çывăха ямасть, пусĕнчен сăхать, аяккалла хăвалать. Çерçисем пурте вĕçсе каяççĕ, йывăç тураттисем çине лараççĕ. Шурă чĕпĕ, пĕчĕккĕ те хавшакскер, ларчĕ-ларчĕ те, аран-аран амăшĕ хыççăн вĕçрĕ.

– Анне, шурă çерçи те пулать-и вара? – кăсăкланчĕ Вова.

Амăшĕ ывăлне хурав параймарĕ, ăна ӳслĕк пусса килчĕ. Вова та сывă мар çынна урăх кансĕрлес темерĕ.

– Юрĕ, анне, эпĕ кайрăм. Кăшт уткаласа çӳре. Шапа хупаххисем татса типĕтĕпĕр. Вăл ӳпке чирĕнчен сиплĕ теççĕ.

– Тăрăшса ĕçле, ывăлăм. Ӳрĕк-сӳрĕк ан пул, намăс курас марччĕ.

«Шел ăна, кĕрхи чĕппе, – йĕтем еннелле чупнă май шухăшлать Карпов. Çапла, пирĕн лупас çинчи улăм йăвара çерçисем кашни çулах ик-виç хутчен чĕпĕ кăлараççĕ. Виçшер çăмарта тăваççĕ. Унтан вăл вĕрентекен каланине

аса илчĕ. «Сайра-хутра шурă çерçи е хура мулкач та тĕл пулаççĕ. Хура куракăн та шурă чĕпĕ тухма пултарать. Анчах вĕсем нумай пурăнаймаççĕ».

Çанталăк лăпкă. Çил тӳлек. Ферма патĕнче çамрăксем йышлăн йăшăлтатаççĕ, силос хатĕрлеççĕ. Арçын ачасем лавпа çум курăкĕсене тиесе килеççĕ, хĕрачасем ăна машинăпа тураççĕ, тарăн шăтăка тултараççĕ. Пысăкраххисем вăрман таврашĕнче, çырма-çатрасенче çулса тăраççĕ. Хĕрӳ ĕç пырать: кăштах каннă самантра ачасем калаçкаласа илеççĕ.

Çак хушăра тулли лавсем çитрĕç, çĕрулми çеçкисене ӳпĕнтерчĕç. Ачасем вĕсене çĕклемĕ-çĕклемĕпе машина патне йăтаççĕ, тураса шăтăка тултараççĕ. Кунта куçса килнĕ ачасем те пур: Левпа Мари Петренко украинецсем тата Эммăпа Нонна Петрусь белоруссем. Вырăс ачисем Женя Гуськовпа Валя Сучкова.

– Малтанах çак эвакур ачасем ĕçлеме ытлах пĕлместчĕç, – тет пĕр ачи лешсем чăвашла пĕлменнипе усă курса, халĕ самаях хăнăхрĕç, ӳркенсе тăмаççĕ, тăрăшсах ĕçлеççĕ.

– Вĕренме те аван вĕренеççĕ, пирĕнпе туслă пурăнаççĕ, кĕскен каласан, лайăх юлташсем.

– Октябрь уявĕ тĕлне эпир вĕсемпе концерт хатĕрлетпĕр, халăха вырăспа чăваш, украина белорус юрри-ташшисене кăтартас тетпĕр.

– Петрусьсен ашшĕ вилнĕ, Петренкон хыпарсăр çухалнă, тет. Сучковăн та ашшĕ вăрçă пуçланнăранпах çырман.

– Вĕсене ялĕпех хĕрхенеççĕ.

– Çавăнпа пурте пулăшатпăр.

– Ачасем, айтăр хăвăртрах тимлер,– илтĕнчĕ звеновой сасси, – çанталăк çумăрланать ав. Паян канмалли кун, çак шăтăксене тултарасчĕ, вара план ытлашшипех пурнăçланĕ.

– Çак тăватă шăтăка миçе тонна силос кĕрет?

– Çирĕмрен кая мар.

– Куртăр-и, шкул ачисем колхоза епле пулăшаççĕ?!

– Çĕрулми кăларнă чухне тата мĕн чухлĕ ĕçлерĕмĕр. Çеçкине çумласа, йăтса тăтăмăр, çĕрулмине пухса, михĕлесех пытăмăр.

– Вова, леш бригадӑра вырса пӗтмен сӗлӗ те, кӑларман ҫӗрулми те пур теҫҫӗ-и?

– Пулса ҫитмен симӗс сӗлӗ кӑштах юлнӑ пулас, – таврӑть Карпов. – Ҫӗрулми пирки пӗлместӗп.

– Эх, октябрь уйӑхӗ ҫитет, уй-хир ҫаплах пушанман-ха.

– Уй-хирти ӗҫ пӗтнӗпе пӗрех, – тет тепри, курӑк урапине тайӑлтарнӑ май, – анчах авӑн ҫапмалли чылай-ха.

– Паян та йӗтӗм ҫинче йышлӑн авӑн ҫапаҫҫӗ. Аслӑрах классенче вӗренекенсем те сахал мар.

Колхоз председателӗ ферма картинчен тухса йӗтем ҫине ҫул тытнӑччӗ. Ачасен калаҫӑвне илтсен кӑштах чарӑнса тӑчӗ. Унтан вӗсем патне пычӗ, саламларӗ.

– Салам, – таврӑчӗҫ вӗренекенсем.

– Ачасем, эсир пурнӑҫ ҫинчен тӗрӗс калаҫатӑр, ялти ватӑ ҫынсем пек, – лӑпкӑн калать председатель. – Колхозӑн сӗлӗ уйра нумай мар, жнейкӑпа пӗр яра кун вырмалӑх та ҫук. Халиччен пӗтмеллеччӗ, машини ҫӗмӗрӗлсе ларчӗ. Ҫӗр улми ҫынсене валеҫсе панӑ касӑсем кӑна кӑшт юлнӑ.

Унтан вӑл ачасем ҫине сӑнарах пӑхрӗ те:

– Эсир ҫавапа курӑк ҫулнӑ чухне алӑ-урасене ан кастарӑр, асӑрханулӑрах пулӑр, – терӗ.

– Пире ун ҫинчен вожатӑй асӑрхаттарсах тӑрать, – терӗҫ вӗренекенсем. – Халӗ вӑл авӑ лере, ҫырма хӗрринчи вӗлтӗрене ҫулакансем патӗнче, кунтан анчах кайрӗ.

– Ну, юрӗ эппин, – килӗшет председатель. – Пӗрремӗш бригадӑри вӗренекенсем пилӗк шӑтӑк силос тултарчӗҫ. Шӑтӑксем сирӗннинчен пысӑкрах, тарӑнрах. Эсир те вӗсенчен ан юлӑр.

– Кая юлмастпӑр!

Председатель малалла утрӗ. Ачасем самантлӑха канма ларчӗҫ. Карпов ҫамки ҫинчи тарне шӑла-шӑла йӗри-тавра пӑхса илчӗ. Йӗтем ҫинче молотилка кӗрлет. Ферма ӗнисем ялалла килеҫҫӗ. Хирте пушӑ, сайра-хутра ҫех ҫуртри ҫӗмелӗсем курӑнкалаҫҫӗ. Ҫанталӑк тӗксӗм, ҫилӗ вичкӗн. Хура кураксем, питӗ йышлӑн карталанса, вӗҫсе иртрӗҫ, вӑрман хӗррине анса ларчӗҫ. Кӑнтӑралла ҫул тытасшӑн пулас, кайма хатӗрленеҫҫӗ.

x x x

Шкулти шăнкăрав сасси тавранах илтĕнчĕ, урамсемпе çырмасем тăрăх аяккалла кайса çухалчĕ. Вова амăшĕ упăшки çинчен шухăшласа пахчаналла тухрĕ, шăнкăрав сассине тăрсах итлерĕ. Унтан улмуççисем хушшипе васкамасăр утрĕ. Садра пилĕк-ултă улмуççин пиççе çитнĕ, панулмийĕсем çĕрелле усăннă. Чие çырлисене те пĕтĕмпех татса пĕтереймен, вĕсем çинче çерçисем чĕвĕлтетеççĕ, хĕпĕртесех сăхаççĕ. Пĕр улмуççи çинче Укçине темле илемлĕ пĕчĕк теттене асăрхарĕ. «Ара мĕн ку, хĕвелпе йăлтăр-йăлтăр курăнаканскер?» Çывăхарах пычĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: çамрăк улмуççи туратти çинче кĕренленме тытăннă сарă симĕс панулмипе юнашар хĕрлĕ шурă тĕслĕ чечек лара парать. Кăшт аяккарах тата икĕ чечек çилпе хумханса лараççĕ. Укçине аппа малалла утрĕ, йывăççем çине тинкерчĕ. Вĕренепе чие йывăççисен те темиçе чечек пур. Акаци тĕмĕ çинче чечексем шакăриех. Хăйсем пĕчĕк те сап-сарă пĕтĕрĕнчĕк, пирус евĕр чăмăртаннă. Тĕм çумĕнчи, хĕвел питĕнчи виктори çырли те çурăлма хатĕрленет. «Ах Турă, ырра пултăрах ку. Кун пек япалана ваттисем хуйха-суйха пĕлтерет тесе калатчĕç. Авăн уйăхĕнче йывăççем иккĕмĕш хут çурăлни сайра-хутра кăна пулать. Анчах Укçине хăраса ӳкмерĕ, упăшки тахçан ăнлантарнине аса илчĕ. «Кунта нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Нӳрĕкпе ăшă çителĕклĕ çулсенче йывăççем темиçе çурăлни пулкалать», – тесе каланăччĕ.

Карта çумĕнчи хытă туналлă пĕр анчăк курăкĕ çилпе кăшт сулланса илчĕ. Унăн çап-çаврашка сарă кукша пуçĕ çинчи шурă илемлĕ çеçкисем тӳпенелле куян тусăн хăлхисем евĕр чанк тӳрĕ пăхаççĕ. Унпа юнашар кăн-кăвак куçлă утмăл турат кĕвĕççе ларать, кӳршĕсемпе харкашать, чечекĕпе мухтанать, йышлă та туратлă аллисемпе сулкаланать. Йăпшăнса ларакан кăвак кушак вĕсен харкашăвне итлерĕ-итлерĕ те унти хăяхлăрах курăка çиме тытăнчĕ, хушăран анаçалла пăхса, пĕчĕк те шĕвĕр питне çемçе урисемпе каллĕ-маллĕ сĕркелесе илчĕ. «Кушак пит çусан, хăна ки-

лет», – тетчĕ пирĕн асанне. – Халĕ вăрçă енчен пирĕн пата кам килĕ? Ашшĕн çыру килет пулсан анчах?

Ытти хуралтăсенчен аякра, пахча кĕтессинче пĕр çурт уйрăммăн ларать. Кивĕ вăл, çине витнĕ улăмĕ те çĕрсе хытнă. Ун хĕрринчи кĕтесĕнче чĕркуççи çӳллĕш хурăн ӳсет. Халĕ вăл çилпе хумханса илет, тунсăхлăн темскер пăшăлтатать. «Эх, вăрçă тухман пулсан çĕнĕ лупас пулатчĕ те,– шухăшлать Укçине. – Лешкасри пурине те кайса пăхнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ ашшĕ килмесĕр шутламалли те çук. Вăл шухăш мар. Кивĕ çурт çине йывăç шăтни темех мар. Уншăн мана мар, вăрçă пуçлакан нимĕççене намăс. Пурнăç юсансан веçех пулĕ».

Укçине йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ, Куштан Мирунăн тирпейсĕр пахчи çине тинкерчĕ. Карта юписем çинче вилнĕ лаша пуçĕн шурă шăммисем çакăнса тăраççĕ. Вĕсем пыл хурчĕсене пырса сырăнма лайăх. Ĕлĕкхи ватăсем: «Усал ересрен сыхлать», – тесе сӳпĕлтетнĕ, ĕненнĕ. Унти ватă пилеш çинче пĕччен çăхан кăранклатать, ăçта вилнĕ чăх-чĕп пур-ши тесе пăхкалать.

Вова амăшĕ ĕххĕм-ĕххĕм ӳсĕрсе, лупас айне кĕчĕ. Унта, кĕтесре, кивĕрех урапа-çуна пур. Вĕсем çинче пир тĕртмелли стан, çип куммалли вăрăм сӳре тата хутăр çăмхаламалли виçĕ уралла ярмуççи тункати, хултăрчпа кăшкар та, ăса-йĕкесемпе шăлтăрма, хĕçпе ура пуссисем тата ытти вак-тĕвексене вырнаçтарса лартнă. Кивĕ суха пуç çумне пĕчĕк те çăмăл кĕпе вăлашкипе чăрăш кĕвентесем, икĕ хăлаç тăршшĕ салат шăтармалли сарлака та вăрăм кункăра сĕвентерсе тăратнă. «Суха пуçĕ çĕрулми купалама меллĕ-ха, çавăнпа аркатмасăр усратпăр». Алăк çумĕнчи кĕтесре ăшăпа шултăркана каткапичкесемпе ут таврашĕсем, çава-çурласемпе кивĕ пуслăх, йывăç вăрăм сенĕк, çĕмĕрт хулăсенчен ăсталанă лăпă ăшĕнче пĕчĕкçĕ çунашка курăнать.

Кил хушшинче Вова йăмăкĕ вылять. Шĕшкĕ патак çине утланнă та тусан кăларса каллĕ-маллĕ ерипен чупать. Вовăпа шăллĕ шкултан килчĕç. Вĕсемпе пĕрле виçĕ юлташĕ.

– Анне, кивĕ шкул çурчĕн пĕр пысăк пӳлĕмĕнче музей уçатпăр терĕç. Ĕлĕкхи çак ĕç хатĕрĕсене унта парăпăр-и?

– Эпĕ хирĕç мар, ывăлăм.

– Авăн çапса пĕтерсенех класри ачасемпе килетпĕр те илсе каятпăр, – хĕпĕртерĕ Карпов кĕçĕнни.

– Вĕрентекенсем ватă çынсем пулăшнипе ял историне çыраççĕ, – малалла пĕлтерчĕ Вова.

– Унта шкулпа колхоз çинчен те асăнаççĕ ĕнтĕ, – хушса хучĕ тепĕр вĕренекенĕ.

– Музейне вăрçăри хамăр атте-пиччесене хисеплесе «Паттăрлăх» ят парасчĕ.

– Тĕрĕс шухăш. Ун пирки вĕрентекенсемпе канашлăпăр.

– Анне, вăрçă хăçан пĕтет? – ыйтать пилĕк çулхи сывмар хĕрача.

– Часах, хĕрĕм, часах, юр çунă çĕре, тен, аçу та киле таврăнĕ.

– Хĕвел кăмаки кăнтăрла мĕншĕн ытла вĕри?

– Вĕри çав, вĕри, – терĕ амăшĕ ним калайман пирки. – Ну, эппин, кăштах выляр. Анчах каçалапа кипкепе пиншак тăхăн. Шăнса пăсăлăн тата.

– Урамра ытларах чупсан чир-чĕрсем пĕтеççĕ тет пĕр пичче. Çапла-и вăл? Çара уран хытă-хытă чупсан манăн чирсем тухса ӳкеççĕ-и?

– Анне, сана мĕншĕн Кĕçнерни, аттене Раштав теççĕ?

– Пирĕн пиччепе инкене те Куракпа Чĕкеç тесе калаççĕ. Кӳршĕсене Шăматпа Нарăс ят панă.

– Вĕсем пурте ялти ятсем, – ăнлантарать Укçине аппа. – Халĕ ун пек каламаççĕ.

– Сирĕн кунта ĕлĕкхи япаласем нумай-çке. Килти музей теме пулать, – тĕлĕнет пĕр ачи, лупас айне пăхса. – Мĕн тума усратăр вĕсене, çунтармалла кăна.

– Вĕсем пурте хăй вăхăтĕнче кирлĕ пулнă, – хуравлать Вова амăшĕ. – Пурнăç улшăнать. Тен, малашнехи çамрăксем вĕсен ячĕсене те пĕлмĕç. Çав ĕç хатĕрĕсемпе тертленнине те ăнланмĕç. Çавăнпа эпĕ вĕсене çĕмĕрсе тăкма е çунтарса яма васкамастăп-ха.

– Ну, çитĕ, – хăй сăмахне вĕçлерĕ сывмар хĕрарăм. – Халĕ эпĕ килти хуçалăх çинчен мар, колхоз пирки ытларах

шухăшлатăп. Колхоз тĕреклĕ пулсан – халăха çамăлтарах, нимĕçсене те хăвăртрах çĕнтерĕпĕр.

Вова йăмăкĕ урама тухрĕ. Тăватă вĕренекен хирелле çул тытрĕç. «Колхозăнне çĕрулми кăларма каятпăр. Ыран утарта пулăшмалла пулĕ», – терĕç.

Тăкăрлăкра вĕсем икĕ çамрăк хĕрарăма тĕл пулчĕç, пионерла салют парса саламларĕç.

– Ăçта каятăр, ачасем? – тĕпчеççĕ вĕсем.

– Колхоза пулăшма, – ответлерĕç ачасем пĕр харăс.

– Аван. Эпир районтан, çутĕç пайĕпе комсомол комитетĕнчен. Шкулта никам та çук. Çавăнпа хире тухас терĕмĕр. Редакцинчи тепĕр юлташ колхоз правленине кайрĕ. Ну, мĕнле вĕренетĕр, колхозра мĕнле ĕçлетĕр?

– Ун çинчен Карпов каласа парĕ, – тет хăюллăрах вĕренекенĕ. – Вăл пионер дружинин председателĕ, стена хаçат редакторĕ. Каласа пар, Вова, хамăр çинчен. Лайăх пулсан, тен, районти хаçата çырĕç.

– Паян вĕренекенсем ăçта ĕçлеççĕ?

– Кĕçĕнрех классенчи ачасем хăмла пахчинче тĕрмешеççĕ. Аслăрах ачасем, вĕренекенсемпе пĕрле, çĕрулми кăлараççĕ, – пĕлтерчĕ тепĕр юлташĕ.

– Ентер шкулĕнчи вĕренекенсем «Çĕнĕ пурнăç» колхоза кулленех пулăшаççĕ, – малалла утнă май каласа парать Вова. – Колхозри пĕр ĕçрен те юлман теме пулать. Часчасах воскресниксем ирттеретпĕр. Çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшатпăр. Пысăкрах арçын ачасем транспорт бригадинче шутланатпăр. Патшалăха тырă леçетпĕр, хирте лаша-вăкăрпа ĕçлетпĕр. Каçхине комсомолецсемпе пĕрле дозора тухатпăр. Фермăсемпе кĕлетсене сăнаса тăратпăр. Урамсемпе тăкăрлăксенче постсем пур. Ютран килен-каян çынсене тĕрĕслетпĕр.

– Утă пуçтаракансен, пучах пухакансен звеносем пур, – хушса калать Вовăпа юнашар пыраканни. – Унти çамрăк ачасем çу каçиченех тăрăшса ĕçлерĕç.

– Колхозниксене хаçат-журнал вуласа пама, вăрçăри ентешсемпе çыру парса илме те вăхăт тупăнать, – тет виççĕмĕш вĕренекенĕ. Хирте ĕçлекенсем валли икĕ эрне-

ре пӗрре стена хаҫачӗ кӑларса тӑратпӑр. Клубра радио черетлӗн итлетпӗр. Вӗрентекенсемпе пӗрле канашлатпӑр та халӑха пӗлтеретпӗр.

– Вӑрҫӑра вилнисен ҫемйисене шефа илтӗмӗр.

– Кӗнеке-тетрадьсемпе кӑранташ-перосем ҫитеҫҫӗ-и?

– Халлӗхе пур. Чернил кӑна сахалтарах. Анчах эпир чернил тума та, чӑх тӗкӗнчен перо ӑсталама та вӗрентӗмӗр. Хут пӗтсен, кивӗ кӗнекесем ҫине ҫырма шутлатпӑр.

Хиртен сукмакпа директор килет. Районтисем ӑна хирӗҫ утрӗҫ.

– Ыттисене вӗрентекенсем пӗлтерӗҫ. Сывӑ пулӑр, маттурсем.

– Тепре куриччен! – хуравларӗҫ вӗренекенсем.

## Сывă пулăр, тăрнасем!

Кĕрхи кунпа çĕр танлашнă вăхăт. Васли мучи пахчана тухрĕ. Кăнтăрла иртнĕ. Тăкăрлăкпа ачасем шакăлтатса калаçса, кăшкăрашса-янăраса шкултан таврăнаççĕ. Аллисемпе тӳпенелле кăнтараççĕ. Мучи те хĕсĕкрех куçĕсемпе çӳлелле тинкерчĕ, тем асăрхарĕ.

Акă янкăр тӳпере темле йĕр курăнса кайрĕ. Вăл çывхарнăçем çывхарса, пысăк савăл пек пулса тăчĕ: вĕçĕ – шĕвĕр, пуçĕ – малта. Тăрнасем, сарлака та вăрăм карта пулса, ăшă еннелле çул тытнă. «Тăрлинк-тăрлинк!» – тенĕ хурлăхлă сасă илтĕнме пуçларĕ. Ку сасă кайăксем пĕр-пĕрне чĕннине, çынсемпе сывпуллашнине пĕлтерет пулас. Пахчари тата хирти çынсем, карттуссене хывса, аллисене çамки патне тытрĕç, хĕвел çутинчен картларĕç, тăрна карти çине чылайччен пăхса тăчĕç. Илемлĕ те, тунсăх та. Тăрнасем тип-тикĕс йĕрпе пырса вăйлă çунаттисемпе сулмаклăн вашлаттарса вĕçеççĕ.

– Васли мучи, – ыйтрĕç ачасем хаваслăн, – тăрнасем çулса пуçтарнă пăрçа ани çине каяççĕ пулмалла. Авă вĕсем аялалла анма тытăнчĕç. Пире тăрна юмаххине каласа парха, питĕ пĕлес килет?

– Килĕр кунта, хам пата килĕр! – таварчĕ ватă çын хĕпĕртесе. Ачасем те çакна кăна кĕтнĕччĕ. Вĕсем мучи кăмăлне пĕлеççĕ, çавăнпа юриех тăкăрлăка кĕчĕç.

Сакăр-тăхăр çулхи ачасем лутра карта урлă йăлт та ялт сиксе каçса, туххăмрах ун патне çитсе тăчĕç, ăна йĕри-тавра çавăрса илчĕç. Вĕсене курса, пысăкраххисем те пиллĕкĕнулттăн пычĕç. Ватă çын килте тĕртсе çĕленĕ кăвак йĕмпе шап-шурă кĕпе тăхăннă, уринче те шурă пурттенкке.

– Акă мĕн, ачасем, – сăпайлăн пуçларĕ шкул хуралçи. – Халĕ юмахсем ярса тăма вăхăт çук. Сирĕн те киле çитсе апатланмалла, унтан колхоз çĕрулмине пухма хире тухмалла. Сире килтисем кĕтеççĕ. Манăн та шкула çитмелле, хамăн каçхи ĕçе тытăнмалла.

– Юмах мар, мучи, – терĕç темиçе сасă пĕр харăсах, – эсĕ пире вĕçсе каякан кайăксем çинчен кăна кăштах каласа пар.

Мучи кивĕ карттусне тӳрлетерех лартрĕ; аллинчи кĕске патаккипе çăпатинчи тусанне шаккаса силлерĕ, шурă кантра пиçиххине пушатрĕ те лăпкă сасăпа калама тытăнчĕ. Ачасем ун çине тинкерсе пăхса лараççĕ, мĕн каласса кĕтеççĕ. Мучи кайăк туссем çинчен кăсăклăн пĕлтерчĕ.

– Темиçе кун каялла эпĕ çакна сăнарăм, – хăй шухăшне пĕлтерет хĕрлĕ галстуклă пионер. – Пĕр шăнкăрчă хăйĕн çуркуннехи йăви çине пырса ларчĕ те чылайччен темле хурлăхлă кĕвĕ шăрантарчĕ, сывпуллашрĕ. Питĕ хĕрхентĕм ăна, куççуль те тухрĕ. Ун чухне чĕкеçсем те телефон пралукĕ çинче ушкăнĕпех ларатчĕç, хĕвелте ăшăнатчĕç, чĕвĕлтетсе юрлатчĕç. Вĕсен юрринче çуллахи савăнăç та, кĕрхи тунсăх та сисĕнчĕ. Чипер кăсăя вĕсене чинк-чинк-чинк тесе саламларĕ, «лайăх çитĕр, тусăмсем» терĕ пулас.

– Юлашкинчен, ачасем, çав вăтă тирек çине сăнарах пăхăр-ха, тимлĕрех итлĕр, – хавхалантарса кăсăклантарать ачасене ватă çын. – Унта эсир мĕнле кайăксене паллатăр тата вĕсем еплерех сасăпа юрлаççĕ?

– Пĕрисем тен-тин, тен-тин тесе, теприсем çилĕллĕн çатлаттарса калаçаççĕ.

– Вут хӳре кайăкĕ тата ерипен шăхăрса шаклаттарать, ыттисем чĕтрентерекен сасăпа хуллен юрлаççĕ.

– Маттур, ачамсем. Ку кайăксем пурте вĕçсе кайма тухнăскерсем. Кăмăллă йывăç вĕсене пĕр кунлăха хваттере янă, апатне çиме те чарман.

Ача-пăчасем ватă çынна тав турĕç те килĕсене сиккипе саланчĕç. Ваçли мучи вĕсем çине кула-кула пăхса юлчĕ. Карта çинчи пуçĕ тура, хӳри çурла автан çунаттисене çат-çат тутарса илчĕ.

«Каçхине паян каллех çумăр пулать ĕнтĕ, – ĕнсине хыçа-хыçа шухăшлать Вăкурат мучи, – автансем авă епле çине-çине авăтаççĕ. Кĕр те, çу кунĕсем пекех, йĕпе килет. Ытти çулсем кĕркунне уяр та илемлĕ, чипер те çутă пу-

лаканччӗ. Ҫил те ҫумӑр, салху та йӗпе-сапа, тӗксӗм те хуйхӑллӑ. Эх, ҫанталӑк, мӗн-ма эсӗ хӗрхенместӗн этеме? Халӑха халӗ ахаль те йывӑр. Ҫук, пулас ӑрусем пирӗнтен ӑслӑрах пулӗҫ: ҫутҫанталӑка пӑхӑнтарӗҫ, аслати ҫине утланӗҫ, вут-хӗмлӗ ҫиҫӗм тӑвайккийӗсем ҫинче катаччи ярӑнӗҫ, унӑн ҫинҫе йӗрӗсем тӑрӑх чупӗҫ».

## Инçетри хĕрача

Кăнтăр тĕлĕнче Карповпа вожатăй хулана çитрĕç. Госпитале кайса кучченеçсем пачĕç, аманнă салтаксемпе каласрĕç. Унтан шкулти вожатăй икĕ кунлăх канашлăва юлчĕ. Вова вокзала кайрĕ. «Тен, фронтра аманнисене курăп. Хамăр енчисем пулсан, киле лартса килĕп. Вăрçă çывăхĕнчен куçса килекен ватă-вĕтĕ те пулма пултараççĕ. Ун пек çынсене тĕл пулаймасан, шкул валли кĕнеке-тетрадьсем тиетĕп. Пушăлла мĕнле таврăнас? Кама та пулин усă тăвасчĕ.

Канаша тухăçран килекен Хусан пуйăсĕ çитсе чарăнчĕ. Çынсем вокзалах анса юлчĕç, тĕрлĕ еннелле саланчĕç. Пĕр çамрăк хĕрача кăна каллĕ-маллĕ уткаласа, шутласа тамбурта чылай тăчĕ, «Те анас ĕнтĕ, те Мускаваллах каяс», – терĕ пулас. Унтан кĕске картлашка тăрăх пĕр утас аялалла ярса пусрĕ, каллех тăчĕ, иккĕленчĕ. Анăçалла каякан çынсем те тĕркĕшкелесе кĕрсе пĕтрĕç, вăл çаплах картлашка çинче тăрать-ха.

– Эсĕ, хĕрача, анатăн-и е малалла каймалла? – ыйтрĕ ватăрах хĕрарăм-проводник, аллинчи пĕчĕк симĕсрех сарă ялавне саркаласа.

Виçĕ хутчен чан çапрĕç, пуйăс каялла карт! туртăнса илчĕ те вырăнтан хускалчĕ, ерипен-ерипен малалла шуçма пуçларĕ.

– Юлмаллах пулсан, хальтерех сик, эпĕ пулăшатăп, – терĕ кăмăлсăрланнă проводница, ăна хулĕнчен тытса. Çамрăк хĕрача хăвăрт сиксе юлчĕ. Ун-кун пăхкаларĕ, станцă ятне вуларĕ, кĕсйинчен хут таткине кăларса пăхрĕ. Хăй çинçерех кĕлеткеллĕ, шуранка та илемлĕ. Хăмăр тутăрпа, кĕске тумтир тăхăннă, уринче кивĕ пушмак. Пĕчĕкçĕ чăматан йăтнă.

Ют хӗрачана Карпов аякранах курчӗ, ун патнелле ҫывхарчӗ.

– Хӗрача, сан хӑш еннелле каймалла? – ҫурӑм хыҫӗнчен ыйтрӗ Вова.

Лешӗ ялтах ҫаврӑнса пӑхрӗ, хӑй умӗнче палламан ҫын тӑнине курчӗ, ун ҫине тинкерчӗ. Арҫын ача кивӗ фуфайка, пысӑк карттус тӑхӑннӑ, аллинче сӑсрен явнӑ пушӑ. Хӗрача кӗсйинчи хутне Карпова вулаттарчӗ. Вова хӗпӗртенипе, пушӑ аврине ҫӳлелле ҫӗклерӗ, карттусне тӳрлетрӗ.

– Ара, хӗрачи, саншӑн кӑвак хуппи уҫалнӑ-иҫ, эпӗ те унталлах каятӑп. Хирлеп ялӗ пирӗнтен инҫе мар. Кӑмӑлу пулсан, атя манпа. Авӑ ман лаша тӑрать.

Хӗрача иккӗленсе тӑчӗ, хутне каялла чикрӗ те вокзал ҫинелле пӑхрӗ. Анаҫалла каякан пуйӑс хура тӗтӗм кӑларса курӑнми пулчӗ.

– Тем тумалла ӗнтӗ, хам та пӗлместӗп, – тет хӗрача, вырӑс сӑмахӗсене украинларах майлаштарса. – Пӗреххут малаллах каймаллаччӗ.

– Унта вӑрҫӑ пырать вӗт-ха, хӗрача, – тет ял ачи, кирсӑ аттинчи пылчӑкне хурама пушӑ аврипе тасатса. – Ан кай унталла, кунта лӑпкӑрах. Вӑл урапа патнелле васкамасӑр утрӗ, каялла ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхрӗ, лаши тӗлне ҫитрӗ. Ҫамрӑк тиха-ййӑр кӗҫенсе ячӗ, тапӑртатса илчӗ. Хӗрача ҫав-ҫавах пӗр вырӑнта хурланса тӑрать. Питӗ хӗрхенчӗ ӑна Вова.

– Кил часрах! Атту каятӑп. Авӑ ҫумӑр та хатӗрленет, – терӗ вӑл каҫхи хӗвел ҫине пӑхса. Унтан сулахай аллипе кӑчӑк туртрӗ. Хӗрача темиҫе утас ярса пусрӗ. Карпов ӑна хирӗҫ пычӗ. Иккӗшӗ урапа патне таврӑнчӗҫ.

– Паҫӑрах ҫапла килӗшмеллеччӗ, – хӗпӗртерӗ Вова, – халиччен хуларан тухса каяттӑмӑр. Унтан вӑл кӑшт шухӑшласа тӑчӗ, тутине мӑкӑлтаттарса илчӗ те малалла калаҫма тытӑнчӗ.

– Эпӗ лашасене питӗ юрататӑп. Атте те вӑрҫа кайиччен конюхра ӗҫленӗ. Хӗлле ерҫнӗ самантсенче аттене пулӑшма витене час-часах каяттӑм. Ҫуллахи каҫсенче утсене улӑхра ҫитересси – манӑн юратнӑ ӗҫчӗ.

Вăл пырса лашине мăйĕнчен ачашларĕ, çурăмĕнчен шăлса илчĕ.

Ют хĕрача хăй çумне ларсанах, хула урамĕсем тăрăх пынă май, Карпов питĕ вăтанчĕ, нимле сăмах та тупса калаймарĕ, шухăша кайрĕ.

Хĕрача тăван Украинăна, ял-йышсемпе тăванĕсене аса илчĕ. Хурланчĕ, куççулĕ тăкрĕ, пуçне пĕкрĕ. «Ăçта, кам патне каятăп-ха эпĕ, ухмах пуç? Мĕн кĕтет мана унта? Кам йышăнĕ, хĕрхенсе пулăшĕ мана пач ют çĕрте, вуçех курман-палламан çынсем хушшинче? Таврăнас мар-ши каялла? Çук, халĕ пулмарĕ ĕнтĕ. Ну, мĕн пулать те мĕн килет, эпĕ çапах нимĕçсен аллинче мар, хамăрăн ирĕклĕ Тăван çĕршывра, туслă халăхсем хушшинче. Кам та пулин хĕрхенĕ, усрĕ, çĕршыв хĕсĕр мар, ырă çынсем тупăнĕç. Тен, пĕр-пĕр çăмăл ĕçе вырнаçăп. Вĕренесси кăçаллăха пулмасть пулĕ.

– Эй, ачасем, тĕлĕрсе кайрăр-и мĕн!? – илтĕнчĕ хивре сасă. – Кĕçех машина айне лекеттĕрччĕ вĕт-ха!

Колхоз çамрăк йăйăрĕ аяккалла картах сиксе илчĕ, урапа хăяккăн пăрăнса ларчĕ, лаши тапах чарăнчĕ.

«Юрать-ха лаши чарăнчĕ, тем курса тăраттăмăр, – тавçăрса илчĕ çамрăк ямшăк. – Эх, арçын». Вăл тилхепине пĕр еннелле хытăрах туртрĕ те лаша пăрăнчĕ, урапи тӳрленсе ларчĕ, малалла уттарчĕç. «Хăвăртрах тухса каясчĕ хуларан», – шухăшлать Карпов.

– Капла пыма аван мар, паллашар-ха, – сăмах пуçларĕ ямшăк. – Эпĕ Карпов Вова. Ватă çынсем, Владимир тесе калайманнисем, Улатимĕр теççĕ. Ялти чăваш ачи, çиччĕмĕш класра вĕренетĕп. Эсĕ тата мĕн ятлă?

– Мана Венера Ларченко теççĕ. Украинка, вунвиçĕ çулта. Коростень ятлă хулара ултă çул вĕреннĕччĕ. Кăçал çулла каникул пуçлансанах Мускава килнĕччĕ, аннен тăванĕсем патне. Ман тăван хулара халь фашистсем иртĕхеççĕ ĕнтĕ. Атте-анне, пиччепе йăмăк çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Пичче вăтам шкул пĕтернĕччĕ.

– Хусан пуйăсĕпе ăçтан таврăнатăн?

– Пĕр уйăх каялла мăнукпа Çĕпĕрелле кайрăмăр, – малалла калаçать инçетри хĕрача. – Ытти тăванĕсем çаканти Чăваш çĕршывне юлчĕç. Халĕ вĕсем патне килетĕп. Мăнук Хусанти больницăра вилчĕ.

– Эсĕ, Венера, сахал мар хура-шур тӳснĕ. Çынсене ман мĕнле те пулин усă тăвас килет, уйрăммăнах хальхи йывăр вăхăтра. Сана та пĕрре курсах питĕ хĕрхенсе кайрăм, хам йăмăк пекех. Пирĕн атте те вăрçăра. Унтан темиçе уйăх çырусем çук. Вилнĕ хыпар та пур.

– Тĕрĕс тăватăн, Вова. Маттур.

– Эпĕ мар, эсĕ вăт чăнах та маттур. Венера, урапа ӳречинчен çирĕпрех тыт, çĕре ӳкĕн тата.

– Вова, шăтăк-путăклă вырăнсенче хулленрех чуптар. Юрать-и? Ман хырăма çуркунне операци турĕç. Ыратасран хăратăп.

– Юрĕ, Венера. Пирĕн яла çурла вĕçĕнче вунпĕр çемье куçса килчĕç. Эпир вĕсене çăкăр-тăварпа кĕтсе илтĕмĕр. Хамăр килсене кăмăллăн йышăнтăмăр. Тепĕр куннех мунча хутса кĕртрĕмĕр. Колхоз вĕсене кашни уйăхрах çăнăх парса тăрать. Вĕсен ултă ачи шкулта вĕренеççĕ. Украина ачисем те пур: Левпа Мари Петренко иккĕшĕ те тăваттăмĕш класа çӳреççĕ.

Вăрмантан тухсан çумăр пĕрĕхме пуçларĕ. Чăваш ачипе украина хĕрĕ пĕр пысăк та кивĕ плаща пĕркенсе ячĕç. Çулĕ яка. Çӳрен тиха хӳхĕм юртать. Малти урапа шини-тимĕрĕ чăнкăртатса сас тăвать. Çамрăксем çул тăршшĕпех кăмăллăн калаçса пычĕç. Каçалапа пĕр пысăк ял патне çитрĕç.

– Манăн ăçта анса юлас, Вова? – ыйтрĕ Ларченко, шăннă урисене вылятса.

– Атя хамăр пата, тăван пекех пурăнăн, – кăмăллăн пĕлтерчĕ Карпов, хĕрачапа сывпуллашнă май.

– Апла аван мар-çке. Малтан кукамăн хурăнташĕсем патне çитмелле мар-ши?

– Э, эсĕ хулари культурăллă хĕрача çав, – пăшăрханчĕ чăваш ачи. – Тен, чирлĕ йăмăкран та хăратăн пулĕ. Çитменнине халĕ эпир начартарах пурăнатпăр.

– Çук, уншăн мар, юлташăм, – çемçелчĕ Венера, арçын ача кăмăлсăрланнине сиссе. – Аван мар сире чăрмантарма. Вăтанатăп.

– Ним вăтанмалли-хăрамалли те çук! – каллех хавасланчĕ Вова. – Халĕ йывăр вăхăт. Пирĕн патра килĕшмесен, ыранах Хирлеп ялне леçĕп. Эх, эс пирĕн пата пырсан анне епле савăнĕччĕ! Хамăр патри эвакур çыннисем кӳршĕ яла кайнă хыççăн унăн кăмăлĕ хуçалнăччĕ.

– Аван мар, Вова...

– Ну, юрĕ. Апла-капла йывăрлăхсем килсе тухсан, тӳрех пирĕн яла çит. Адресне каларăм, пĕлетĕн. – Вовăн куççулĕ тухрĕ, хăй те сисеймерĕ пулас.

– Тавах, Вова. Сывă пул.

Венера ялалла утрĕ. Урапа тапранса кайрĕ. Кăштах кайсан арçын ача лашине чарчĕ. Карттусне хывса çӳлелле çĕклерĕ те:

– Венера, сан пата часах пыратăп. Юрать-и? – терĕ.

– Аха! – илтĕнчĕ сасă.

«Эп кăна кĕтменччĕ. Ак савăнăç: ют хĕрача «Аха!» терĕ, пыма чĕнчĕ. Çитес канмалли кунах каятăп. Çак Орликпах. Украина хĕрачи умĕнче чăваш лаши те намăс курмĕ. Пирĕн утсем ытти çĕршывсенче те пулнă, чупассипе мала тухнă теççĕ».

## Вĕре çĕлеппе чечек

Сĕм тĕттĕм кĕрхи каç. Уй урлă пĕр ĕмĕлке тĕнкĕлтетсе пырать. Хушăран чарăнать, каллех малалла упаленет, мĕкĕлтетет. Çук, ку ĕмĕлке мар, çын пулчĕ иккен. Хăй хытă ывăннă, хашкать. Мĕнле этем-ши ку? Ырă çын çĕрле çӳремест теççĕ. Мĕнле шухăшпа утать-ши, ăçталла çул тытнă-ха вăл?

Ан шиклен, çамрăк тусăм: сĕм тĕттĕм каçран та, хирти пĕччен ĕмĕлкерен те. Ку вăл Вова Карпов. Усал шухăшлă этем мар. Пĕлер-ха эппин, ăçта каять, мĕн шухăшлать вăл?

«Анне хушнипе, уроксем хыççăн, кӳршĕ яла кайрăм, – шухăшлать Карпов. – Сакăр çухрăмри Хирлеп ялне. Унти пĕр салтак киле аманса таврăннă, терĕç. Вăрçăра аттепе пĕрле çапăçнăскер. Анчах вĕсен килте никам та пулмарĕ. Йĕтем çине çитрĕм. «Ĕнер ăна Хусана ăсатрăмăр. Пĕр уйăхлăх сывалма», – хыпарларĕ арăмĕ. Каялла таврăннă чух сукмакпа тӳрĕ утрăм. Тĕттĕм пулса ларчĕ. Тавралăха тĕтре хупăрларĕ. Çултан хăпрăм. Ара, ку мĕнле пылчăклă вырăн? Çăпата кантрисем веçех татăлса пĕтрĕç. Э, çĕрулми пусси иккен. Ак тамаша: сулахай урари çăпата ларса юлчĕ. Тупас пулать, килте урăх çăпата çук. Пасарта илме – кĕсье шăтăк. Октябрь уявĕччен çĕнĕ çăпата тумалла. Пушăчĕ пур. Шăллăмăн та çĕтĕлнĕ. Килте кăвакартнă кăвак йĕмпе шурă кĕпе хатĕр. Атте карттусне тăхăнăп. Вăл аслă уява япăх тумтирпе тухмалла мар. Темле çанталăк пулсан та шурă пурттенкке сыратăп. Анне мана яланах таса та тирпейлĕ çӳретет».

Вова пĕшкĕнчĕ. Пылчăклă çĕре аллисемпе хыпашлама пикенчĕ. Каллĕ-маллĕ упаленсе шырарĕ.

– Эх, хам çумра шăрпăк пулсан, кун чухлĕ нушаланас çук. Шăрпăк, шăрпăк! Акă хăçан питĕ кирлĕ иккен эсĕ. Ахальтен мар сана Кавĕрле Мирунĕ вунпилĕк тенкĕпе сутать. Супăнь катăкне вуннă, пĕр стакан тăварпа краççына пилĕкшер тенкĕ ыйтать теççĕ. «Кун пекех пулсан, çитес çулсенче çăнăх икĕ пине, паранкă пилĕкçĕр тенке те çитĕ-

ха, – тесе мухтанать имĕш. Çавăнпа ăна тытса кайнă ĕнтĕ. Çук çынсем усламçă хыççăн каймĕç. Пĕр уйăх каялла çав кирлĕ япаласене халăха çителĕклех сутрĕç. «Çĕнĕ çул тĕлне татах пулать, ан хăрăр», – терĕç.

Çăпатине тупсан вăл питне шăлса илчĕ. «Йĕпхӳ те çăвать, манăн та тар юхать». Темле çемçе вырăна çитрĕ. Урасем тата хытăрах путаççĕ. Утма питĕ кансĕр. Аллисемпе хыпашласа пăхрĕ. «Кĕрхи калча иккен. Шел ăна таптама. Халĕ тыр-пул питĕ кирлĕ». Часах каялла тухрĕ, тепĕр еннелле кайрĕ. Питĕ ывăнчĕ. Хырăмĕ выçса çитрĕ. «Эпĕ шкулта çинĕренпе çимен. Çавăнпа вăй пĕтсе килчĕ. Эх, мĕншĕн кĕсьере çăкăр тĕпренчĕкĕсем те пулин ытларах çук-ши? «Çул çинчи çын нушаллă, – ăс паратчĕ ачисене Вова амăшĕ. – Ăна чĕнсе кĕртсех апат çитермелле. Улмапа çăкăр та пулин. Вĕри чей ĕçтер. Çул çине çăкăр парса яр. Хырăм выççи – çут тĕнчере чи йӳççи».

Ача темскертен такăнчĕ те çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ. Пĕчĕк тислĕк купи иккен. «Кăштах ларса канам. Пуç çаврăнать. Вăрçă тухман пулсан, ялти хăйă çутисем аякранах курăнмалла. Эпĕ те пасăрах килте лармалла. Анчах халĕ маскировка. Ялта пĕр çутă кураймăн. Йытă вĕрни е автансен сасси те илтĕнмест».

Вăл тĕмеске çумне сĕвенчĕ. Çĕр çинчи çĕрулми аврисене хăй айне майласа хучĕ. Куçне хупрĕ те часах тĕлĕрсе кайрĕ. Кăшт вăхăт иртсенех, шăпчăк ыйхи чухлĕ тĕлĕрсен, çĕтнĕ çын часах вăранчĕ. Талтах сиксе тăчĕ те ыйхă тĕлĕшпе çырманалла йăванса кайрĕ. Вăл ахлатнă сасăпа çыран хĕрринчи йăваран кайăксем вĕçсе тухрĕç. «Мĕнле çунатлă туссем кусем? Çĕр чĕкеçĕпе пăрчăкан халь кăнтăр енче ĕнтĕ. Тăрисем пулас. Тăхта-ха, мана кам вăратрĕ. Тăп-тăп тутарса утса пычĕ те «Тăр, Вова. Кунта нумай ан вырт» тесе каларĕ пулас. Атте сасси пекех илтĕнчĕ. Анчах çывăхра никам та çук.

Çак самантра çара çерçи хурăн тункатине пырса çулăнчĕ. Çунаттисемпе шăп-шап тутарчĕ те аяккалла вĕçсе кайрĕ. «Э, акă кам мана вăратакан! Тинех тавçăрса илтĕм». Вăл ăшăх

çырмаран çӳлелле улăхрĕ. Тĕтре кăштах сайралнă. «Тăхта, ку мĕн çути тата? Инçех мар. Йышлăн вĕлтĕтетеççĕ. Нивушлĕ нимĕççсем кунталлах çитрĕç? Тен, парашютпа аннă диверсантсем пулĕ? Çук, пулма пултараймасть! Пирĕн аттесем тăшмана кунта çитичченех ярас çук. Апла пулсан, мĕн хăямачĕ, мĕнле вăйсăр çутăсем? Ытла инçех те мар пулас». Ывăннă ача йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ.

Сĕм тĕттĕм, куçран йĕппе чиксен те, нимĕн те курăнмасть. Çывăхрах темле шăв-шав кĕрлет вăйсăр сасăпа. «Ку тата мĕнле шав, мĕн сасси? Ăçта эпĕ? Ун пичĕ çине пĕчĕк нăрă пырса ларчĕ. Вĕтĕ пăрçа евĕрлĕскер. Вова аллине пичĕ çине хучĕ. «Уяр пулчĕ иккен, шăнса кӳтнĕскер. Эсĕ усаллă чĕрчун. Хĕвел пек йăлтăркка та илемлĕскер. Сан хĕрлĕ кĕпӳ çинче хура пăнчă шăрçасем йăмăхаççĕ. Хамăр «Ара, кунта вут хыпса илме пултарать! Тăратас çыннисене». Чӳречерен шаккарĕ – никам та чĕнмест. Алăксене питĕрмен. Пӳрте чупса кĕчĕ. Сĕтел çинче лампă мăкăрланса çунать. Тĕтĕм маччанах çитет. Пӳртре тĕтĕм, пăчă, ăшă. Урай варринчи тимĕр кăмака вăйлăн çунать, хĕрелсе кайнă. Кĕтесри сак çинче икĕ пĕчĕк ача çывăраççĕ.

– Аннӳ ăçта, ачасем? Тăрăр часрах, çунса каятăр вĕт!

– Анне станцăна кайрĕ. Вăрçă патне, аттене курма, – пĕлтерет ыйхăллă хĕрача, улт-çич çулхискер. – Пиччесем вулав çуртĕнче, кинора.

Вова урăх пуплесе тăмарĕ. Кăмакари вутă пуленккисене витре ăшне тултарчĕ те тула илсе тухрĕ, пылчăклă çĕр çине пăрахса таптарĕ. Пӳртри шыв витрине çĕклесе лутра пӳрт тăррине улăхрĕ, шывне хĕрсе кайнă мăрье çине чашлаттарчĕ. Вĕре çĕленсем тинех тарса пытанчĕç. Тата икĕ витре сапнă хыççăн, мăрье кăштах сивĕнчĕ. Хăрушлăх иртсе кайрĕ. Вова пӳрт тăрринчен аннă чухне аслă ачисем таврăнчĕç. Инкекрен çăлнăшăн Карпова тав турĕç.

– Малашне асăрхануллă пулăр, – терĕ Вова, юлташĕ семпе сывпуллашнă май. – Пĕчĕккисене киле-çурта пĕччен хăварма юрамасть. Тем пулас-килес. Инкек куçа курăнса килмест теççĕ.

– Вова, эс мĕншĕн ҫара уранах?

– Кӳршĕ ялтан тавраннă чух ҫăпата кантрисем татăлса пĕтрĕҫ. Сирĕн пӳрт ҫине ҫара уранах хăпартăм. Халь ларса канатăп. Кантрисене сыпăп, ура сырăп.

Карпов ял хыҫĕпе килелле утрĕ. Вĕре ҫĕлен юмаххине аса илчĕ. Вĕре ҫĕлен ҫĕрле вĕҫсе килет имĕш. Вут-ҫулăмлă тумтирне хывса пытарать те мăрье витĕр пӳрте сикет. Чипер хĕрача пулса кĕнчеле арлама пуҫлать. Юрла-юрла ĕҫлет. Ун сассине илтсен, кăмака айĕнчи хĕрт-сурт тухать. Ют хĕрача патне йăпшăнса пырать, уринчен кăтăклать. Ҫурҫĕрпе, автансем авăтса ярсан, вĕре ҫĕлен пӳртрен сиккипе тухса тарать. Анчах йăлтăркка тумтирĕ ҫук – шуйттансем пытарнă. Вĕре ҫĕлен, макăра-макăра, масар ҫинелле утать, часрах куҫран ҫухалать. Ҫӳлтен ӳкекен ҫăлтăрсем те ун патнелле чупаҫҫĕ имĕш.

Юмах, юмах. Суеҫсен халапĕ. Чим-ха, ман умра мĕнле пысăк ҫын утать. Пĕр шит те хăпмасть, ниҫтала та пăрăнмасть. Карпов тăпах тăчĕ. Ĕмĕлке те чарăнчĕ. Каллех малалла утрĕ – ĕмĕлке те куҫать. Хай питĕ ҫӳллĕ. «Кам ку, мĕнле тĕлĕнтермĕш? Мана хирĕҫ сăмах хушмасть. Кĕҫĕр мĕнле ытла та тертлĕ вăхăт пулчĕ. Вăтам вĕре ҫĕленсем ман куҫ умĕнче ихĕреҫҫĕ. Шуйттанĕсем ман хыҫра. Ку чĕлхесĕр усалĕ умра тĕнкĕлтетет. Хăрама та, вăтанма та пĕлмест. Мана, ывăнса халран кайнă ачана, хĕрхенесшĕн те мар». Вова ассăн сывласа ячĕ, хура тарне шăлса илчĕ – умра усал ҫухалчĕ, туххăмра таҫта кайса кĕчĕ. «Ă, акă мĕнрен хăранă эпĕ! Пĕр пайăрка ҫӳҫ ҫамка ҫинелле усăнса аннă, куҫа урлă картланă. Вăл мана пит ҫӳллĕ ҫын ĕмĕлки пек курăннă. Питĕ кулăшла. Хам ҫӳҫрен хам хăранă. «Шикли шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ» тесе ахаль каламан ҫав. Хырăм выҫнипе питĕ ывăнтăм.Куҫсем те вăйсăрланчĕҫ, тĕтрелле куракан пулчĕҫ. Ҫитменнине нумай шухăшларăм, шиклентĕм те пулас. Кĕҫĕрхи мыскара пĕтĕмпех ҫавăншăн курăнчĕ.

Ĕлĕкхи ватăсемшĕн вара ҫĕрлехи ҫутăсем те, ҫăлтăр ӳкни те темле тĕшмĕш пек туйăннă.

Вова ҫатан карта урлă каҫрĕ, килне ҫитрĕ.

x x x

Юманлăхра ачасем çӳреççĕ, йĕкел пухаççĕ, шăкăлтатса калаçаççĕ. Вĕсем кунта уроксем хыççăн уçăлса çӳреме килчĕç.

– Эпĕ халиччен йĕкелсене пухса пĕтернĕ пуль тенĕччĕ, – калаçать пĕр ачи. – Ара, юпа уйăхĕ вĕçленсе пырать те.

– Кăçал йĕкел кая юлса пулчĕ. Халĕ тин йышлăн тăкăнма пуçларĕç, – ăнлантарать Вова Карпов.

– Часах каç пулать, ытла нумаях пухаймарăмăр çав.

– Паян эпир асăрхаса çеç çӳретпĕр. Ыран вара пĕтĕм шкул ачисемпе килĕпĕр те пухнă йĕкелне фермăна парăпăр.

– Йĕкелĕ самаях курăнать. Сахалтан та пĕр-ик тонна пухма пулать.

– Тĕрĕс шухăш, ачасем, – килĕшет Карпов. – Ыран канмалли кун. Хамăр вĕрентнĕ вăкăрсене кӳлсех килĕпĕр. Хăшĕсем пуçтарăпăр, ик-виç ача урапапа турттарса тăччăр. Вĕрентекенсем те килĕç.

– Халĕ те киле пушă алăпах каймастпăр. Кашниех пĕрер витре тултаратпăр, – калаçăва хутшăнать белорус ачи... – Вовăпа Венера кутамккасем çĕклерĕç. Вĕсем пысăкрах.

– Кутамккисене черетлĕ çĕклĕпĕр, пурте, – терĕç Петрусьпа Петренко.

– Эп хам витрене килех илсе каятăп, – хирĕçлет Хурчка.

– Пирĕн хамăрăн та сысна пур...

– Эпир сана парăпăр киле, – хăтăрса тăкрĕç ăна ыттисем. – Пирĕн кашнинех кил пур. Анчах халь колхоз выльăхĕсем çинчен ытларах шутламалла. Эпир вуниккĕн кашниех пĕрер витре кутамккапа, ултă пăта яхăн йĕкел сысна фермине парсан, мĕн чухлĕ усă пулать.

– Тĕрĕс, хамăр валли урăх чухне килĕпĕр, – килĕшрĕç пурте.

Ачасем вăрман хĕрне тухсан, канма ларчĕç. Крахмал икерчисене çирĕç. Инçех мар, тăмлă хир хысакĕнчи уçă вырăнта, хăмăртарах тĕслĕ çум курăкĕ курăнса кайрĕ.

Вова ун патне пычĕ. Кĕрхи кăра çилсем унăн çулçисене амантнă, чĕркеленĕ, пĕтĕрнĕ.

– Тусӑмсем, ҫак мӗнле чечекне пӗлетӗр-и?

Ачасем пурте курӑк патне пычӗҫ.

– Уй, эпӗ кун пек чечеке халиччен те курман, – пӗлтерчӗ пӗр хӗрачи.

– Эпӗ пӗлетӗп, – чӑтаймарӗ Вова шӑллӗ, пиччӗшӗ каланине аса илсе. – Ку илӗртмӗш курӑк сайра тӗл пулакан кӑвакал туни. Унӑн вӑрӑ хутаҫҫи тӑрна куҫӗ евӗр курӑнать. Ҫавӑнпа хӑшӗсем ӑна тӑрна куҫӗ тесе те калаҫҫӗ.

– Тусӑмсем, часах хӗвел анать, – васкаса хыпарлать Вова. – Тӑрна куҫӗн чечекӗсем те хупӑнаҫҫӗ. Пурте ун ҫине сӑнаса пӑхӑр.

Вӗренекенсем тӗлӗнтермӗш курӑка тинкерчӗҫ. Унӑн пӗчӗк ҫулҫисем, таптанипе ҫӗр ҫумне выртнӑскерсем, ытти курӑксем хушшинче асамат кӗперӗ евӗр йӑлтӑраҫҫӗ.

Акӑ пӗчӗк чечек ерипен-ерипен пӗрӗнме тытӑнчӗ. Часах пилӗк хӗрлӗ чӗнтӗр пӗрле пӗрлешрӗҫ – чечек парашют пекех хупӑнчӗ.

– Сывӑ пул, чечек! – терӗҫ ачасем хуйхӑллӑн. – Ҫитес кӗркунне эпир каллех сан патна килӗпӗр. Эсӗ ҫурӑлнине асӑрхӑпӑр, пӑхса савӑнӑпӑр.

– Чечек пӗрӗнни хӗвел хуллен анса курӑнми пулнӑ пекех туйӑнчӗ. Юмахри илемлӗ кантӑк алӑксем хупӑннӑ евӗр курӑнчӗ.

Венера курӑк умне чӗркуҫленсе ларчӗ те ӑна аллисемпе унталла-кунталла хумхантарчӗ, тыта-тыта пӑхрӗ. Анчах чечек ҫеҫкисем урӑх сарӑлмарӗҫ.

Хӗвел курӑнми пулчӗ. Сулхӑн ҫил питри тара типӗтет, шӑлса илет. Инҫех мар ула курак лапӑстатса вӗҫет, канмаваскать.

Тавралӑха ӗнтрӗк ҫапрӗ. Кутамкка ҫакнӑ, тулли витресем ҫӗкленӗ пионерсем сысна фермине ҫитрӗҫ.

**x x x**

Йӗкел ачисем Карповсем патне кӗпӗрленсе кӗчӗҫ. Вова амӑшӗ кӑвак качакине суса пӗтерчӗ те сӗтне ҫенӗкелле ҫӗклесе кӗчӗ.

– Малтан кăштах канăр, – хыпарларĕ ачасене кил хуçи хĕрарăмĕ. – Сĕтпе икерчĕ çийĕр. Унтан пурте мунчана кайăр. Мăшăр милĕкне каткана чикнĕ, таса кĕпе-йĕмне лапка çине хунă. – Кивĕрех пулсан та ан тиркешĕр ĕнтĕ. Пирĕн пата хăнана кӳршĕ ялти тутарпа мордва ачисем килчĕç, вĕсем пӳртре иккĕн. Кăмăлĕсем пулсан вĕсем те çăвăнччăр.

– Ултă наци ачисем, – хĕпĕртерĕ Вова. – Питĕ аван. Интернационал мунчи пулать.

– Хутрăм ятăм эп мунча, тĕтĕм тухрĕ явăнса, – терĕ Вова шăллĕ, шӳтлеме юратаканскер.

«Акă мĕнле иккен чăваш мунчи, – шухăшларĕ украина ачи. – Пирĕн патра шурă мунчасем ытларах.»

Хĕрачасем кил хушшинчи вутта сарайне çĕклесçĕ пулас. Петрусьпа Петренко сасси те пур.

– Анне, – лăпкăн чĕнчĕ амăшне кĕсĕн ывăлĕ, çенĕк кантăкĕ витĕр. – Ытлашши йывăр ан ĕçле, чĕрӳ ыратма пуçлĕ. Кĕçĕр каллех ялти тухтăр патне чупмалла пулĕ.

«Эх, анне! 45 çултах ватăлтăн-çке эсĕ. Хуйхă пусрĕ сана, хуйхă», – шухăшларĕ ывăлĕ.

– Юрать, ывăлăм, – илтĕнчĕ йăваш сасă. – Эпĕ вăрахăн çех. Хĕрачасем хăйсемех тимлĕ ĕçлесçĕ. Вутă сыпписене çĕклесен те чупнă пекех утасçĕ.

– Укçине аппа, мунча çумĕнчи çĕмĕрт çинче кашни каçах тăмана авăтать, тĕвиклетет теççĕ. Эсир хăвăр илтнĕ-и? – ыйтрĕ кӳршĕ хĕрачи, мунча кĕме килнĕскер.

– Тăмана ӳхĕрсен, çын вилет тени тĕрĕсех-и тата? – кăсăкланчĕ вырăс хĕрачи.

– Э, пур тĕшмĕше те ĕненес пулсан, тĕнчере çын та юлас çук, веçех вилсе пĕтмелле, – çиллес ăнлантарать аппа. – Мана та, хĕр чухнех, юмăç карчăкĕ – суеçĕ çапла каларĕ: «Мăнкун эрнинче вилетĕн» терĕ. Анчах эпĕ халĕ те пурăнатăп-ха. Сывă мар пулин те, йывăр вăхăт пулсан та хуллен çӳрекелетĕп. Нихăçан та, нимĕнле тĕшмĕше те ан ĕненĕр, ачасем. Вара телейлĕ пулăр.

– Армак-чармак арçури вăрманта, куçа курăнми хĕртсурт кăмака айĕнче тата вĕре çĕлен пĕлĕт çинче пурăнаççĕ тени тĕрĕс-и? – тĕпкĕчлет тепри.

– Шуйттан-усал тĕттĕм вăрманта тата йĕрĕх-киремет çырма-çатрара çӳреççĕ имĕш, – хушса хучĕ виççĕмĕш хĕрачи. – Вупăрпа тухатмăш...

– Çĕр çинче ун пек чĕрчунсем çук, эпĕ нихăçан та курман, – хăй пĕлнине каласа парать Вова амăшĕ. – Вĕсене веçех çынсем шутласа кăларнă, юмах туса авалтанпах каланă. Пире чухăн та тĕттĕм çынсене хăратнă, ĕнентернĕ. Тухатмăш тухатать-пăсать, вупăр пусать тесе суеçĕ те юмахçăсем каланă. Вĕсене халь никам та ĕненмест.

– Ĕмĕрсем хушшинче пирĕн çĕршыв çине хура çăханпа çăткăн тăшмансем сахал мар килнĕ, тискер кайăксем пек иртĕхнĕ, – тет Петренко. – Анчах Раççей халăхĕ вĕсене ытти тăванла халăхсемпе пĕрле кашнинчех вĕри мунча кĕртсе, тапкăпа ислетсе янă.

– Çакăн пек пулнă, çавăн пекех пулĕ халĕ те, – çиллессĕн сăмах хушать Ленинград ачи.

– Вĕри мунча пулĕ нимĕççене, – хушса хучĕ Карпов кĕçĕнни. – Тип мунча, юнлă мунча!

– Фашистсене тип шар кĕтет, тип шар! – калаçăва вĕçлерĕ Вова.

---

## Эсĕ пионер пулсан...

Хура кĕркунне. Ирхине. Тĕтре. Йĕпхӳ. Шкул коридорĕнче ачасем туллиех. Калаçаççĕ, хушăран тĕккелешсе илеççĕ. Акă кăмака умĕнче пилĕк-ултă пысăкрах ача калаçса тăраççĕ. Хĕрачасем те, арçын ачасем те пур.

– Эсир пулас салтаксем, – тет пĕр хĕрачи, арçын ачасем çинелле пăхса. – Сирĕн хăюллă та çирĕп пулмалла. Пурнăçри йывăр ĕçсем сирĕн çине ытларах лекеççĕ. Анчах чăрсăр та кăнттам е ытлашши хăюсăр та именчĕк пулас марччĕ. Тепĕр чухне тата юлхав пулни, суеçтерни чăрмантарать хăш-пĕрисене.

– Сире кăмăллă та ĕçчен, сăпай та çепĕç пулни килĕшет, – хуравлать арçын ача. – Йĕркеллĕ-типтерлĕ хĕрача нихăçан та çăмăлттай-вĕçкĕн мар. Вăл мĕн пĕчĕкренех апат пĕçерме, çĕвĕ çĕлеме хăнăхнă ĕнтĕ.

– Арçын ачасене тавçăрулăх, хĕрачасене çаврăнăçулăх кирлĕ.

– Çакна арçын ача юлташ та, хĕрача тус та ан мантăр. Эпир халĕ пĕчĕк ачасем мар, вунтăват-вунпилĕк çулта.

Калаçакансем патне Кавĕрле пычĕ.

– Эсир юлташпа тус çинчен сӳтсе яватăр иккен. Пирĕн Вовăпа Венера пек пулмалла. Вырăс хĕрачисем те шукăль тумланса çӳреççĕ. Хайсем чипер.

– Çын илемĕ-хакĕ сăн-питпе тумтирте çех мар, – хуравлать ăна юлташĕ. – Унăн кăмăлĕпе ăс-хакăлĕнче, ĕçĕ-хĕлĕнче. Çакă чи кирли.

– Пирĕн шкулти арçын ачасемпе хĕрачасем килĕштерсе, туслă пурăнаççĕ. Пĕр-пĕрне хисеплеççĕ, вĕренӳре яланах пулăшаççĕ. Лăпкăн та шăкăл-шăкăл калаçаççĕ. Юлташĕн йăнăш-çитменлĕхĕсене çийĕнчех асăрхаççĕ, вĕсене пĕрле пĕтереççĕ.

Коридорăн леш кĕтесĕнчи тепĕр ушкăн мĕн сӳтсе явать тата. Итлесе пăхар.

Паян манăн юратнă уроксем пулаççĕ. Математикăпа физика.

– Эпĕ историпе литературăна юрататăп.

– Маншăн химипе биологи çăмăлтарах.

– А эпĕ тата юмах урокĕсене юрататăп, – пĕлтерет пĕрремĕш класри хĕрача, икĕ аллипе тутăр кĕтессине тӳрлетсе. – Эпĕ, шкула киличченех вулама вĕрентĕм. Пичче пулăшрĕ.

– Шкулта вĕрентекен предметсем пурте кирлĕ, усăллă, – тет Вова Карпов. – Вĕсене юратас пулать.

– Çулла уй-хирте лайăх ĕçлерĕмĕр, халĕ шкулта тăрăшса вĕренĕпĕр, – тет Вова шăллĕ.

– Лайăх вĕренесси – çăмăл ĕç мар çав, – ассăн сывласа каларĕ Миронов. – Авăн уйăхĕнче мана вырăс чĕлхине вĕренме йывăрччĕ. Ăна учительсем çийĕнчех сисрĕç, кулленех пулăшрĕç. Халĕ япăх паллăсем çук.

– Эпĕ задачăсене хăвăртрах чухласа илейместĕп, – пĕлтерчĕ тепĕр ачи. – Мана класс руководителĕпе юлташсем тăтăшах пулăшаççĕ. Хам та тăрăшатăп. Октябрь уявне лайăх паллăсемпе кĕтсе илме ĕмĕтленетĕп.

Юлташсен калаçăвне класри стена хаçат редакторĕ илтрĕ те çапла хушса хучĕ:

– Стена хаçачĕ, сире иксĕре, йĕплĕ çăмах сахал мар хыптарчĕ. Вăл та кăштах пулăшрĕ пулас.

– Тĕрĕс, – килĕшрĕç лешсем. – Унтрин кулăшла ӳкерчĕкĕсене эпир нихăçан манмăпăр, халĕ хамăр та ӳкерчĕксем тума юрататпăр.

– Ара, вĕренӳре кая юлса пыни хамăрах аван мар, – терĕç малалла Мироновпа юлташĕ. – Юлташсене, шкула намăс кӳретпĕр.

– Ку çеç те мар-ха, – тӳрлетрĕ вĕсене Карпов. – Йĕркене пăсни тата япăх вĕренни – Тăван çĕршыва намăс кӳни пулать. Фронтри аттесемпе пиччесем пире мĕн калĕç?

Шкул директорĕ тепĕртак уçă алăк умĕнче тăрса çак калаçăва илтрĕ. «Тĕрĕс калаççĕ вĕсем, – шухăшларĕ вăл. – Пирĕн шкулти ачасем пурте йĕркеллĕ вĕренсе пыраççĕ. Мироновпа Сергеев çех начартарахчĕ. Халĕ вĕсем те тăрăшаççĕ. Вĕренӳ чĕрĕкне пĕр япăх паллă-

сăр вĕçлеме шанчăк пур. Хальхи шкул ачисем – тылри пĕчĕк паттăрсем. Вĕсене халăх манмĕ, пулас ăрусем ырăпа аса илĕç».

Коридорпа виçĕ хĕрача калаçса пыраççĕ.

– Эх, Октябрь уявĕ çитет, галстуксем çук.

– Пирĕн çемьере виçĕ пионер. Анне килте тĕртнĕ пире хĕретрĕ те галстуксем çĕлесе пачĕ.

– Эпир хĕретнĕ хаçатран пĕчĕк ялавсем турăмăр. Хапха çине çакмаллине кивĕ тутăртан ăсталарăмăр.

Эвакур ачисем килсе кĕчĕç. Малта Гена Петров, Ленинград патĕнчи вырăс, ун хыççăн Петрусьпе Петренко тата Сучковăпа Гуськова хĕрачасем. Вĕсем пурте пиллĕкĕмĕш класра вĕренеççĕ. Вунă çулхи виçĕ ача «3-мĕш класс» тесе çырнă пӳлĕме кĕрсе кайрĕç.

Алăк патĕнчи чӳрече чăнкăртатса илчĕ.

– Хурчка каллех кантăк çĕмĕрчĕ! – кăшкăрса ячĕç пĕчĕк ачасем.

– Ĕнер киле кайнă чух пире кутран тапрĕ, тумтирсене пылчăкларĕ. Паян та класри дежурная такăнтарса ӳкерчĕ.

– Хирти çулсем тăрăх маяксем лартма та пымасть.

Çавăнпа ăна шкулти «Вĕренӳшĕн» ятлă стена хаçачĕ çине кăларнă та. Ака кулăшла ӳкерчĕксене пăхăр, – аллипе тĕллесе кăтартрĕ коридорти дежурнăй хĕрача, сулахай хулне хĕрлĕ татăк çыхнăскер.

– Эх, Миронов, кăштах вăтанма пĕлетĕн-и? – çиллес калать Ларченко. – Пире вĕрентесшĕн пурте тăрăшаççĕ. Тăлăх ачасене тата пире ăшă тумтирсем пачĕç. Нушаллисене те пулăшаççĕ. Кунти çирĕп йĕрке, ачасен ăнтăлăвĕ тата аслисене итлени мана килĕшет. Ял Совечĕпе колхоз пире манмаççĕ. Шкулпа çемье туслă.

Миронов тулалла чупса тухрĕ, часах пĕчĕк кантăк куçне çĕклесе кĕчĕ.

– Акă курăр, – пĕлтерчĕ вăл хĕпĕртенипе. – Çĕмĕрĕлмен, кăшт çех вараланнă. Халех вырнаçтарса лартатăп. Ĕнер шкултан таврăннă чух, хĕрачасене вылямалла çеç сĕртĕнтĕм. Дежурная та асăрхамасăр пырса çулăнтăм. Айăплă. Каçарăр.

Урăх ун пек аташмастăп. Маяксем те туса хатĕрлерĕм, хĕрĕх ытла. Паян уроксем хыççăнах кайса лартăпăр. Пулăшма пыракан пулмасан, пĕчĕк урапапа пĕчченех туртса каятăп.

– Кӳршĕри ачасем пурте пыратпăр, Кавĕрле. Ан хăра.

Шăнкăрав сасси уроксем пусланнине пĕлтерчĕ.

**x x x**

Çиччĕмĕш класри ачасем истори вĕренеççĕ. Килти ĕçе тĕрĕслерĕç. Класри çирĕм çичĕ ачаран Карповпа Ларченко «пит аван», виççĕшĕ «аван» паллăсем илчĕç. Ултă вĕренекен хуравне учительница «вăтам» тесе хакларĕ. «Япăх» паллă илекен пулмарĕ. Ун хыççăн вăл урока вырăсла тата чăвашла ăнлантарса пачĕ. Мускав пусланса кайни, вырăс патшалăх аталанни, ют çĕршыв эшкерĕсемпе кĕрешни çинчен каларĕ. Невскипе Донской, Суворовпа Кутузов ячĕсене асăнчĕ. Доска çине «Кам пирĕн çине хĕçпе килет, хĕçрен хăех пĕтет» тесе çырса хучĕ. Юлашкинчен истори кĕнекине вуларĕç, картă çинче кăтартрĕç. Тăваттăмĕш класра вĕреннисене те аса илчĕç.

– Ачасем, – терĕ вĕрентекен юлашкинчен. – Урок пĕтесси тата вунă минут юлчĕ. Халĕ эсир хăвăр тĕллĕн ĕçлĕр. Пирĕн халăх тăшманĕсемпе яланах паттăрла кĕрешни çинчен аса илĕр. «Тăван çĕршыва хӳтĕлени» ятлă пĕчĕк план тăвăр. Кам пултарать, ун тăрăх калаçу ирттерме хушăпăр. Кĕçĕнрех классенче е шкулти вĕренекенсен пухăвĕнче. – Манăн хальхи вăрçă çинчен çырас кăмăл пур. Ун пек тума юрать-и? – ыйтрĕ Вова.

– Юрать, – килĕшрĕ вĕренеткен. – Вара калаçу ячĕ те улшăнать.

Вĕренекенсем ĕçе тытăнчĕç. Шăп. Хыçалти иккĕмĕш партăра кăмака тĕлĕнче Венера ларать. Хăвăрт çырать, хушăран Вова çине пăха-пăха илет. Тулта тĕксĕм. Карта çинче çерçисем лараççĕ, самантлăха çĕре анаççĕ, сиккелесе çӳреççĕ. Вова, вĕсем çине тишкернĕ май, вăрçă çинчен шухăшлать. Вулав çуртĕнчи пĕр ӳкерчĕке аса илчĕ. Унта нушаллă хĕрарăма сăнланă. Çара пуçăн, куççуллĕ. Аллинче

çар присяги. Вăрçă хирĕнчи çак хĕрарăм пӳрнипе тĕллесе, çапла калать «Çĕршыв-анне хушать: тăшмана тытса чарăр!» «Атте! Темле йывăр пулсан та каялла урăх ан чакăр. Тытса чарăр тăшмана. Мĕнле те пулин чарăр! Çулне пӳлĕр, картлăр. Çакăн пек хушать çĕршыв, халăх. Çакăн пек ыйтатăп эпĕ, атте! Йывăр, питĕ йывăр тетĕн-и, атте? Пĕлетпĕр ăна, анчах пире те çăмăл мар. «Эсĕ пионер пулсан»... тесе каласшăн-и? Çапла, эпĕ пионер. Çавăнпа лайăх вĕренетĕп. Вăй çитнĕ таран куллен ĕçлетĕп. Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшма тăрăшатăп. Эпĕ çех мар, пурте пулăшаççĕ. Пĕтĕм халăх тăрăшать. Атте! Сан умăнта пионерла сăмах паратăп, тупа тăватăп.

Йывăр кунсем. Тăшман халлĕхе вăйлă. Вăл кунталлах тапаланать. Мускаври хăш-пĕр правительство Куйбышева куçнă. Ленинград блокадăра. Юлашки вăхăтра Орелпа Калинин тата Харьковпа Курск хулисене хăварнă терĕç. Анчах эпир хăраса ӳкмен, шанăçа çухатман. Пирĕн халăх ура çине тăчĕ. Нимĕçсене çурçĕр енче чарса лартнă. Ельня, Смоленск хулисем патĕнче нумайлăха тытса чарнă, вăйлăн аркатнă. Берлин çине пирĕн бомбăсем ӳкеççĕ. Часах тăшмана пур çĕрте те чарса лартăпăр, унтан çĕнтерĕпĕр. Пирĕн вăй-хал иксĕлми. Фашистсен шăпи тулатех.

Тăван çĕршыв! Юрататăп эпĕ сана! Сан тивлетӳпе эпĕ вĕренетĕп, ĕçлетĕп. Эсĕ маншăн пӳртри хуп сăпкаран, пахчари чиепе çеремлĕ урамри йăмраран пуçланатăн. Унтан шкул, униче, Ентер шывĕ, вăрманĕпе уй-хирсем. Тата Мускав, пĕтĕм çĕршывпа халăх. Çаксем пурте манăн Тăван çĕршыв. Унăн туйăмĕ ман асран нихăçан та тухас çук. Эсĕ манăн шанчăк, пурнăç!

Пурнăç! Юрататăп эпĕ сана, пурнăç! Саншăн тăрăшатпăр, кĕрешетпĕр те. Ирсĕр тăшмансем халĕ сана таптасшăн, пĕтересшĕн. Анчах пурнăç вилĕмсĕр».

– Атте! – сасăпах каласа ячĕ Вова.

Пурте ун çине çаврăнса пăхрĕç. Тĕлĕнчĕç, хĕрхенчĕç.

– Каçарăр. Эпĕ шухăша кайнăччĕ те, – тунсăхлăн пĕлтерчĕ Карпов.

«Ашшĕ çинчен яланах шухăшлать, – аса илчĕ Венера. – Нумай вĕренет, пĕрмай ĕçлет. Килти пĕтĕм хуçалăх ун çинче. Шел ăна. Чирлесе ан кайтăр. паянах Полина Карповнăна систерес. Çула май кĕрсе тухтăр».

«Эпĕ йывăрлăхсенчен хăрамастăп, Çĕнтерĕве ĕмĕтленетĕп. Ĕмĕтленетĕп çех мар, кĕтетĕп. Часах уяртĕ, хĕвел курăнĕ» çырса хучĕ юлашкинчен Вова Карпов.

x x x

Уроксем хыççăн Карпов килелле пĕчченех утрĕ. Пахча хыçĕнчи пĕчĕк кĕпер патне çитрĕ. Ун çывăхĕнче çырма хĕррипе тĕрлĕ йывăçсем чылай. Кăшт аяккарах лапсăркка та ватă çĕмĕрт ӳсет. Вăл иртен-çӳрене хăй патне кăмăллăн чĕнет.

«Сывă-и, çĕмĕрт тусăм? – пуплет Вова. – Эпир иксĕмĕр мĕн пĕчĕкренех туслă. Ирхине шкула васкаса чупнă чухне, çулçусене вылятса ăшшăн саламлатăн. «Паян та лайăх паллăсем илсе кил», – тетĕн. Киле таврăннă чухне çакăн пек канаш паратăн: «Уроксене тĕплĕн хатĕрлен, паянхи ĕçе ырана ан хăвар».

Чим, ку мĕн сасси? Э, йывăçсем пуплеççĕ иккен.

– Эсĕ лутра та çатрака, – ӳпкелешет чăрăш, йĕпписене çĕмĕрт çинелле ывăтса.

– Хам пĕчĕк пулсан та манăн кăнтăрти тăвансем йăмраран та çӳллĕ, çулçи те шит ытла, – хирĕçлет çĕмĕрт. – Эсĕ вара, ĕлĕкхи патша салтакĕ пек, яланах пĕр тĕслĕ кĕпепе.

– Эпĕ ĕмĕрĕпех симĕс пулин те, усаллă йывăç.

– Манран та этем сĕтел-пукан тăвать, лăпă-карçинкка ăсталать, – хыттăнах хуравлать çĕмĕрт. Çуна-урапа ăсталанă чух та кирлĕ. Сыв маррисене эмелĕме сĕнетĕп. Мана, çынсем пиçĕ те çирĕп, йăмра-тирек пек патрак е ăвăс евĕр çатăлти мар тесе мухтаççĕ.

– Вăрман çӳçи санран маларах илемлĕ кăчкă кăларать, – парăмра юлмасть чăрăш. – Кĕрхи вĕрене те сап-сарă тутăрлă, çапах вĕсем мухтанмаççĕ.

– Хурăн пăхма илемлĕ, – илтмĕш пулчĕ çĕмĕрт. – Касса пăрахсан вара – унăн йывăççи часах кăпăшкаланса каять.

– Тавлашса ҫитĕ, тусăмсем, – сăпайлăн чарчĕ вĕсене патвар юман. – Пĕр-пĕрин кăлтăкĕсемшĕн чĕрре кĕмĕпĕр, лăпкă пурăнăпăр.

– Тĕрĕс, – килĕшрĕҫ пурте, – кашни йывăҫах хăйне евĕр илемлĕ, этемшĕн усăллă.

Ҫырма хĕрринчи йывăҫсем тавлашма чарăнчĕҫ, ҫилпе хумханнă май каллех туслăн калаҫма тытăнчĕҫ. Вова кĕпер урлă каҫса хăйсен пахчине кĕчĕ.

---

## Аттесем вăрçăра чухне

Хĕл пуçланчĕ. Çанталăк питĕ сивĕ тăрать. Каçалапа шкулта уроксем пĕтрĕç. Ачасем килĕсене саланаççĕ.

– Ых, паян кунĕпех ура шăнса ларчĕ, – чĕтре-чĕтре пĕлтерет иккĕмĕш клас ачи.

– Манăн тата çăпати те, йĕмĕ те çĕтĕк...

– Шкулĕ сивĕ çав, чернилсем те шăнса лараççĕ.

– Кĕнекесем, хут-кăранташсем те çитмеççĕ.

– Эпĕ халĕ кивĕ кĕнекесем çине çыратăп. Йĕркесем хушшинчи шурă йĕр вырăна.

– Эпĕ те юман çăпанĕнчен чернил тума вĕрентĕм, – хавхаланса пĕлтерет аслăрах арçын ача. – Йăмăкпа иксĕмĕр вăрмана кайса юман çулçисем çинчи хăмăрланнă муклашкасене пухрăмăр. Тăм кружкă çине тăват-пилĕк çăпан тата тутăхнă тимĕр татăкĕ ятăмăр. Ăшă шыв тултарса кăмака çинче ик-виç кун йӳçĕтрĕмĕр. Паха чернилах пулчĕ, сарăрах хăмăр тĕслĕ çырать.

– Тимĕр тутăхĕ тĕслĕ эппин, – чăтаймарĕ тепĕр юлташĕ.

– Ачасем, халь тетрадь вырăнне кĕнеке çине çыратпăр, – кăсăкланчĕ виççĕмĕшĕ. – Килтех чернил тума вĕрентĕмĕр. А кăранташсем пĕтсен мĕнпе çырăпăр?

– Ан хăра. Авă эвакур ачисем грифельсемпе çыраççĕ.

– Грифель хăми те, грифель тетрачĕсем те пур, – хушса хучĕ тепĕр вĕренекенĕ. – Темле йывăр пулсан та тăрăшсах вĕренĕпĕр. Вăрçăри атте-пиччесенчен намăс пулмĕ. Ытлашши йывăрах мар, ачасем. Шкулта кашни кунах вĕри апат çитереççĕ. Колхоз та пулăшать. Классенче те чăтаймиех сивĕ мар. Акă çитес канмалли кун хамăр вăрмана вут-шанкă хатĕрлеме каяççĕ. Вĕсемпе пĕрле аслăрах классенче вĕренекенсемпе ашшĕ-амăшĕсем те пулаççĕ.

– Тĕрĕс, пичче, – сăмах хушать пĕр хĕрачи. – Шкулта апат çитермесен, йывăр пулĕччĕ. Акă эпĕ паян шкула выçах тухса килтĕм.

– Эпĕ икĕ пиçнĕ çĕр улми чиксе килтĕм.

– Эпӗ терка икерчин ҫуррине ҫех. Вӑл та тӑварсӑрччӗ. Пирӗн килте тӑвар йӑлтах пӗтрӗ. Юрать-ха колхоз кӗлетӗнчен пачӗҫ.

– Пирӗн те килте краҫҫын пӗтрӗ, уроксене тӗттӗмччен вӗренетӗп. Ҫӗрле ҫурта е хӑйӑ ҫутатпӑр.

– Эпир те крахмал кӗселӗ пӗҫеретпӗр. Кӗпесене кӗл шывӗпе ухатпӑр. Ҫывӑрма ӑшӑ пултӑр тесе кӑмакана каҫхине кӑна хутатпӑр. Пирӗн килти йӑмра вуттиех пур-ха, кӗркунне тирек те касрӑмӑр.

– Эй, ачасем, ан хӑрӑр, – ҫирӗппӗн калать тепри, пуҫӗнчи кивӗ ҫӗлӗкне пусарах лартса. – Ӗлӗк пирӗн аттесем йӗкел ҫӑнӑхӗ те, мӑян яшки те ҫинӗ. Ҫапах выҫлӑха парӑнман. Халӗ Совет влаҫӗ, пире пӑрахмӗҫ.

– Ҫӗнӗ ҫул тӗлне хамӑр лавккана тӑварпа краҫҫын та, супӑньпе шӑрпӑк та илсе килеҫҫӗ, – ӑнлантарать Вова Карпов шӑллӗ. – Вара кашни килех список тӑрӑх параҫҫӗ. Патшалӑх халӑха манмасть, темле йывӑр пулсан та пулӑшатех.

– Енчен те пирӗн шкул тӗкӗнсех ҫитмен, йывӑрлӑхсем пулин те. Вутӑ ҫук мар-ха. Кӗнеке-тетрадьсемпе ручкӑ-кӑранташ кӑҫаллӑха ҫитет. Ӑна пире Полина Карповна хӑй каларӗ.

Ял ҫине каҫхи ӗнтрӗк анчӗ.

– Ы-ых, кӗҫӗр те питӗ сивӗ пулать ӗнтӗ, – ҫӳҫенсе илчӗ пӗр хӗрачи. – Паян ирхине виҫӗ хӗвелччӗ, ҫапах ман сӑмсана шап-шур тӑм илсе лартрӗ.

– Пирӗн ҫӑлти шыв та тан тапсах шӑннӑ. Эпӗ шыв ӑсма тухрӑм та ман ума ҫерҫи палт пырса ӳкрӗ. Хӑй шӑнса кӳтнӗ.

– Пирӗн аппа та урамран кӑсӑя тупса кӗчӗ. Кӑмака ҫине ҫӗлӗкпе чӗркесе хутӑмӑр та кӑнтӑрлачченех сывалчӗ, вӗҫме пуҫларӗ. Халӗ ӑна читлӗхрех усратпӑр, ӑшӑтиччен пурӑнтӑр.

– Ахальтен мар раштава хура уйӑх теҫҫӗ ҫав, – пӗлтерет вӗренӳ отличникӗ. – Ҫӗрӗ питӗ вӑрӑм, хӗвеллӗ кунсемпе уйӑхлӑ каҫсем сахал пулаҫҫӗ.

– Кăçал сивĕ хĕрĕх градусран та иртрĕ, теççĕ.

– Ентер улăхĕнчи айлăмра хĕрĕх ултта çитнĕ тет. Пире вĕрентекен калаcа пачĕ...

Çырма хĕрринчи ватă йăмра, кинемей пек тайлăкскер, шартлатса çурăлса кайрĕ. Ачасем те шартах сикрĕç. Килелле сиккипех чуптарчĕç. Пас тытнă йывăçсем çăмламас çĕлĕк тăхăннă ватăсем пекех туйăнаççĕ, темле мăннăн курăнаççĕ.

Вĕренекен ачасем, шакăлтатса калаçса, кусран çухалчĕç. Ял шăпланчĕ. Шкул мастерскойĕнче кăна ĕç шавĕ янăраса тăрать. Пĕчĕк пӳлĕмре тан-тан тутарни, шак-шак шаккани тата пăчкă-пуртă сасси урамалла тухать, çырма тăрăх тавpана саланать. Çиччĕмĕш класри арçын ачасем йĕлтĕрсем сăйлаççĕ, аваççĕ, шăтараççĕ, кантрисене тиреççĕ. Вĕсене ĕç учителĕпе ялти тепĕр ватă мучи пулăшаççĕ.

– Маттур ачасем, – хавхалантарать вĕрентекенĕ ачасене. – Хĕрлĕ Çар валли часах вăтăр мăшăр йĕлтĕр хатĕр пулать.

– Йĕлтĕрсем хатĕр, анчах вĕсене валли чĕн сахалтарах-ха. Мĕн тумалла, чĕнне ăçтан тупмалла? – кăсăкланчĕ пĕр ачи.

– Камăн килте пур, илсе килме пултараççĕ, – пĕлтерет вĕрентекен. – Шкулăн та, колхозăн та чĕн урăх çук.

– Тупатпăр, килтисенех илсе килетпĕр, – илтĕнчĕ темиçе сасă.

– Туййине те хамăрах ăсталама пултаратпăр, – хушса хучĕ ватă çын, ачасене пулăшма пынăскер. – Аслăрах вĕренекенсене шĕшкĕ хунавĕсем касса килме хушăпăр. Çĕмĕртрен авса ункисене ăсталăпăр.

– Тавах сире, мучи.

– Бамбук туййисем çитмен чухне шĕшкĕ патаксемпе усă курĕç. Чăваш йывăççисене аса илĕç.

– Эпир те, ялти ватă арçынсем, хамăр килсенче вăрçă валли çунасем тăватпăр, – хушса хурать çитмĕл çулхи ватă, шап-шур сухалне шăла-шăла.

Пӳлĕме çиччĕмĕш класри вунă хĕрача кĕрсе тăчĕç. Хăйсем кăмăллă.

– Эсир халӗ те шаккатăр-и? – терӗ вӗсенчен пӗри, пысăкраххи. – Эпир киле кайма тухрăмăр.

– Икӗ эрнере вăтăр мăшăр йӗлтӗр турăмăр, – шахвăртатать Вова Карпов. – Эсир вара фронта валли мӗн хатӗрлерӗр?

– У-у, – харăсах илтӗнчӗ темиҫе сасă. – Хӗрачасем сирӗнтен тимлӗрех ӗҫлерӗҫ. Ҫак эрнере кашни пӗрер фуфайка е ăшă шăлавар ҫӗлесе пӗтеретпӗр. Унтан алсасем...

– Э, сире ялти хӗрсем те пулăшаҫҫӗ-иҫ, – хушса хучӗ арҫын ачи.

– Вӗсем кӗрӗксем, мулаххайсем ҫӗлеҫҫӗ, – илтӗнчӗ хурав. – Пире те пулăшаҫҫӗ.

– Хăшӗсем, пӗчӗкреххисем, алсиш-нуски ҫыхаҫҫӗ.

– Вӗсене пирӗн килте те ик-виҫ мăшăр ҫыхрӗҫ ӗнтӗ.

– Пирӗн асатте тата салтаксем валли каҫата йăвалать.

– Каҫата тумалли пӳлӗм хамăр колхоз мастерскойӗнче те ӗҫлеме тытăнать, – пӗлтерет вӗрентекен. – Ҫитес кунсенчех.

– Унта пирӗн аслă кукка ҫичӗ килограмм ҫăм та пачӗ, – пӗлтерчӗ тепӗр ачи.

– Сăмса тутрисемпе тапак хутаҫҫисем тата мӗн чухлӗ хатӗрлерӗмӗр. Икӗ хутчен фронта ярса патăмăр.

Мастерскойне шкул директорӗ пырса кӗчӗ. Вӗренекенсем шăпланчӗҫ.

– ... Ачасем, паянлăха ҫитӗ, – пӗлтерчӗ вăл. – Килтисене пулăшмалла тата, халӗ эсир ҫемье тӗрекӗ.

– Аттесем ҫук чухне эпир те кил хуҫи пекех, – ассăн сывласа каларӗ Карпов.

– Эпӗ киле ҫитсе апат ҫисен кăштах канатăп та уроксене хатӗрлетӗп, – пӗлтерчӗ тепӗр ачи. – Унтан ытти ӗҫсене тăвагăп.

– Ҫитӗ, ачасем. Сыв пулăр, – калаҫăва вӗҫлерӗ шкул директорӗ.

Вăрманта шанкă хатӗрлеҫҫӗ. Хăрăк туратсем шăрт-шарт хуҫăлни, кăч-кăч касни илтӗнет. Ҫывăхри ҫăка хăвăлне улатакка таккать. Ҫынсем кăшкăрса калаҫаҫҫӗ.

– Вова, кунти юман тураттисене пĕччен сĕтерсе кăлараймастăп, çырми самаях чăнкă, – пулăшу ыйтать Ларченко.

– Пыратăп, Венера, – илтĕнет хурав. – Йышпа кăларăпăр. Хам хатĕрленине сукмак çине илсе тухам-ха.

– Эпир те кĕçех çитетпĕр, – илтĕнчĕç çинçе сасăсем. Ĕçлекенсем пурте васкаççĕ. Авă Вова пурттине сулахай хул хушшине хĕстернĕ, тепĕр аллипе хăрăк туратсене сĕтĕрнĕ. Шăллĕ те унпа пĕрле. Икĕ хĕрача вăрăм çунашки çине юманпа хурама тураттисене, пĕчĕкки çине – хăрăк шĕшкĕсене тиеççĕ.

Çил тухрĕ. Вăрман шавлама тытăнчĕ. Хуçалнă йывăç чĕриклетет. Йĕпе тăман çăвать.

– Ну, тантăшсем, – шӳтлет Вова. – Эпĕ варринчи кантрапа кӳлĕнем. Эсир хĕрринчисенчен тытăр.

– Юрать, – килĕшрĕç хĕрачасем.

Çӳллĕ тиенĕ икĕ çунашка вырăнтан тапранчĕç. Ачасем вĕсене пĕтĕм вăйпа туртаççĕ.

– «Карповран тар шăрши перет кăна, – шухăшлать украинка, унпа юнашар туртса пынă май. – Ĕçчен ача вăл». «Ку белорус хĕрачи пĕчĕклех ĕçе хăнăхнă. Çунашкана ăслайлă туртать», – хăй ăсĕнче шутлать Карпов-кĕçĕнни.

Ывăннă çамрăксем вăрман хĕрне тухрĕç, тункатасем çине канма ларчĕç. Вова, ял енне пăхнă май, ассăн сывласа илчĕ: «Йывăр кунсем, йывăр урапа-çунасем, кутамккасем. Хăçан аттесем таврăнĕç-ши?»

– Авă лав килет, – пӳрнепе тĕллет вырăс хĕрачи. – Вăл çула якатать. Киле кайма çăмăлтарах пулĕ.

Лаша çитсе чарăнчĕ. Çуна çине ял Совечĕпе колхоз председателĕсем тата шкул директорĕ ларнă иккен. Пуçлăхсем çĕре анчĕç те вĕренекенсем патне пычĕç.

– Ара, каçа хирĕç ăста каятăр? – тĕлĕнчĕ вĕрентекен.

– Килелле шуçтаратпăр, – хуравларĕ тахăшĕ.

– Çак вырăнтан сирĕн пата çитме миçе çухрăм? – шахвăртса ыйтрĕ Яковлев.

– Виçĕ километр.

– Сирĕн ыран хутмалăх та вутă çук-и? – тĕпкĕчлет колхоз председателĕ.

– Пур. Кĕркуннех виçĕ лав кӳтĕмĕр.

– Апла пулсан, мĕншĕн-ха çав териех муритленетĕр? – кăмăлсăрланчĕç ватăсем. – Çулĕ сăпрам, çунашкисем йывăр. Çитменнине çил-тăман вĕçтерет.

– Эпир муритленместпĕр, – пĕр харăс каларĕç инçетрен куçса килнĕ хĕрачасем. – Уроксем хыççăн уçăлмалла çех килтĕмĕр. Ун чухне çанталăк лăпкăччĕ.

– Вутти пирĕн çук мар. Ку шанкăсем тимĕр кăмака валли, – хушса хучĕ Вова шăллĕ. – Хамăр патра пурăнакан хăнасене ăшă пӳртре усрас килет.

Хĕрачасем пуçĕсене чикрĕç, тунсăхларĕç. «Пирĕн ăшра вут çунать, çулăм тухни курăнмасть», – терĕç пулас. Вĕсен куççулĕ кивĕ тумтирĕсем çине тумларĕ. Çакна Вова Карпов асăрхарĕ, пуçне аяккалла пăрчĕ те куçĕсене шăла-шăла илчĕ.

– Пирĕн ачалăх вăрçăпа пиçĕхет, ĕçре туптанать, – хуйхăллăн пĕлтерчĕç ыттисем. – Ачалăхран эпĕ вăхăтсăрах уйрăлнă ĕнтĕ.

– Ан кулянăр, тусăмсем, – лăплантарчĕ председатель ачасене,– сире халăх хĕрхенет. Вăрçă пĕтсен, пурнăç лайăхланĕ, пурте телейлĕ пулăр. – Унтан вăл юлташĕсем çине пăхрĕ те çапла хушса хучĕ:

– Эсир хуланалла ерипен утăр. Эпĕ часах каялла таврăнатăп. Каçчен районти канашлăва ĕлкĕретпĕр.

– Алексей Яковлевич, – ыйтрĕç Карповсем. – Лашипе эпир хамăрах кайма пултаратпăр, каялла та килсе парăпăр. Сирĕн васкамалла пулĕ.

– Э, апла юрамасть. Эсир питĕ ĕшеннĕ. Киле çитсен, кăштах канмалла, унтан вĕренмелле.

– Лайăх вĕренни – фронта пулăшниех пулать, – хушса хучĕ Полина Карповна.

– Вутă пĕтсен е çимелли сахаллансан, правленине пырăр. Пулăшăпăр, – канаш пачĕ Львова.

Венера хĕрарăм-пуçлăхсем еннелле çаврăнчĕ те:

– Каçарăр пире, тархасшăн, чăрмантартăмăр, – терĕ.

– Эй, ҫамрӑк гварди, кайрӑмӑр, – васкатрӗ ямшӑк. Арҫынсем ларкӑч ҫинче пулӑр, манпа юнашар. Хӑнасем хӑйсем кӑмӑлланӑ пек вырнаҫчӑр. Вырӑн ҫителӗклӗ.

Ачасем ҫуна ҫине йӑпӑр-япӑр хӑпарса ларчӗҫ. Хӗпӗртерӗҫ. Урхамах ялалла вӗҫтерчӗ. Ҫунаран кӑкарнӑ тулли ҫунашкасем пӑркаланса ҫех пыраҫҫӗ.

«Ку типӗ вутӑпа ҫӗнӗ ҫулччен пурӑнатпӑр ӗнтӗ», – пӑшӑлтатрӗҫ пиччӗшӗпе шӑллӗ.

## Хĕллехи шăпчăк

Хĕвел çĕр касма вăрман хысне пытанчĕ. Тĕттĕмленчĕ. Çынсем хăйă çутрĕç, анчах пӳртсенчен çутă урамалла ӳкмест – чӳречесене пурте картланă, маскировка тунă. Улăм витнĕ пӳрт умĕнчи çӳллĕ симĕс чăрăш тăрринчи тунсăх кĕмĕл уйăх, катрам-катрам пĕлĕтсем хушшинчен хуллен шуса тухнăскер, кукша пуçне кăшт кăтартрĕ, сивĕпе хупланнă çĕр çине ылтăн-кĕмĕл сапрĕ; хăйĕн шупка çутине хуйхăллă хула-ялсем, лăпкăн тĕлĕрекен вăрман-уйсем, çамрăк акăш мамăкĕ евĕр таврари шап-шурă та тап-таса кăпăшка çĕнĕ юр çине ачашшăн сапрĕ, ерипен-ерипен сапаларĕ; паспа витĕннĕ йывăçсен кĕмĕл тураттисене, сăртçырмасем çумĕнчи хытса пирченнĕ кĕрт çинчи кĕмĕшке юр пĕрчисене ытараймасăр ăшшăн çупăрларĕ, ахах-мерчен шырарĕ, анăçалла пăхса ассăн сывласа ячĕ, халăх хуйхине куçăм ан курттăр тенĕ пек, пĕлĕтсем ăшнелле хăвăртрах шуççа кĕрсе кайрĕ, куçне хупрĕ, пытанчĕ.

Шăматкун каçхине Кругловсем патне пилĕк хĕрача пырса кĕчĕç. Вăрçă хирĕнчен куçса килнĕ украина, белорус, вырăс тата чăваш хĕрачисем иккĕн. Пӳрчĕ аслă та илемлĕ, ултă кĕтеслĕ, чӳречисем пысăк. Вĕсене шалтан ик-виç хут хура мăн тутăрсемпе карнă. Сĕтел патĕнче, краççын лампи çывăхĕнче, карчăкпа старик ĕçлесе ларaççĕ: пĕри кĕпе саплать, тепри çăпата тăвать. Хĕрачасене курсан вĕсем питĕ савăнса кайрĕç, суттарах иртме сĕнчĕç, пукансем лартса пачĕç.

– Сирĕн патра эвакур çыннисем çукчĕ-и? – ыйтрĕç хĕрачасем.

– Че-че-че, мĕнле çук? – кăмăлсăрланчĕ Круглов. – Пур. – Виçĕ ватăпа виçĕ ача, икĕ çемье. Ленинград патĕнчи вырăссем. Ачисем темиçе сăмах чăвашла перкелеççĕ. «Чăваш лайăх, тавах» теççĕ. Юлташĕсем вĕрентнĕ ĕнтĕ. Вĕсем пурте ĕнерех пасара кайрĕç. «Хулара пирĕн паллана çынсем пур. Тунтикунсăр килместпĕр пулĕ» терĕç. Туслă пурăнатпăр эпир. Апат-çимĕç уйăрман, камăн пур–унăнне.

Халĕ йывăр вăхăтра ун пек çынсене хамăр патра усрасси, пулăшасси – пирĕншĕн пысăк чыс.

– Мучи, – терĕ пĕр хĕрачи кил хуçине, – кĕçĕр эпир сире пулăшма килтĕмĕр. Мĕн ĕç тумалли пур кил-çуртра?

– Ырă сăмахшăн тавах, анчах ун пек чăрманма кирлĕ марччĕ, – хуравлать ватă çын сăпайлăн. – Шкул ачисем килкелесех тăраççĕ, манмаççĕ. Нумаях пулмасть аслă вожатăй ачасене ертсе килчĕ: урай çурĕç, вут татса хăварчĕç.

– Эсир ватă çынсем, сире пирĕн пулăшмалла, – калаçăва хутшăнать белорус хĕрачи Нонна Петрусь, вуникĕ çулхискер.

– Ватти-мĕнĕ, хам аптăрамастăп-ха, – пĕлтерет Круглов. – Тепĕр чухне карчăкăн аллисем чĕтреме тытăнаççĕ. Сивĕ юрамасть, йывăр ĕçсене тăваймасть.

– Апла пулсан, Матрунь кинемей, пире валли кăсăкрах ĕç тупса пар.

– Тен, çыхмалли е арламалли пур?

Вăл кукша пуçне сулахай аллипе шăлса, хăлхисем патĕнчи сайра çӳç пĕрчисене якатса илчĕ, сылтăм аллинчи калăплă çăпатине кăмака çумĕнчи тенкел айне пăрахрĕ, курăс-пушăт çӳпписене шăлса пуçтарчĕ, кăмака умне кайса хучĕ, ыран çунтарса яма та юрать» терĕ пулас. Унтан арăмĕ енне çаврăнчĕ те:

– Эсĕ, карчăк, мĕн тумаллине çынсене хăвăртрах кала, вĕсене ытла нумай тытас мар, уроксене вĕренмелле пулĕ. Вĕсем сан патна ырă сунса хăйсен кăмăлĕпе килнĕ вĕт, терĕ.

– Ий, ара, аплах чăрманас çукчĕ, – хыпаланса ӳкрĕ карчăкки. Хăйсене килĕшсен, çăм арлаттарас. Çурхи тапнă çăм икĕ кĕрепенкке пурччĕ çавăнта. Илсе кĕрем.

– Эпĕ унччен кĕнчелеççисем хатĕрлем, çенĕкре пурччĕ пулас. Вĕсем иккĕшĕ те тулалла тухрĕç. Икĕ ватă тĕттĕм çĕрте çапла калаçса илчĕç.

– Пирĕн кантăрпа йĕтĕн тăпкисем пур та, – тет карчăкки, – анчах вĕсене арлама хушма аван мар пек, именетĕп. Тӳмен, шăртламан çурăмсем те чылай.

– Вĕсене, вăрçă пĕтсен, кинсем килсен тӳсе шартлĕç, арлĕç те тĕртсе пир тăвĕç, – хирĕçлет старикĕ. – Унта ĕçĕ питĕ нумай. Ывăл-мăнуксем тавăрăнсан пӳрт çине те чус виттерĕпĕр, халлĕхе уламĕ те юрĕ. Э, тата акă мĕн, карчăк, эпĕ ют çынсем умĕнче яланах шӳт тума хăтланнине эсĕ тахçанах пĕлетĕн, çавăнпа кĕçĕр те ан кӳрен.

– Ара, юрĕ, юрĕ, старик, – кăмăллăн хуравлать карчăкĕ.

Пӳрт алăкĕ чĕриклетсе хупăнсанах вĕренекенсем сăмах ваклама тытăнчĕç.

– Ватăсем пулсан та епле тирпейлĕ пурăнаççĕ вĕсем.

– Карчăккин аллисем самаях чĕтреççĕ, пĕр-пĕр япала тытсан çех кăшт тамалать иккен.

– Саплăк лартнă чух та йĕппине аран-аран чиксе туртать.

– Миçе çулта-ши вĕсем?

– Старикки сакăрвун пĕррере, арăмĕ çитмĕл саккăрта.

– Вĕсен ачисем пурте вăрçăра-и вара?

– Пурте, пурте, – пĕлтерет чăваш хĕрачи. – Эпĕ вĕсене пит аван пĕлетĕп, хам кунтан инçех мар пурăнатăп. Пилĕк ывăлĕпе икĕ кĕрӳшĕ тата виçĕ мăнукĕ-хĕрĕ тăшмансемпе çапăçаççĕ.

– Кун пек çемье ялта урăх çук та пулĕ?

– Ялта мар, районта та çуккă пулас. Ара, пĕр несĕлтен вунă çын вăрçăра, вĕсенчен виççĕшĕ хĕрача – тухтăрсем.

– Вĕсем иккĕшĕ те ăшă кăмăллă çынсем, калаçма-шӳтлеме ăста, – тет Венера украинка.

Алăк каллех хĕнлĕн хăркăлтатса уçăлчĕ те. кил хуçисем кĕчĕç, – пĕри çăм тĕрки çĕкленĕ, тепри икĕ кĕнчелеççи хĕстернĕ.

– Ыттисем валли кĕнчелеççи çук вара, – тет старикки.

– Эпĕ кĕнчеле арлама ытла ăстах мар, – пĕлтерет Венера. – Мана эсир алсиш çыхма хушăр, йĕпсем тупса парăр. Эпĕ кунта килнĕренпе Хĕрлĕ Çар валли виçĕ мăшăр çыхса патăм.

– Пит аван, хĕрĕм, пит аван, – килĕшет ватă кинемей. – Мана та çыхса пар, эпир те ывăл-мăнуксене ярса парăпăр.

Кил хуҫи кӗтесри сӗтелне пӳлӗм варринерех туртрӗ, тепӗр лампа ҫутса маччаран ҫакрӗ. Пӳлӗм тата ҫуталса кайрӗ. Пурте сӗтел тавра вырнаҫрӗҫ, кашниех хӑйӗн ӗҫне пикенчӗ: мучи шӗшлипе шакка-шакка пушӑтне чиксе туртать, карчӑкӗ чӗтрекен аллисемпе саплӑк майлаштарать; хӗрачасем вырӑсла-чӑвашла тата украинла юрла-юрла арлаҫҫӗ. Кинемей куҫлӑхне ҫӗкле-ҫӗкле, вӗсем ҫине хушӑран пӑхса илет, аллисене кӑнтарать. Старикӗ хӑй сисмесӗрех хӗрсем хыҫҫӑн шӑхӑрса ӗнӗрлет, юрланӑ пек пулать. Ахӑртнех, ҫамрӑк чухне вӑл юрӑ ӑсти пулнӑ пулас. Вӑл ҫамрӑксене хӑй ӗлӗкхи вӑрҫӑсенче пулни, тӗрлӗ ҫӗршывсенчи халӑхсем ҫинчен каласа пачӗ.

– Мучи, – шӑплӑха пӑсса пуҫларӗ пускил хӗрачи, – эсир юмахсем нумай пӗлетӗр, ӑста калатӑр тенине илтнӗччӗ. Пӗр-пӗр кӗскереххине каласа памӑр-ши? Пирӗн юмах итлес килет.

– Э, хӗрӗмсем, – хӗпӗртерӗ ватӑ ҫын, – юмахне ӑна тӗнчери пур ҫын та кӑмӑллать, анчах каласа пама ӳркенет. Эпӗ хам ӗмӗрте вӑтӑр ҫул ытла кӗтӳ кӗтнӗ май, сахал мар юмах итленӗ, хам та каланӑ. Революци хыҫҫӑнах Шупашкартан пӗр вӗреннӗ ҫын килчӗ, манӑн юмахсене виҫӗ каҫ итлерӗ, ҫырса кайрӗ.

– Ара, ӗлӗк ӗҫӗ ҫавӑ пулнӑ, – тет Матрунь кинемей. – Хутла числа вӗренмен, кӗнеке-хаҫат пулман. Хӗллехи вӑрӑм каҫсенче, ҫӑпата-кӗнчелепе аппаланнӑ май, юмах хыҫҫӑн юмах каланӑ, ӑмӑртмалла ҫаптарнӑ.

– Юмахсене ҫаптарма та пӗлмелле ҫав, карчӑк, вӑл пуринчен те пиҫмест, – систерет старикӗ. – Ну, юрӗ. Апла пулсан, сирӗн кӑмӑла пӗр-ик сутмалли юмахне каласа парам. Анчах кӳренмелле мар: туппине тавҫӑрма пӗлмесен, пурне те сутатӑп.

– Юрать, юрать, – килӗшрӗҫ хӗрачасем.

– Ылтӑн алӑк уҫӑлчӗ, хурт-кӑпшанкӑ тапранчӗ. Ку мӗне пӗлтерет?

– Тул ҫутӑлни, – харӑсах персе ячӗҫ хӗрсем.

– Вутра ҫунмасть, шывра путмасть.

– Ёмӗлке.

– Ампарӑшки-ярӑшки, кулса выртать упӑшки.

– Хи-хи-хи, – пӑрҫа сапнӑ пекех кулса ячӗҫ вӗренекенсем. – Кӑна вара нихҫан та илтмен. Епле кахал упӑшка вӑл, ялан кулса выртаканскер.

– Ну, кам пӗлет? – пӗчӗк ача пекех ҫиҫет мучи. – Так, так. Пӗлместӗр пулсан, халех сутатӑп. Малтан, конешнӑ, карчӑка...

Тупмалли кӗске юмахсем пӗлтернӗ чухне пурте тӑраничченех кулчӗҫ.

– Кун чухлӗ ахӑлтатса вар-хырӑмсем те шӗвелсе кайрӗҫ пулӗ, – терӗ кил хуҫи, тимӗр шӗшлӗн шӗвӗр вӗҫне чӗлхипе йӗпете-йӗпете. – Халӗ урӑхларах камит юптарса парам-и?

– Калӑр, калӑр, – ҫавхалансах килӗшрӗҫ ҫамрӑксем. – Калаҫса ӗҫлесен, вӑхӑт иртни те сисӗнмест.

Ваҫли мучи тӗпеле кайса, пушӑт вӗҫӗсене шыва чиксе илчӗ, тенкелӗ ҫине кивӗ кӗҫҫе хурса, меллӗрех вырнаҫса ларчӗ. Хӑй пурнӑҫӗнчи пулни-иртнисене чылай каласа пачӗ.

Вӑхӑт сисӗнмесӗрех хӑвӑрт иртрӗ. Ҫур ҫӗр ҫывхарнӑ тӗле хӗрачасем кӗнчелисене арласа пӗтерчӗҫ, киле кайма хатӗрленчӗҫ. Кил хуҫисем куҫса килнӗ хӗрачасене ҫӑм сӗнчӗҫ.

– Илӗр, ҫамрӑк хӗрӗмсем, хӑвӑр валли алсиш-нуски ҫыхӑр, – терӗҫ ватӑсем.

– Ҫук, ҫук, илместпӗр, хисеплӗ мучипе кинеми, илместпӗр, – хирӗҫлерӗҫ сӑпайлӑ вӗренекенсем. – Пирӗн ӑшӑ япаласем хамӑрӑн та пур. Кунта килсенех ял ҫыннисем пыра-пыра пачӗҫ. Тавах уншӑн сире пурне те.

– Апла пулсан ку ҫӑмран фронтри салтаксем валли алсиш-нуски ҫыхса ярса парӑр, – ҫирӗппӗн каларӗ кил хуҫи.

– Юрать, юрать, – килӗшрӗҫ хавхаланнӑ хӗрачасем. Мучи вӗсене ӑсатма тухрӗ.

x x x

Тулли уйăх анаçалла чылай кайнă. Алтăр çăлтăр та ӳпĕнме пуçланă. Пахчара темле кайăк кичем юрлани илтĕнсе кайрĕ.

– Чимĕр-ха, мĕнле кайăк вара ку çуллахи шăпчăк пекех янăравлă ĕнтерекенскер? – кăсăкланчĕç хĕрачасем.

– Чăнах та, шăпчăк сасси пекех илтĕнет.

– Ан тĕлĕнтерсем, пирĕн патра чӳк çурринче ăçтан шăпчăк пултăр. Вĕсем çу уйăхĕн варринче вĕçсе килеççĕ те вĕçĕнче каллех каяççĕ.

– Итлĕр-ха, çамрăксем, эпĕ ку сасса ытти чухне те илткелетĕп, – пĕлтерет мучи. – Халĕ те авă инçех мар, пирĕн пахчарах, ĕнерет пулас.

– Тен, чăнах та, пĕр-пĕр вĕçен кайăк аманса юлнă пулĕ.

Чалăшшăн-хăяккăн вĕçсе, пахча карти çине, темле пĕчĕкçĕ кайăк, хĕллехи чипер кăсăя пысăкăшскер, пырса ларчĕ.

Ваçли мучи ачасене аллипе юнаса илчĕ, хăрах пӳрнине тута урлă тытрĕ, шăпланма хушрĕ. Çак самантра кайăк хăйĕн хурлăхлă юррине янăравлăн пуçласа ячĕ; унтан шăхăртса тĕрлĕ-тĕрлĕ кĕвĕпе хурлăхлăн шăрантарма тытăнчĕ; пĕтĕм вăйĕпе хавхаланса, пĕр кĕвĕрен теприн çине сисĕнмесĕр куçса юрлать, çынсем çине, тем кĕтнĕ пек, куçне илмесĕр пăхать, хăрах çунаттине кăшт вылятса илет, пĕр еннелле тайăла-тайăла каять.

– Кун пек илемлĕ те тĕрлĕ саслă, янăравлă та уçă кĕвĕлеме, нумай юрă сыпăкĕсене ăста çыпçăнтарма тата итлекенсене тĕлĕнтерсе кăмăлĕсене уçма шăпчăк кăна пултарать, – пăшăлтатрĕ украина хĕрачи хăй тĕллĕн.

– Шăпăрт-ха, ан кансĕрлĕр, чипер кайăк пуçланă юррине пĕтертĕр.

Шăпчăк малалла юрлать, çепĕç кĕввине тăсать, пĕр тĕслĕ юрăран теприн çине куçать, пĕр çемĕ-кĕвĕ туса, ăсталаса пырать. Чуна çĕклентерсе, чĕрене пырса тивекен çак юрă пĕчĕк çырмари çулленхи тӳлек шыв юххи евĕр

шăнкăртатать. Сасă сасартăк чарăнчĕ, юрă татăлчĕ; юрăçи çунаттисене выляткаласа илчĕ те, чĕрик-чĕрик туса, çĕрелле персе анчĕ. Пурте ун патне чупса пычĕç, юр ăшĕнчи тапăлтатса выртакан кайăка асăрхарĕç.

– Тен, вăл шăнса кӳтнĕ е выçăпа аптăранă пулĕ? – ыйтрĕ Нонна. – Пӳрте илсе кĕрес.

– Выçă е шăннă пулсан, вăл ун пекех юрлаяс çук пулĕ, – хăй шухăшне калать Тепри, – кунта мĕнле те пулин урăх сăлтав пур пуль.

– Илсе кĕрес эппин ăна пӳрте, унсăрăн ытла та шел, – канаш парать старик.

Венера кайăк çывăхнерех пычĕ, ерипен кукленсе ларчĕ те вăйсăрланнă кайăка аллипе тытрĕ, кăкăрĕ çумне çупăрларĕ.

– Унăн пĕчĕк чĕри питĕ хăвăрт тапать, тăпăлтатать çех, – пĕлтерет хĕрача. – Хăй шăнман, алла та ăшă çапать.

– Мĕнле кайăк пулчĕ-ши ку?

Пурте кĕпĕрленсе, пӳртелле утрĕç. Кил хуçи малта, алăксене уçса пырать, ун хыççăн – кайăка çупăрланă хĕрача. Тепри хыçалта алăксене хупать, Венера вара – пĕрре мала утать, тепре хыçала юлать, ыттисен çумĕпе çуйăхса хĕвĕшет.

– Эсĕ мĕн çак вăхăтчен çара пуçăн, çарамас тулта тăратăн, ват супнă, – мăкăрлантарать карчăкки мăшăрне, ним тума пĕлмен енне. – Тата мĕн амакĕ пулчĕ сире, эпĕ тем пулнă тесе хăрасах кайрăм.

– Эсĕ, карчăк, ним пĕлмесĕрех ан шăртлан-ха, – лăпкăн калать кил хуçи. – Эпир аманнă шăпчăк юррине çăварсене карсах итлесе тăтăмăр. Авă халĕ ăшăнма илсе кĕтĕмĕр. Кун пекки питĕ сайра тĕл пулать вăл.

– Ан йӳте-ха, старик, – ĕненмест Матрунь кинемей, – хĕлле шăпчăк ăçтан юрлатăр. Вĕсем тахçанах кăнтăрта ĕнтĕ. Эсир çерçи тытса кĕтĕр пулĕ.

– Ытла хӳхĕм юрлаканскер вара, – карчăкне лăплантарать старикĕ.

Венера хăрах аллипе пуçри ăшă тутрине салтрĕ те, темиçе хут хутлатса, сĕтел кĕтессине сарчĕ, ун çине кай-

ăкне хучĕ. Пурте сĕтел тавра пухăнса унталла тинкерчĕç. Телейсĕр кайăк çунаттисене хуçлатрĕ, хура сăмсине тутăр çине перĕнтерсе, тăпланса выртрĕ, лăпкăнрах сывлама тытăнчĕ. Вăл хĕрлĕрех хăмăр тĕслĕ, хырăм айĕ шурăрах, çунаттисем çинче чăпăртарах пăнчăсем пур, хăй çивчĕ куçлă, вăтамураллă, хӳри илемлĕ, пуçĕ пĕчĕк. Кăштах канса выртсан, кайăк тапаланса илчĕ, çунаттисене сарса хучĕ, урисене тăсрĕ. Ăна хĕрхенсе пурте ахлатса ячĕç: кайăк хăрахураллă кăна иккен, сылтăм çунатти те аманнă, тĕкĕсем çаралнă, пуç тĕпекĕнче юнлă çĕвĕксем пур.

– Ну, хĕрĕмсем, мĕнле кайăкне уйăрса илтĕр-и? – кăсăкланчĕ ватă çын.

– Шăпчăках ку, мучи, – ыттисене пӳлсех каларĕ украина хĕрачи. – Эпĕ вĕсене хамăр патра та нумай сăнанă, анчах кун пек çывăхранах курман.

– Тĕрĕс, Венера. Ку вăл хамăр енчи хĕвелтухăç шăпчăкĕ.

– Çак кайăка мĕн пулнă-ши?

– Тен вăл аманнипе каялла таврăнса килнĕ?

– Эпĕ хам çапла шутлатăп, – хуравлать мучи. – Çак шăпчăк ами вăл пирĕн пахчарах пурăннă пулĕ. Чĕпписене пăхса ӳстернĕ. Пĕррехинче, каçалапа, сĕмсĕр хурчăка вĕçсе килнĕ те йăвана тустарма, чĕпписене пăвма тытăннă. Чĕпĕсен ашшĕ, шăпчăк аçи, апат шырама хирелле кайнă пулнă. Амăшĕ пĕччене хурчăкапа çапăçма пуçланă, ăна астарса аяккалла илсе кайнă, улталанă, киллйыша çăлса хăварнă. Хăй вара тан мар çапăçура самаях сусăрланнă. Тирек-хурăн çулçисем сарăхма пуçласан, чĕпписене ашшĕпе пĕрле кăнтăралла ăсатса янă. Хăй кунтах юлнă, çынсене мĕн виличченех юррипе савăнтарас тенĕ пулĕ. Сывлăхĕ хавшак пирки вăл çуллахи ăшă йăвинчен инçетех каяйман, унтах вилме шутланă.

– Ачасем, тăхтăр-ха, тен, унăн йăви халĕ те пахчарах пулĕ? – хавхаланса ӳкрĕ украинка. – Мучи, пахчана тухса çав йăвана илсе кĕме юрать-и? Ытла та кăсăклантарать, хăвăртрах пĕлес килет.

– Ӳркенместӗр пулсан, шыраса пӑхӑр, – килӗшет кил хуҫи.

Ҫӑмӑл шӑм-шаклӑ Венерӑпа юлташӗ типнӗ пӑрҫа пекех тухса пӗрхӗнчӗҫ, пӳрт алӑкӗ каялла шалтлатса ҫеҫ юлчӗ. Сӗтел ҫинчи кайӑк куҫӗсене хупрӗ, тахӑшӗ ӑна тутӑр кӗтессипе витсе ячӗ.

– Эх, ха-хай, пирӗн ачасем те вӑрҫӑра ҫак шӑпчӑк пекех аманаҫҫӗ, пӗтеҫҫӗ пулӗ ҫав, – хуйхӑрса ячӗ кил хуҫи арӑмӗ куҫӗсене саппун аркипе шӑла-шӑла. – Керманӗсем те Мускав патнеллех чаваланаҫҫӗ пулас...

– Ан кулянӑр, Матрунь кинемей, – тет Нонна. – Нимӗҫсене урӑх кунталла ямӗҫ, часах каялла тарма тытӑнӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар кулленех вӑйланса пырать.

– Тӗрӗс, хӗрӗм, питӗ тӗрӗс, – тавӑрать кил хуҫи. – Пирӗн халӑх тӑшмана парӑнтаратех.

Хӗрачасем часах кӗчӗҫ. Хайсем ҫурхи хӗвел пекех савӑнӑҫлӑ, ҫиҫеҫҫӗ кӑна.

– Ну ӑслӑ та иккен кайӑксем, – хашка-хашка калать украинка. – Йӑвине аран-аран шыраса тупрӑмӑр. Икӗ йӗкӗр улмуҫҫи чӑтлӑхне, ҫӗртен кӑшт кӑна ҫӳллӗрехре вӗтӗр-вӗтӗр туратсем хушшине питӗ ӑсталаса тунӑ. Аякран та, ҫывӑхран та курӑнмасть, тупма питӗ хӗн. Ҫитменнине тата ӳкмен ҫулҫӑсем те пур: вӗсем ҫине юр ҫунӑ, кӗрсе тухма пӗр пӗчӗк шӑтӑк кӑна. Йӑвине ҫил те кӗмест тейӗн.

Ҫапла каласа вӑл сӗтел ҫине кайӑкепе юнашар пӗчӗк йӑва вырнаҫтарса хучӗ. Ӑна сӳс ҫӗтӗкӗсемпе типӗ мӑкран ҫавракалатса тунӑ, варринче мамӑк тӗксем. Унта пилӗк ҫӑмарта выртаҫҫӗ. Вӗсем, шупка пӗлӗт тӗслӗскерсем, мӑйӑртан кӑшт пысӑкрах та тӑсӑкрах.

– Ак, тамаша, ку тата мӗнле япала! – тӗлӗнсех кайрӗҫ пӳртрисем. – Нивушлӗ шӑпчӑк ҫӑмартисемех!

– Мӗн-ма пусса кӑларайман-ши вӗсене?

– Е халь ҫинерех кӑна тунӑ?

Шӑпчӑк темскер чӗвӗлтетсе илчӗ, куҫне уҫрӗ, талт-талт сикрӗ те йӑвине йӑпӑр-япӑр кӗрсе ларчӗ, ҫаварне вӑйсӑррӑн кара-кара илчӗ.

– Апла пулсан, хӑй йӑвиех.

– Шыв парса пӑхас ӑна, анчах хӑрамӗ-ши вӑл?

– Эх, ват супнӑ, – хӑйне хӑй ятласа илчӗ кил хуҫи, – ҫавна та тавҫӑрса илейместӗп; манӑн ӑна валли пӳртрех читлӗх пур-иҫ? – Ҫак сӑмахсемпе вӑл тӗпелелле васкаса кӗрсе кайрӗ, кашӑксене шакӑртаттарчӗ те пӗчӗк лӑпӑ ҫӗклесе тухрӗ, тӗпне кӗрӗк татӑкӗпе ҫӑм хучӗ.

– Кашӑксем хумалли ҫак лӑпӑ кӗҫӗрлӗхе читлӗх вырӑнне пултӑр, – терӗ вӑл хӗпӗртесе. – Кам пӗлет, тен, кайӑкӗ сывалӗ те чӗпписене кӑларӗ. Эпир ӑна карчӑкпа иксӗмӗр те ҫепӗҫҫӗн пӑхӑпӑр, ҫитерӗпӗр-ӗҫтерӗпӗр. Пурӑнтӑрччӗ кӑна, эпӗ ӑна валли ыранах пӗчӗк читлӗх тӑватӑп. – Мӗнле те пулин ҫӑлса хӑварасчӗ, сыватса ҫуркунне-ҫуллаччен усрасчӗ.

– Ытла та шел ҫав  ку юрӑҫӑ кайӑка, – тет хуйхӑллӑ Венера. – Ахӑртнех вӑл, хӑй пӗтиччен паттӑрла ҫапӑҫакан хамӑр халӑха вилӗмсӗр юррине парнелесе хӑварас терӗ пуль.

– Ҫут ҫанталӑкра, чӗрчунсен пурнӑҫӗнче темӗн те пулса иртет ҫав, – тавӑрать мучи. – Кайӑк-кӗшӗксен те тӑшмансем ҫук мар. Авӑ ирсӗр этем-фашистсем те хӑрушӑ вӑрҫӑ пуҫласа ячӗҫ те ним айӑпсӑр халӑх юнне тӑкаҫҫӗ, ҫемьесене аркатса тӑлӑха хӑвараҫҫӗ, пурнӑҫа юхӑнтараҫҫӗ. Анчах эсӗ, Венера, ан кулян, Тӑван ҫӗршыв сывӑ пулсан, тӑван йӑву та пулӗ сан.

– Тӗрӗс, мучи, питӗ тӗрӗс, – хавхаланать украинка. – Ырӑ сӑмахшӑн – тавах.

– Тен, ҫак шӑпчӑк та, вӑрҫӑ ҫывӑхӗнче суранланса хӑй йӑви патне каялла вӗҫсе килнӗ пулӗ?

– Ун пек пулсан, ҫӑмартисем пулас ҫук пек.

Круглов кайӑк йӑвине ерипен ҫӗклесе лӑпӑ тӗпне хучӗ те кӑмака ҫине кайса лартрӗ, ҫиелтен шӑла пир татӑкӗпе витсе ячӗ.

– Эсир мана каҫарӑр, ҫамрӑксем, эпӗ йӑнӑшрӑм пулас, – айӑплӑ ҫын пек калать мучи. – Суеҫ тесе ан шутлӑр. Ку шӑпчӑк чӗпписене кӑнтӑралла ӑсатса ярайман иккен. Вӑл самаях аманнӑ: тен, ҫаткӑн хурчӑка кайӑкпа ҫапӑҫнӑ пулӗ.

– Ну, пире килсе пулăшнăшăн питĕ пысăк тав, – сămaха вĕçлет кил хуçи. – Кайăкне мĕнле те пулин сыватмах тăрăшăпăр. Кĕçĕр хам килте-ха, шкулта тепĕр юлташ хураллать.

Старик çамрăксене ăшшăн ăсатса ячĕ, хапхине питĕрсе кĕчĕ. Çур çĕр çитнине систерсе, автансем авăтма тытăнчĕç.

---

## Тилĕ ташши

Хĕллехи ир. Хĕвел кăшт курăнчĕ те каллех пытанчĕ. Сивĕ. Юр çăвать. Вĕтĕ тăман пĕрчисем хуллен, лăпкăн ӳкеççĕ. Автан авăтса яни те, ула курак кранклатни те, кăсăя чиклетсе сиккелесе çӳрени те ку лăпкăлăха пăсаймаççĕ, илемлетеççĕ кăна. Пĕтĕм тавралăх шап-шурă. Юр çивитти айĕнчен йывăçсемпе хыт хура тунисем кăна кăпăшка юра шăтарса, çӳлелле тухса тăраççĕ. Ялти кайăксем апат шыраса вĕçме тытăнчĕç. Пилешпе палан çинче шăхлич кайăкĕсем туллиех хĕвĕшеççĕ, шаннă çырласене касаççĕ. Вĕсем тундрăран вĕçсе килнĕ те ĕнтĕ. Салху уйăпсем вĕрене çинчи вăрă хутаççисене шĕкĕлчеççĕ. Кил хушши таврашĕнче хура вăрăм хӳреллĕ, ула çунатлă чакак-хуралçă çаврăнкалать, ытти юлташĕсене систерет. Акă вăл чăхсен апачĕ çывăхнех вĕçсе пычĕ. Унăн пуçĕпе кукăр сăмси, пĕсехи хуп-хура, урисем кĕске, хырăмĕ шурă; çуначĕ çинçе, хӳри çывăхнерех, ик енĕпе те кăвак йĕрсем пур. Хăй вĕçĕмсĕр чакăлтатса пуплет, чака-как, как-как, ча-как, тет. Акă ун патне тепри вĕçсе пычĕ те, чак-чак, чак, чак, ча-как тесе, юнашар пырса ларчĕ. Ку çамрăкраххи пулас, пĕчĕкрех те çинçешкерех.

Карпов килте тунă йĕлме çине тăрса, хирелле тухрĕ. Кĕçĕр çĕрĕпех йывăр задачăсем шутларăм, вырăсла сочинени çыртăм, ывăнтăм, кăштах уçăлса çӳрем.

Йĕри-тавра лăпкă. Шăп. Уй-хирсемпе улăхсем, катасемпе вăрмансем, акăш мамăкĕ евĕр, çемçе юр айне путнă. Анчах çутçанталăкри пурнăç лăпланман. Мамăк евĕр юр айĕнче калчасемпе курăксем лăпкăн канаççĕ. Шăши йышши чĕрчунсем çĕр айĕнчи йăвисенче çулла пухнă апата çисе савăнаççĕ. Каюра хăй çурт-йĕрĕн аялти хучĕсенче мĕшĕлтетет, апат шыраса çӳрет. Шăши юс та юр айĕнче шăшисене йĕрлеме ӳркенмест. Мĕншĕн-ха юлташсем курăнмаççĕ? – хăйпе хăй калаçать Карпов, – сакăр сехет тĕлне вĕсем те çакăнта çитме пулчĕç-çке. Е урăх шухăш тытрĕç, килĕсенче тем пулчĕ-и?

Çак самантра хыçалта ачасен сассисем илтĕнчĕç.

– Вова, тăхта. Эпир те часах çитетпĕр.

Карпов каялла çаврăнса пăхрĕ. Вăрçă çывăхĕнчен куçса килнĕ вырăс тата украина ачисем хăвăртрах ун патне чашлаттарса çитрĕç, юнашар ярăнса пырса, улăм сурачĕ енне çул тытрĕç.

– Ачасем, эсир тилĕ туса хăçан та пулин курнă-и? – кăсăкланчĕ Вова.

– Çук, курман.

– Апла пулсан выртăр хăвăртрах, акă кунта унăн йĕрĕ пур, вăл часах леш еннелле тухма кирлĕ.

Ачасем хырăм çине тăсăлса выртрĕç, уринчи йĕлтĕрĕсене ик еннелле хĕреслесе хучĕç. Тискер кайăк, чăнах та, нумай кĕттермерĕ. Улăм ури патĕнчен хĕрлĕ сарă тĕслĕ, çăра тĕклĕ тилĕ йăпăртатса тухрĕ. Пит-куçĕ пĕчĕк, хăлхисем чанккам та шĕвĕр, асав шăлĕсем вăрăм, хӳри вĕçĕ шурă. Хай пысăках мар, вăтам йытă пысăкăш кăна, анчах илемлĕ те илĕртӳллĕ яштака кĕлеткеллĕ, вăрăм хӳрине уснă. Аякран йăлтăр-йăлтăр курăнать. Çурăм çинче, малти урисем тĕлĕнче, хăмăртарах. Хай питĕ асăрхануллă, сисĕмлĕ. Йĕритавра хăвăрт пăхса çаврăнчĕ, нăш-нăш шăршласа илчĕ, малалла çул тытрĕ. Унăн утни-чупни шыв юххи пек туйăнать. Вар хĕррипе илемлĕн шуçса-утса пычĕ-пычĕ те вăрманалла хăвăрт кĕрсе çухалчĕ.

Кăшт тăхтасан, каллех тухрĕ те кайри урисем çине ларчĕ, хӳрине кукăртса кăштах çӳлелле çĕклерĕ. Шĕвĕр сăмсине пĕлĕтелле тăратса малти икĕ урипе, пĕчĕк ача алă çупнă евĕр, çапкаласа илчĕ. Вăхăтăн-вăхăтăн илемлĕ кĕлеткипе çӳлелле çĕкленет, унтан каллех кучĕ çине ларать.

– Ачасем, тилле тем пулнă. Лайăхрах тинкерсе пăхăр-ха.

Акă тилĕ тус ури çине тăчĕ, пĕр вырăнта çаврăнма тытăнчĕ. Унтан сывлăшалла татах сикет, аллисене суллать. Ку тата мĕн? Тилĕ малти урисемпе юра хăвăрт-хăвăрт чавалама, аяккалла сирпĕтме тытăнчĕ. Шăтăк хатĕр. Тилĕ унта кĕрсе тăчĕ, курăнми пулчĕ. Вăрăм хӳри çеç аякран хĕрлĕн

курăнать. Часах унтан тухрĕ, шăтăк тавра савăнăçлăн утма, тăватă урипе те сиккелесе ташлама пикенчĕ. Урисене хăвăрт-хăвăрт вылятать, тапăртатать.

– Акă сире тилĕ ташши! Мĕн-ма çавăн пекех хăтланать вăл?

– Унăн урисем шăннă. Ăшăнас тесе тапăртатать, сикkелет пулĕ.

– Акă епле чĕрчун иккен эсĕ чее тилĕ тус! – тĕлĕннипе саспах каласа ячĕ украина ачи. – Эпĕ сана кун пек çывăхран халиччен курманччĕ. Кам кăна илтмен, пĕлмест пулĕ сан çинчен? Пĕчĕк чухнех кĕнекесенче вуланă е асаннесен юмахĕнче илтнĕ. Крылов юптарăвĕсенче Лиса Патрикеевна: савнă йăмăкăм е тилĕ кума тĕп геройсенчен пĕри. Пĕррехинче вăл айван кашкăра улталаса курăк та çитерет.

Эвакур ачи хĕпĕртенипе хавхалансах калаçма, тилĕ пирки хай мĕн илтни çинчен, вуланине пĕлтерме васкарĕ. Карпов унăн кăмăлне хуçас темерĕ, чармарĕ.

Ялтан лавсем тухрĕç, вăрманалла çул тытрĕç. Çунасем сивĕпе чĕриклетсе юрласа кăна пыраççĕ. Кашни лав çинех пилĕк-ултă çын ларнă.

– Вова тусăм, çак сивĕре ку хĕрарăмсем вутă-шанкă хатĕрлеме каяççĕ пулас? – ыйтрĕ белорус ачи.

– Çапла, вăрман ĕçлеме каяççĕ, – пĕлтерет Карпов. – Халĕ госпитальсемпе больницăсем, шкулсемпе хулари учреждениесем валли сахал мар вутă кирлĕ. Ялти çынсене, ĕçлеме пултараканнисене, килĕренех тенĕ пек задани панă.

– Апла иккен. Çăмăл мар çав пирĕн халăха.

– Вăрçăра тата йывăртарах ĕнтĕ, – хуравлать Вова. – Анчах нимĕçсем Мускава илеймĕç. Хĕрлĕ Çар вăйлансах пырать. Авă Çĕмĕрле вăрманĕнче те салтаксем йышлă. Таврари халăх вĕсене пулăшать, Сăр шывĕ тăрăх окопсем тăваççĕ. Кашни утăмрах çирĕп оборона.

– Çук, Вова тусăм, тем пулсан та фашистсем кунталла çитеймĕç, – çирĕппĕн калать Лев.

– Тĕрĕссипе калас тăк, эпĕ чăвашсене кăмăлларăм, – малалла калать украина ачи. – Ĕçчен те сăпайлă вĕсем. Çĕршывĕ илемлĕ вырăнта, кăштах çырма-çатраллă пулин те.

– Çырми-çатри çителĕклех вара. Халлĕхе пире, чăвашсене, именчĕкрех пулни тата кăштах тĕттĕмрехххи кансĕрлет.

– Вăрçă пĕтсен культура енĕпе те вайлăн аталанăпăр акă. Вăтанма, хăрама кирлĕ мар, Вова. Эпĕ çапла пуласса шанатăп, ĕненетĕп...

Йĕлтĕрçĕсем уй-хир тăрăх тӳп-тӳрĕ йĕрсем туса малалла вирхĕнчĕç. Сивĕ сăмсаран чĕпĕтет, уçă çилĕ ӳт-пĕве шăнтать, кăтăкласа сăркăлтаттарать. Чылаях ярăнса пынă хыççăн Вова сăмси чăр! пĕçерсе кайрĕ, питрен çăтăр! йĕплесе илчĕ. Лев ун çине сăнарах пăхрĕ те:

– Ачам, Карпов, санăн сăмсу-питӳсене икĕ енĕпех шапшур тăм илсе лартнă! – кăшкăрса ячĕ Лев. – Хăвăртрах çемçе юрпа йăвала.

– Чăнах-и, ытла пит-куç хытă пĕçерсе кайрĕ, – хуравлать Вова. – Тăхта-ха, Лев, ара сана та тăм илнĕ, сăмсу тăрри тĕлкĕшмест-и?

– Вĕтелентерет çав.

Вĕсем иккĕшĕ те йĕлтĕрсем çине кукленсе ларчĕç те пичĕсене хыпалансах сăтăркалама тытăнчĕç.

– Тепĕр тесен, – тет Петренко, – пире çак вăтăр градуса яхăн сивĕре кам хăвалană. Хамăрах айăплă.

– Ку темех мар, уçăлса çӳрени мĕнe тăрать, – ним тăвайман енне калаçать Карпов. – Вăрçăри çынсене, тен, тата сивĕрех пулĕ, çапах вĕсем тӳсеççĕ: сивве те, тăшмана та парăнмаççĕ.

– Карпов, сăмсуна лутăрканă май, тилĕ халапне вĕçлер. Украинăна киле кайсан, Чăвашра тилĕ курни çинчен çырса кăларăп.

– Халăхра тилле пурте пĕлеççĕ, ун çинчен калаçаççĕ. Унăн тирĕ ĕлĕкренпех эteme илĕртнĕ, ăшăтнă, йăм-йăм йăлтăркка тĕсĕпе тумтире илем кӳнĕ. Анчах ăна, вунă кило таякан çур метр ытла хӳреллĕ тискер чĕрчуна, тытма хĕн: вăл чăннипех те питĕ чее, асăрхануллă, сисĕмлĕ; тепĕр

чухне хытă чупма пултарать. Упа пек лӳппер, тăмана евĕр тăмсаккай мар. Тилĕ хăй йĕрне хӳрипе шăлса çухатса пырать тени те тĕрĕс мар. Хĕлле кăпăшка юр çинче унăн йĕрĕсене час-часах курма пулать. Улăм сурапĕ патĕнче ăна хамăр та асăрхарăмăр.

– Кĕскен каласан: тилĕ усăллă та кирлĕ чĕрчун, çут çанталăк илемĕ. Çавăнпа ăна хĕрхенмелле, упрамалла.

## Раштаври чĕпĕ

Ачасем вăрман хĕррине çитрĕç. Хурăнпа шĕшкĕ кăчкисем вĕсене хуллен силленсе ăшшăн саламларĕç. Вĕсем шăпланса пăрланнă, кăштрака пĕрчĕ-пĕрчĕллĕ хăмăр тĕслĕ кăчкăсем, йывăçăн çинçе тураттисемпе пĕрле çилпе ерипен сулланса хумханаççĕ, чĕтренсе илеççĕ, хăрма тытăннă ватă юманăн, вĕтĕ-вĕтĕ пусă йĕкелĕсем аялалла талт! сикме хатĕрленнĕ евĕр туйăнаççĕ.

Йĕлтĕрçĕсем шурă юр çине тинкерсе пăхрĕç. Тискер кайăксен тĕрлĕ-тĕрлĕ йĕрĕсем унтан та кунтан кĕре-кĕре çухалаççĕ. Вĕсем кĕмĕл укапа тĕртсе тунă шап-шурă çитти çине сарса хунă шăрçа ярăмĕ пек курăнса выртаççĕ. Вăрманти çĕрлехи тĕксĕм хăмăр тĕттĕмлĕх майĕпенех сирĕлсе-сирĕлсе пычĕ те таврана кăвак сăн çапрĕ. Ăшăх çырма хĕрринчи сукмак çĕлен евĕр авкаланса выртать. Унăн икĕ енĕпе çамрăк салтаксем пек йăрăс йывăçсем тунсăхлă та шăппăн лараççĕ. Вĕсен кĕмĕл тăррисем кăвак пĕлĕт ытамĕнче шап-шуррăн та илемлĕн курăнаççĕ, хĕвел çуттипе катаран йăлтăраççĕ, куçа илĕртеççĕ. Чылайччен пăхса тăчĕç куçса килнĕ ачасем çак ытарма çук илемлĕ те чĕмсĕр йывăçсем çине.

– Эх, епле илемлĕ те пит капăр! – хавхаланса калаççĕ Карпов юлташĕсем. – Мĕн тери хитре пас тытнă вĕсене, чăннипех те кĕмĕл тенкĕсем пекех туйăнаççĕ. Йывăç çинчи кашни турачĕ, пысăкки-вĕттисем те, шуралса мăнтăрланнă чăлт шурă кĕпе тăхăннă тейĕн. Çывăхран сăнаса пăхсан, пĕтĕм турат-тĕретсене веçех кăпăшка мамăк çупăрласа илнине асăрхатăн. Ун пек тĕлĕнмелле капăр илеме никам та шутласа кăларма та, ăсталама та пĕлеймĕ, пултараймĕ. Çӳлтен, кĕмĕл пĕрчисем евĕр, пас вĕлтĕртетсе ӳкет.

Ачасем малалла утрĕç. Вĕсен хура куç харшийĕсем, калпак айĕнчен тухса тăракан кăтра çӳç пĕрчисем самаях пасарчĕç. Тарăн варта, çӳхе пăр айĕнче, вăйсăр юхан шыв шăнкăртатса сас парать. Йĕлтĕрçĕсем шыв хĕрринчи çамрăк йывăçсем çине кăмăллăн пăхаççĕ, йывăççисем – çамрăксем

çине. Пас айĕнчи çак йывăççем шур пĕркенчĕк витĕннĕ пикесем пекех туйăнаççĕ. Çак шăплăх, пас тытнă шурă йывăççем, пĕчĕк юхан шыв çине шурă виттине уртса янă тап-таса юр, – шуçăм вăратнă вăрман хусканăвне туртса илет те, хăйĕн тасалăхĕпе тасатса, каялла тавăрса парать. Çăмăл йĕлтĕрсен айĕнчи юр кăчăртатать. Çав кăчăрти юрăн кашни пĕрчи куçкĕски ванчăкĕ пек, супăнь хăмпи пек илемлĕн йăлтăртатса ялкăшаççĕ, куçа илĕртеççĕ, хĕвел пайăркисемпе куç хупмалла выляса илеççĕ.

Шăп. Анчах тимлерех итлесен вăрман юрлать, унти пурнăç шавласа кăна тăрать иккен. Ачасенчен инçех мар вăрман тухтăрĕ улатакка хăвăл йывăççене, хăрăк туратсене такăртаттарать. Хурама çинче ватă тăмана тĕлĕрет, алтăр куçĕсене хушăран вылятса илет, хăлхисене чанк! тăратать. Вăрăм хӳреллĕ пакша та йăвинчен тухнă, чăрăш йĕкелĕсене шырать. Кайăксем апат шыраса вĕçсе çӳреççĕ. Хыр лăсси, çирĕкпе хурăн кăчки, йывăç çинче ларса юлнă çырласемпе панулмисем – вĕсен апачĕ. Пилешпе палан, йыт çĕмĕрчĕпе катăркас, уртăшпа шăлан çырлисем кайăксене аякранах илĕртеççĕ. Илемлĕ пике – яштака хурăнсем çинче çирĕк тăрри вырăнтан вырăна куçса, сиккелесе çӳрет. Вăл хурăнпа çирĕк вăррисене шырать, тупса çиет. Хушăран хĕрлĕ пĕсехеллĕ уйăпсем шăхăрни илтĕнет.

Акă тата хыр йывăççи... Ун çинче хĕрлĕ симĕс пĕчĕк кайăк ăшталанать, йĕкел ăшĕнчи вăрăсене шĕкĕлчесе кăларать. Унăн сăмси кукăр, çунаттисем вăрăм, хӳри кĕске, урисем вăйлă.

– Мĕнле кайăк ку, Карпов? – тĕпкĕчлет белорус ачи.

– Кукăр сăмса теççĕ ăна, питĕ çăмăл кайăк, – ăнлантарать Вова. – Вăл аллă грама яхăн çеç таять теççĕ. Вĕсен амисем симĕс, аçисем хĕрлĕрех тĕслĕ пулаççĕ. Пирĕн умри ку кайăк ами пулма кирлĕ, вăл пĕчĕкрех те йăлтăрккарах курăнать.

Ачасем хыр патнерех çывхарчĕç, чĕркуçленсе утсашуçса, ун айне кĕрсе тăчĕç. Кайăк вĕсене сиссе, кăшт аяккалла пăр! вĕçсе кайрĕ. Лапсăркка та ватă хырăн çатрака

тураттисем ҫинче, ҫӗртен икӗ метр ҫӳлерехре, йӑва пур. Ӑна хӑрӑк туратсемпе ҫапӑсенчен ӑсталанӑ, типӗ курӑкпа мӑк хунӑ, кӑшӑлласа ҫавӑркаланӑ: шалта, унӑн варринче – ҫӑм, мамӑк. Йӑвара ҫап-ҫара тӑватӑ чӗпӗ пӗр-пӗрин ҫумне пӑчӑртанса ларҫҫӗ, ӑшӑнаҫҫӗ. Хӑйсем кӑштах чӗтреҫҫӗ. Тӗлӗнмелле кайӑк ку, шартлама раштав сиввинче чӗпӗ кӑларма хӑраманскер? – кӑсӑкланчӗ Лев.

– Ҫапла, кукӑр сӑмса чӗпписене яланах раштав-кӑрлач уйӑхӗсенче кӑларать. Ҫавӑн пек хӑнӑхнӑ вӗсем. Чӗпписем икӗ эрнерех тухаҫҫӗ, вӑрттӑн чӑтлӑхри ӑшӑ та ҫемҫе йӑвара хӗл сиввинчен те шикленмеҫҫӗ. Амӑшӗ чӗпписем валли йӗкел вӑррисене тупса килет, ҫитерет.

– Шел ҫамрӑк чӗпписене, – тет белорус ачи. – Авӑ амӑшӗ те ҫуйхашса йӗме пуҫларӗ, кунтан хӑвӑртрах пӑрӑнапӑр, ачасем.

Хыҫалта темле сасӑ илтӗнсе кайрӗ. Йӗлтӗрҫӗсем йывӑҫ айӗнчен тухрӗҫ, йӗри-тавра ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Чалӑш куҫлӑ шурӑ мулкач вӗтлӗхри ӑвӑс хуппине кӑшлать, ҫамрӑк туратсене ҫиет. Ку хуралҫӑ пулнӑ иккен. Вӑл хӑйӑлти сассипе тата икӗ хутчен ӳсӗрсе илчӗ. Ачасем питӗ хуллен вӗтлӗх патнерех пычӗҫ. Вар хӗрринче, сӗвек вырӑнта, юр тӗссӗрленнӗ: ӑна мулкачсем таптаса пӗтернӗ. Ку тӗмескеллӗ ҫут ҫинчен аяккалла куян аҫисем черетпе пыра-пыра сикеҫҫӗ, выляҫҫӗ, амисене савӑнтараҫҫӗ. Унтан каллех ҫут ҫинелле улӑхаҫҫӗ те аялалла кутӑн-пуҫӑн чӑмаҫҫӗ, хуп-хупӑлчӑк тӑваҫҫӗ, темле сасӑ кӑлараҫҫӗ. Амисем вара кучӗ ҫине ларнӑ та малти кӗске ури-аллисемпе сулкалаҫҫӗ, алӑ ҫупаҫҫӗ пулас. Вӗсем, мӑйӗсене пӑркала-пӑркала, аҫисем ҫине куҫ илмесӗр пӑхаҫҫӗ, вырӑнтан вырӑна куҫа-куҫа лараҫҫӗ, хӑлхисене вылятса илеҫҫӗ.

Вырӑс ачи Вовӑна чавсипе кӑшт тӗртсе илчӗ, тем каласшӑн пулчӗ. Ҫак самантра куянсен хуралҫи вӑрӑммӑн хӑйӑлтатса сасӑ кӑларчӗ те туххӑмра вӗтлӗхе кӗрсе ҫухалчӗ. Улӑхра вылякан унӑн юлташӗсем те вӑрманалла тапрӗҫ кӑна, самантрах таҫта кайса кӗчӗҫ, куҫран ҫухалчӗҫ. Сырма леш енче, ҫатрака та илемлӗ мӑйракасене каҫӑртса, ӗнси

çинелле хурса вăрман улăпĕ пăши утса кайрĕ. Ун хыççăн пĕчĕкçĕ çамрăк пăрушĕ сиккелесе пырать. Кăштах утсан вĕсем иккĕшĕ те чарăнса тăчĕç, çамрăк çӳçен çемçе хуппине васкасах кăшлама пикенчĕç.

Вăрманти чĕрчунсене кучченеç парса хăварма та манмарĕç ачасем. Ватă юмансен пысăк тункатисем çине темиçе çĕре çăкăр татăкĕсемпе тĕпренчĕкĕсем, тыр пĕрчисем тата пиçнĕ çĕрулмисем хурса хăварчĕç. «Çак сивĕре сире те шел, выçса ан вилĕр», – терĕç.

х х х

Чылайччен çӳрерĕç çамрăксем вăрман тăрăх, тăвайккинчен те килленичченех ярăнчĕç. Кăнтăрла çитрĕ. Çанталăк çемçелчĕ, ăшăтса та пăрахрĕ. Хĕвел пăхать. Тăвайккинчен лутра йывăççем çинчен тумла патлатма тытăнчĕ. Йывăç вуллисем çумĕнчи, çĕр çинчи çӳхе юр кăштах ирĕлчĕ. Унта хуртсен, нăрăсен хăмăр симĕс личинкисем курăнса кайрĕç. Эрешмен чĕпписемпе йывăç пăрçисем ăшă юр çинче хуллен шуçаççĕ.

– Ай-уй, кунта тата пĕр каткă çӳрет, – пĕлтерчĕ вырăс ачи, юман тункати умне пырса.

– Каткăсем ăшăтмасăр ирĕке тухакан марччĕ-çке. Тен, вăл хуралçă-разведчик пулĕ?

– Ку вырăн хӳтĕ, хĕвел пичĕ. Кунти айлăма çил ачисем те часах шыраса тупас çук. Каткă та хăйĕн пысăк йăвикупинчен тухма пултарнă, – тет Карпов юлташĕ.

Çамрăк та пĕчĕк каткă, сарăрах тĕслĕскер, хăйĕн çемçе йăвине васкасах кĕрсе çухалчĕ.

– Акă мĕнле илемлĕ Чăваш çĕршывĕнчи тавралăх! – кăкăр тулли сывласа илчĕ Вова. – Юрататăп эпĕ çак чăваш тавралăхне, вăл хĕлле те, çулла та питĕ илемлĕ. Çак вырăнта эпĕ мĕн пĕчĕкренех çӳренĕ, киленнĕ, çара уран чупнă, кăмпа-çырла пухнă, майăр татнă.

– Чăнахах та, питĕ илемлĕ вырăнсем, – килĕшрĕç ыттисем те. Анчах мĕнле-ха хăвăртах ăшăтса пăрахрĕ?

– Çил çаврăнчĕ, кăнтăр енчен вĕрме тытăнчĕ, çавăнпа кăнтăр тĕлĕнче самантлăха кăшт ăшăтрĕ, ăшă сывлăш сив-

ве çĕнтерсе килчĕ. Раштав вăл – хĕл пуçламăшĕ; хĕвел çу енне, çанталăк хĕл енне кайнă вăхăт. Часах акă чи кĕске кунсем, чи вăрăм та сивĕ çĕрсем çитеççĕ. Тепĕр чухне кăнтăр тĕлĕнче хĕвел чăр пăхса илет те хушăран ăшăтса пăрахни те пулкалать.

Кассăн-кассăн вĕрекен çил вăрман енчен темле сасă илсе килчĕ. Ачасем çаврăнса пăхрĕç. Вар çийĕпе колхоз йĕтемĕ патнелле виçĕ пăнчă – иккĕшĕ пысăкрах, тепри питĕ пĕчĕк – хăвăрт куçса килни тăвайккинчен питĕ лайăх курăнать. Ĕмĕлкесем çывхараççĕ, куç уйăрса илме пуçларĕ.

– Ачасем, паçăрхи пĕччен мулкача йытăсем мĕншĕн хăвалаççĕ вара?

– Йытăсем мар вĕсем, юлташсем, кашкăрсем.

Пĕчĕк пăнчи, сăрă çăмхи – малта; унтан икĕ айккинче, кăшт каярах, кашкăрсем ĕрĕхеççĕ. Вĕсен хушши пĕчĕкленсех-пĕчĕкленсех пырать, анчах куянĕ ниçта та пăрăнма шутламасть, малаллах ыткăнать, юр кĕрчĕсем хывса лартнă чăнкă çыран патнелле вĕçтерет.

– Мĕншĕн-ха чалăш куç кунталла, ял патнелле, чупмасть, мĕнле майпа вилĕмрен çăлăнасшăн? – чăтса тăраймарĕ Лев.

– Ан васка, – тавăрать белорус ачи, – часах акă веçех паллă пулĕ.

Шап-шурă куян хăвăрт сиктерсе пырса чăп-чăнкă çырмана сикрĕ, аялалла çăмха пек йăваланса анчĕ, йăпăр-япăр тăчĕ те улăх тăрăх çил пек кустарчĕ, кашкăрсене кĕске хӳрине кăна кăтартса хăварчĕ. Кашкăрсем вара, хыттăн чупса пынипе, тăвайккинчен кĕрт ăшне леплетсе кĕрсе ӳкрĕç, унталла-кунталла сиккелерĕç, тухасшăн тапаланчĕç, тарăн лапамалла шуçса анчĕç, унтан вĕсем çыранран тухрĕç, йĕритавра пăхкаларĕç те нимсĕр-мĕнсĕрех каялла лăпсăртатрĕç. Куян ку вăхăтра йĕтем çинче лăпкăн канса ларнă, симĕс утта кăтăрт-кăтăрт çинĕ, кашкăрсене улталанишĕн савăннă.

– Акă сана куян тус, – терĕ Петренко та çăмăллăн сывласа ярса. Епле вăл хăйĕн тăшманĕсене ăста улталарĕ, чике тăршшех лартрĕ.

Тĕрлĕ халăх ачисем шăкăл-шăкăл калаççа, савăнса-кулса, вар-вар урлă, уй-хир тăрăх ярăнса, ял еннелле тӳрĕ çул тытрĕç. Малта – чăваш ачи. Пĕр сăрт çинчен аннă чухне Лев йĕртен пăрăнса кайрĕ те тĕмескерен такăнчĕ, пуç хĕрлĕ ывтăнчĕ, йĕлтĕрĕсене çӳлелле чармакласа, лакăмри юр ăшне тимĕр пăрçа пек чăмрĕ, çемçе юр ăшне палт кăна кĕрсе выртрĕ.

– Ну, эсир чăвашсем, юртан питĕ пуян, – канлĕ выртнă çĕртех ӳпкелешет Петренко, – ытла та кулăшла ярăнса антăм, юрать-ха меллĕ ӳкрĕм.

– Юр çутçанталăк пурлăхĕ, илемĕ, – тавăрать Карпов. – Хĕллехи юр – çуллахи нӳрĕк, кĕлетри тырă, теççĕ.

– Эсĕ ял ачи çав, Вова, çавăнпа хăв майлах пуплетĕн. Ак тамаша: манăн кивĕ йĕлтĕр хуçăлнă пулас.

– Хуçăлни вăл хуçăлса ӳкниех мар-ха, киле çитме пулĕ.

Лев ури çине тăчĕ, ачасем йĕлтĕре çавăркаласа пăхрĕç. Унăн пĕр йĕлтĕрĕ, тепринчен кăшт кĕскереххи, пусĕнчен йĕр туса çурăлнă, кантра тирнĕ шăтăк тĕлĕнчен аманнă, хуçăлнă, анчах шартах хуçăлса-уйрăлса ӳкмен. Йĕлтĕрçĕсем ăна авса тӳрлетрĕç, вырăнне лартрĕç, шĕвĕр пусне курăспа çыхса çурăкне пытарчĕç.

– Эх, мирлĕ пурнăç пулнă пулсан çакăн пек кивĕ те хăрахшар йĕлтĕрсемпе аппаланас çукчĕ те, анчах вăрçă хупларĕ. Халь лайăх йĕлтĕрсем фронтра та нумай кирлĕ çав.

– Ан кулян, Лев тусăм, – лăплантараççĕ юлташне ыттисем. – Вăрçă пĕтсен каллех çак вырăнта тĕл пулăпăр. Ун чухне çĕнĕ йĕлтĕрсемпе е çĕнĕ велосипедсемпе ярăнăпăр.

– Вăл пулатех, тусăмсем, – хуравларĕ Лев. – Мĕншĕн тесен пирĕн çĕршыври халăхсем туслă, пĕр тăван пекех. Çав туслăха нимĕнле тăшман та çĕнтереймĕ, аркатаймĕ.

Шап-шурă юр пĕрчисем вĕлтĕртетсе вĕçме пуçларĕç. Хăшĕсем тумтир çаннийĕ çине пыра-пыра ӳкеççĕ. Петренко вĕсем çине чылайччен тинкерсе мĕн киленичченех пăхса пычĕ, вĕре-вĕре илчĕ. Лешсем, çăмăл мамăк еверлĕн, тумтир çинчен вĕлтĕр вĕçсе каяççĕ, хуллен-хуллен çĕр çинелле анса выртаççĕ. «Епле илемлĕ те илĕртӳллĕ эсир, Чăваш

çĕршывĕнчи юр пĕрчисем! Сирĕн çине манăн вĕçĕмсĕр пăхас, ĕмĕрлĕхе астуса юлас килет. Эсир пирĕн патри юр пĕрчисенчен илемлĕрех те тасарах пек туйăнатăр. Е эпĕ хам тăван килте чухне сăнасах пăхман-ши?» Акă унăн алсишĕ çине темиçе юр пĕрчи çăмăллăн пырса ларчĕ. Пурте вĕсем питĕ-питĕ капăр, чечеклĕ, илемлĕ, йăлтăркка...

Çил каллех шăхăрса ӳлеме тытăнчĕ. Вĕренекенсен хуйхăллă калаçăвне итлесе тăчĕ-тăчĕ те инçете вĕçтерсе кайрĕ. Хĕвелĕ те хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе вăрман хыçне пытанчĕ.

– Кĕçĕр каллех сивĕтет, халех сăмсана чĕпĕтме пуçларĕ, – тет белорус ачи сăмсине çӳхе перчеткепе шăлкаласа.

– Çĕркаçхинчен кая пулмĕ, – килĕшеççĕ ыттисем те.

– Паян пире уй-вăрман тăрăх кăтартса çӳренишĕн пысăк тав, Вова. Ку пирĕншĕн зоопаркри экскурси пекех пулчĕ, – терĕç куçса килнĕ ачасем.

Вырăспа украина, чăвашпа белорус ачисем пĕр-пĕрин аллисене хыттăн чăмăртарĕç. Ыталанса илчĕç те чылайччен тăчĕç. Куççулĕсем шурă юр çине тумларĕç.

## Кавӗрле юсанчӗ

Раштаван пиллӗкмӗшӗ. Йӑмралӑх урамӗнчи пӗр килте ирех вӑранчӗҫ. Улӑм витнӗ кивӗ те пӗчӗк пӳрт. Краҫҫын лампи вӗлтлетсе ҫунать. Тӑрӑхла сак айӗнче ҫака калӑп, кукӑр шӗшлӗ тата пушӑт таткисем выртаҫҫӗ. Ахӑртнех вӗсене путексем пырса аркатнӑ ӗнтӗ. Алӑк патӗнче стена ҫумӗнче кукӑр ҫекӗлсем, унта ҫӑпата кантрисем уртса янӑ. Пӗр хӗрарӑм тӗпелте кӑштӑртатать. Кӑмакари вутти тивсе илсен лампине пырса сӳнтерчӗ. Тӗтӗм-сӗрӗм кӑларса ан лар, ачасем кӑштах ҫывӑрччӑр. Хам кӑмака ҫутипе те ӗҫлӗп». Икӗ пӗчӗк путек урайӗнче сиккелесе ҫӳреҫҫӗ. Алӑк тӗлне ҫитсен чарӑнаҫҫӗ те тулалла пӑхса, макӑраҫҫӗ.

– Эй, шельмӑсем, шӑпӑрт, – пӑшӑлтатать кил хуҫи. – Ют хӗрачасенчен аван мар. «Эх, пӗлтӗр ку вӑхӑтра пӑрупа сысна ҫурисем те пурччӗ, халӗ...»

Укҫине аппа алӑк патне пычӗ. Кӑмака ҫинчи виҫӗ хӗрача мӑшлаттарсах ҫывӑраҫҫӗ. Ҫывӑрӑр, хӗрӗмсем, канлӗнех ҫывӑрӑр, пирӗн кӑмакаҫи аслӑ та ӑшӑ. Сирӗн аҫу-пиччӳ сем те вӑрҫӑра асапланаҫҫӗ, тен, шӑнса та кӳтеҫҫӗ пулӗ. Кунта лӑпкӑ. Эх, ку усал вӑрҫа! Кам шутласа кӑларнӑши ӑна? Кил хуҫи каллех кӑмака умне ҫитрӗ, ҫӗрулми шуратма тытӑнчӗ. Украинка кӑмака ҫинчен вӑрахӑн анчӗ, ҫӑвӑнчӗ, ҫаннисене таварса кил хуҫи арӑмӗпе пӗрле улма шуратма пуҫларӗ.

– Эсӗ мӗн ытла ирех тӑтӑн?

– Эпӗ паҫӑрах вӑрантӑм, анчах тӑма аван мар пек туйӑнчӗ. Сире чӑрмантарас мар терӗм. Вова ӑҫта тата?

– Вӑл эпӗ тӑричченех уроксене хатӗрлерӗ те юр хырма тухрӗ, – хуравлать Вова амӑшӗ.

– Эпир пурте уроксене ҫӗркаҫах турӑмӑр-ҫке. Ҫитменнине тата паян канмалли кун.

– Э, Вовӑн йӑли ҫапла. Каҫ вӗреннине ирхине тепре пӑхса тухать, вулать, ҫырать, задачӑсем шутлать, вӗренӳре канмалли кун ҫук, тет вӑл.

– Вӗренме те аван вӗренет, – тет Венера. – Отличник.

– Вăл сана мухтать, – кăмăллăн пĕлтерет Вова амăшĕ. – Вĕренӳре те, ĕçре те пултаруллă. Пирĕн класра пĕр уйăх çех вĕренчĕ, çапах ыттисенчен малта пырать. Эвакур ачисем пурте тăрăшса вĕренеççĕ, тет.

– Манăн чăваш ачисене мухтас килет. Вĕсем тăрăшса вĕренеççĕ, ĕçчен. Анчах кăшт именчĕкрех, хăюсăр.

– Пирĕн халăх именчĕклĕ çав, – килĕшет кил хуçи. – Çапах ĕçре намăс курмасть.

– Вова çемçе кăмăллă. Пĕррехинче уй хапхи патĕнче макăрса тăнине куртăм. «Аттерен çыру кĕтетĕп» тет. Хапха умĕнче, куççульне шăла-шăла почта кĕтнине темиçе те асăрхарăм.

– Санăн юлташусем те тепĕр чухне укăлчана пухăнса тăраççĕ, тăванĕсенчен хыпар кĕтеççĕ. – Хăшĕсем почтальона хирĕç те чупаççĕ, – пĕлтерет хĕрарăм. – Хĕрĕм, Хирлеп ялĕнче сан хурăнташсем пур теççĕ-и?

– Вĕсем унта пĕр эрнеренех Çĕпĕрелле кайнă. Çавăнпа эпĕ Ентере килтĕм. Кунта хам пекех куçса килнĕ хĕрачасем пур. Вĕсемпе мана çăмăлтарах пулчĕ. Паян кăмакари вутă мĕншĕн çиллес шартлатать?

– Ăвăс вутти яланах хытă шартлаттарса çунать. Чăрăшпа хыр та çавăн пекех ятлаçаççĕ. «Кĕл пуличчен калаçса юлас» теççĕ.

– Кăмака çинчи тĕттĕм кĕтесри çĕрĕк вут сыпписем вăйсăррăн çутă курăнаççĕ. Ку тата мĕншĕн?

– Хытă çĕрĕк йывăç шурă сарă тĕслĕ пулать, тĕттĕм чухне тĕксĕм çутă кăларать. Çав вăйсăр, хевтесĕр çутта эпир шăши вутти тетпĕр. Кăмака çинчи çĕрĕк çăка вуттине çанталăк сивĕтсен тимĕр кăмака валли хатĕрленĕччĕ. Малашне каççерен ăна хутмалла пулĕ.

– Кăçалхи хĕл питĕ сивĕ пулмалла теççĕ.

– Виçĕм кун каçхине çĕнĕ уйăх куртăм, – каласа парать Вова амăшĕ. – Вăл питĕ чăнкă курăнчĕ. Сылтăм енчен аялтарах. Теприсем ăна меслерле уйăх теççĕ. Çĕнĕ уйăх çавăн пек илемсĕр чăнкă меслерле курăнсан, яланах шартлама сивĕ çитет. Çулла шăрăх пулать.

Вова пӳрт алăкне кăшт усрĕ те путексене тулалла илсе тухрĕ. Амăшĕсем патне витене хупрĕ. Сивĕ сывлăш пӳрталле чăмрĕ. Урайĕнче мĕкĕлтетсе ҫӳрерĕ те йĕри-тавра саланчĕ, вырăспа белорус хĕрачисем тăчĕҫ.

– Ну, манăн хуллен хатĕрленес, – ассăн сывласа каларĕ украинка. – Кăнтăрлахи пуйăса ĕлкĕреймĕп тата.

– Халĕ эсĕ ăҫта каятăн, хĕрĕм? Вăрҫă пĕтиччен тăхтамаллаччĕ.

– Мускава ҫитетĕп, хамăр тăвансем патне.

– Унта вăрҫă пырать вĕт-ха...

– Нимĕҫсене Мускав патĕнче тытса чарнă, аппа. Хулана кĕртмен. Часах вĕсене каялла хăваласа ярĕҫ.

– Тем пекехчĕ. Э, тăхта-ха, – хыпаланса ӳкрĕ сывмар хĕрарăм. – Манăн сана 5 тенкĕ укҫа памаллаччĕ. Качака илнĕ чух кивҫен илнине.

– Ҫук, ҫук, Ксени аппа, – хирĕҫлет Ларченко. – Эпĕ ăна каялла илместĕп. Хваттершĕн, пĕр уйăх хушши кунта ҫисе-ĕҫсе пурăннишĕн пултăр. Тавах сире, хăвăр тăван пекех усрарăр, пăхрăр. Хучĕ-кĕнекисене те веҫех Вова пачĕ.

– Хăвăра пысăк тав, – укҫине Венера кĕсйине чикнĕ май пуплет кил хуҫи. – Хĕрĕм вилнĕ хыҫҫăн эсир пирĕн пата килни маншăн тем пекех ҫăмăллăх пулчĕ. Эпĕ сирĕнпе йăпантăм, хуйха-суйха пусартăм. Хам ачасем пекех пурăнтăмăр. Эсĕ кайсан леш хĕрачисем те кунтан тухса каяҫҫĕ пулĕ ĕнтĕ?

– Анне, эпир Ноннăпа Женьăна хамăр патран ямастпăр, – чăтаймарĕ Вова шăллĕ. – Вĕсене юлташ тата виҫĕ хĕрача илсе килетпĕр.

– Апла эпир пиллĕкĕн пулатпăр, – хăюсăррăн хушрĕ вырăс хĕрачи. Хăвăра йывăр пулĕ.

– Э, халь ҫăмăллине шырамаҫҫĕ, – каллех хавхаланчĕ Вова амăшĕ. – Кĕҫĕрех килĕр, пурăнăр. Фермăран сĕт илĕпĕр. Ҫăнăхпа улма пур-ха. Колхоз та уйăхсеренех тырă парать. Эсир халĕ 10–12 ҫулта ҫех. Сире хĕрхенмесен, пирĕн кама хĕрхенес.

Вова тултан кӗчӗ, хӑйӑ ҫутрӗ. Пурте пӗрле ирхи апат ҫирӗҫ. Венера япалисене хатӗрлерӗҫ.

– Ку кутамккара хӑвӑн ҫуллахи ҫи-пуҫ, – пӗлтерет Вова, – чӑматанра – апат-ҫимӗҫ.

– Эпӗ унта кишӗр куклипе улма икерчӗ тата икӗ йӗкӗр ывӑҫ мӑйӑр хутӑм, – пӗлтерет Укҫине аппа.

– Вӑл мӑйӑрсене лартсан шӑтаҫҫӗ-и? – ыйтрӗ Ларченко.

– Шӑтмаҫҫӗ. Вӗсене кӑмакара типӗтнӗ, – ответлерӗ Укҫине аппа.

– Сана шӑтакан мӑйӑр кирлӗ-и, Венера, – тӗпкӗчлет хавхаланнӑ Вова. – Ара, манӑн ун пек мӑйӑр кӑштах пур, икӗ теҫетке пулӗ. Эппин, сана пӗр вуннӑшне парса ярам. Украина ҫӗрӗ ҫине акса пӑх. Тен, хӑшӗ те пулин шӑтса ӳсӗ, пысӑк тӗмлӗ шӗшкех пулӗ. Чӑваш ҫӗршывне аса илтерӗ.

– Тем пекех аванччӗ, – килӗшет хӗрача. – Хула ҫывӑхӗнче, вӑрман хӗрринче, пирӗн пӗчӗк пахча пур. Унта эпир ҫулсеренех виноградпа томат ӳстеретпӗр. Чечек йӑранӗсем те пур. Манӑн юратнӑ чечексем мӑкӑньпе хӗвел ҫаврӑнӑш тата сиреньпе палан.

– Эпӗ ҫурхи ҫӗмӗртпе ҫӳҫе кӑчкине кӑмӑллатӑп, – чӑтса тӑраймарӗ Вова шӑллӗ.

Пурте кулса ячӗҫ, Карпов кӗҫӗнни ҫеҫ хӗрелсе кайрӗ те кантӑк умне пырса ларчӗ. Часах Карповсем патне йышлӑн пухӑнчӗҫ.

– Ну, Укҫине аппа, сывӑ пул, – аллине панӑ май каларӗ Ларченко. – Лӑпкӑ пурӑн. Сыв мар ҫынна хуйхӑрма, макӑрма юрамасть.

– Вӑрҫӑ пӗтсен тепре килсе кур, хӗрӗм.

– Ҫапла пултарччӗ. Тен, Мускавра лару-тӑру йӗркеллех пулсан, каллех ҫитӗп. Мана кунта килӗшрӗ.

Ачасем пурте пӳртрен тӗркешкелесе тухрӗҫ. Вӗсене хирӗҫ кӑсӑя чӳречене пырса ҫулӑнчӗ. Аяккалла вӗҫсе кайрӗ, кӑмака тӑрпи ҫумне пырса ларчӗ.

– Ку шӑнса кӳтнӗ кайӑк, ӑшӑнтӑр, – тет кил хуҫи. – Ҫанталӑк ӑшӑтиччен пӳртрех пурӑнтӑр. Эсӗ, ывӑлӑм, паян кайӑксене апат ҫитертӗн-и?

– Патăм, анне. Кăсăясене улмуççи çинчи пĕчĕк сырăш çине, кăвакарчăнсем вите умĕнче чăхсен апатне çиеççĕ.

– Хамăра йывăр пулсан та, кайăксене кунсеренех çитерес пулать. Шел вĕсене. Çулла хăйсем те пире пулăшĕç.

Укçине аппа канма выртрĕ. «Хытă ывăнтăм, – шухăшлать вăл. – Пуç çаврăнать. Пĕр сурăхпа качака вĕçне çех юлтăмăр-çке. Тата икĕ пĕчĕк путекпе виçĕ чăхă пур. Автанне хĕрĕм вилсен пусмалла пулчĕ».

Пӳртре шăпах. Кăмака айĕнчи шăрчăксем тунсăхлăн чĕриклетеççĕ. Кĕçĕн ывăлĕ, амăшĕ патне пычĕ, ăна лăплантарчĕ. Тултан шыв ăсса кĕчĕ, урайне шăлса тирпейлерĕ.

**х х х**

Шкул патне ачасем йышлăн пухăннă.

– Ачасем, – терĕ вожатăй-учительница. – Ларченкона ăсатса ярсанах кĕреçесем çĕклесе хире тухатпăр. Юр тытма. Аслă классенче вĕренекен арçын ачасем сенĕксемпе фермăна кайĕç. Унти тислĕке те хире кăлармалла. Тата тепĕр пĕлтерӳ. Хăвăр пăхакан килти кроликсене Çĕнĕ çул тĕлне района леçетпĕр. Хĕрлĕ Çар валли. Унччен вĕсене лайăхрах çитерĕр, самăртарах пулччăр.

Унтан вăл каякан хĕрачана çапла канаш пачĕ:

– Каялла таврăнмалла пулсан, ку ăшă тумтирсене пĕрпĕр хĕр-салтака парса хăвар. Яла килсен сана каллех тумлантаратпăр.

– Юрать! – килĕшет Ларченко аллине сулнă май.

– Вожатăй, Çĕнĕ çулта мана пионера йышăнаççĕ-и? – ыйтать Хурчка.

– Ун пирки хăвна вĕрентекенпе калаçас пулать. Пионера Çĕнĕ çулта мар, çуркунне илеççĕ. Хăвна йĕркеллĕ тытсан, тăрăшса вĕренсен, пионер пулма пултаратăн. Ытти юлташусемпе пĕрле колхоза та пулăшас пулать.

– Эпĕ халь юсантăм, сайра хутра çеç кăштах аташас килет. Кĕçĕ кĕçĕтнĕ пекех. Хам та сисейместĕп.

Пурте ахăлтатса кулса ячĕç. «Миронов йĕркеленчĕ, пионерсен ретне тăма пултарать. Унăн та хĕрлĕ галстук çыхас килет ĕнтĕ», терĕç.

Ачасемпе сывпуллашнă хыççăн Ларченко, Карпов тата эвакур ачисем тăвалла утрĕç. Вĕсем хыççăн çиччĕмĕш класри арçын ачасем.

– Ку кам ачи пулчĕ, лайăх тумланнăскер, – илтĕнчĕ хыçалта карчăк сасси. – Ăна салтака ăсатаççĕ-и?

– Украина хĕрачи вăл, килне каять, – ăнлантараççĕ вĕренекенсем ват çынна.

– Сарă кĕрĕкпе мулкач тирĕнчен çĕленĕ кăвак калпак ăна ытла та килĕшеççĕ, – тет тепĕр ватă çынни. – Уринче çĕнĕ çăматă. Майне ула шарф çыхнă. Шурă çăм çиппинчен çыхнă пӳрнескеллĕ алсишĕ юр пĕрчи пек чечеклĕ курăнать.

– Вĕсене веçех шкул илсе пачĕ. Эпир те пулăшрăмăр, – каласа парать çинçе саслă вĕренекен.

Ачасен сассисем илтĕнми пулчĕç. Хĕвел хĕрелсе тухать. Çанталăк сивĕ, лăпкă.

– Ачасем, – терĕ Вова хăйĕн юлташĕсене. – Халĕ эсир ферма кĕлечĕсем патне кайăр, икĕ лав çине хура тулпа кантăр вăрри тиеме пулăшăр. Вĕсене патшалăха памалла терĕç. Эпир Венерăпа хуллен малалла утатпăр. Уничере сире кĕтсе тăратпăр.

– Юрать, юрать, – килĕшрĕç ачасем, Венера япалисене çĕкленĕскерсем.

– Куçса килнĕ ачасене те пĕрле илсе кайăр, – хушса хурать Карпов. – Вĕсен çуна çине ларса çӳрес килет. Фермăра тата лаша витинче курса çӳреччĕр.

Ачасем урăхла калаçу пуçарчĕç.

– Ĕнер эпир хамăр шефа илнĕ тихасемпе пăрусем патĕнче пултăмăр, – пĕлтерчĕ пĕри. – Аванах ӳсеççĕ. Хĕрачасем те путексемпе сысна çурисене тăтăшах кайса асăрхаççĕ. Фермăра ĕçлекенсене пулăшаççĕ.

– Хăвăртрах ӳсчĕр çав. Салтаксене валли какай пултăр. «Малтанхи хут курсан, Ларченко имшеркке те пĕчĕкрехчĕ, – унпа юнашар утнă май шухăшлать Карпов. – Халĕ авă, ăшă çĕлĕк тăхăннипе ман çӳллĕшех. Пичĕ те илемленчĕ, сăн кĕчĕ. Хытă хуйхăрать пулин те хăйне лăпкă тытать. Çынсемпе те йĕркеллĕ калаçать. Кăмăллă, çепĕç. Вă-

хӑчӗпе савӑнма та пӗлет. Октябрь уявӗнче юрлани-ташлани халӗ те куҫ умӗнчех».

– Вова, эсӗ мӗн чӗнместӗн. Темиҫе каласа та илтмерӗн.

– Каҫар, эпӗ шухӑша кайнӑччӗ.

– Ман сирӗн пата юрӑ кӗнеки манса юлнӑ, – пӗлтерет Ларченко. Кӗнеке ӑшӗнче хӑйӗн пӗчӗк сӑнӳкерчӗкӗ пуррине шарламарӗ. – Кӗтесри сӗтел сунтӑхне хунӑччӗ.

– Эппин каялла чупас пулӗ. Туххӑмрах илсе килетӗп.

– Аплах чӑрмантарас мар, – лӑплантарать хӗрача. – Асӑнмалӑх сирӗн пултӑр. Ерҫнӗ самантра Украина халӑх юррисене аса илӗр, юрлӑр.

– Эпӗ те сана чӑваш юррисене ярса паратӑп. Вырӑсла куҫарнисене.

– Япала манса юлни лайӑх паллӑ теҫҫӗ. Хӑҫан та пулин тепре килмелле пулӗ. Вӑрҫӑ пӗтсен, пурнӑҫ лайӑхлансан...

Хӗрача именчӗ, илтмӗш пулчӗ. Калаҫӑва тепӗр еннелле пӑрчӗ.

– Вырӑна ҫитсенех, – терӗ вӑл, – сирӗн шкула ҫыру яратӑп. Хӑвӑр ответ парӑр-и?

– Паратпӑр. Эпӗ хам та ҫырӑп, юрать пулсан.

– Анчах ман пата хӑрӑмран тунӑ чернилпа ан ҫыр. Эпӗ ӑна питӗ юратмастӑп.

– Хӑрӑмлипе мар, юман ҫӑпанӗнчен тунӑ сарӑ хӑмӑр тӗслипех ҫырӑп. Хутне те лайӑххине тупӑп, – пӗлтерчӗ Вова.

– Эсӗ мӗн паян ытла та салху? – кӑсӑкланчӗ хӗрача.

– Хальхи йывӑр кунсенче савӑнмаллиех ҫук, – каласа парать Карпов. – Инкек ҫине синкек теҫҫӗ. Манӑн та ҫавӑн пекех пулчӗ. Иртнӗ вырсарникун госпиталь валли вутӑ леҫме кайрӑмӑр. Мана начар вӑкӑрӗ лекрӗ. Вӑрмантан тухсан хулана кӗрсен, турта хушшинчех вӑл кайса ӳкрӗ те вилсе кайрӗ. Хама тӳлеттереҫҫӗ пулӗ тесе хытӑ хӑрарӑм. Хулари лабораторинче ӑна выльӑх тухтӑрӗ касса пӑхрӗ. «Йывӑр ӗҫпе сивве пула чӗри ҫурӑлса кайнӑ. Уншӑн ача айӑплӑ мар» терӗ. Вара тинех лӑплантӑм. Ун ҫинчен аннене те веҫех пӗлтермен. «Колхоз вӑкӑрӗ ҫул ҫинчех ӳксе вилчӗ. Какайне ҫиме юрӑхлӑ терӗҫ. Салтаксем валли илсе

кайрӗҫ» тесе ӑплантартӑм. Виҫӗмкун кӑна мӗн пулни-иртнине тӗрӗссипе хыпарларӑм. Анне мана ӑнланчӗ.

Карпов хӗрача ҫине сӑнарах пӑхрӗ. Юр пике пекех капӑр вӑл. Аякран пӑхсан тетте пукане тейӗн. «Эпӗ унпа пӗрле пулма та именетӗп, – ассӑн сывласа шутлать Вова. – Кивӗ ҫӗлӗкпе саплӑклӑ пиншак. Атте ҫӑпати. Ҫӗтӗкрех алсишне пиҫиххи хушшине хӗстернӗ. Кивӗ ҫи-пуҫран мӗн вӑтанмалли пур? Эпӗ тислӗк тӑкма каятӑп, уява мар. Ӗҫе лайӑх ҫи-пуҫпа каймаҫҫӗ».

– Ан кулян, Вова. Вӑрҫӑ пӗтсен аҫу таврӑнӗ, аннӳ те сывалӗ.

– Анне хавшак ҫав. Вӑл чун хавалӗпе кӑна пурӑнать. Малтанах атте ҫырӑвӗсемпе ӑпланатчӗ, хавхаланатчӗ. Халӗ нимле хыпар та ҫук.

Урам вӗсне ҫитрӗҫ. Инҫех мар пӗр ватӑ пилеш курӑнать. Ун патӗнче уйӑпсем йышлӑн хӗвӗшеҫҫӗ, шӑннӑ ҫырласене касаҫҫӗ.

– Уйӑпсем савӑннине асӑрханӑ-и эсӗ, Венера? Вӗсен юрри хитре янӑрать, шӑхлич каланӑ пек. Анчах кӑштах салху. Уйӑп сасси манӑн сан юрӑ...

– Ҫитӗ, пичче. Ытлашши мухтани ҫынна сиен ҫех кӳрет. Тата ҫакна ан ман: юлташна хисеплетӗн пулсан, унӑн ҫитменлӗхӗсене асӑрхамалла та куҫранах каламалла. Ӑнлантармалла е асӑрхаттармалла. Совет пионерӗсем ҫавӑн пек тӑваҫҫӗ те.

– Кӑштах утар, ҫак йывӑҫсем патне ҫитер, – тунсӑхлӑн каларӗ арҫын ача. – Ҫул тӑваткӑлӗнчи ҫӑкапа юман эпир сывпуллашнӑ вырӑн пултӑр. Эсӗ манран темиҫе уйӑх кӗҫӗнрех, ҫавӑнпа сана йӑмӑк тесе чӗнес килет. Хирӗҫ мар-и?

– Килӗшетӗп. Эпӗ те сана малашне пичче тейӗп. Юрать-и?

– Аха.

Иккӗшӗ те кулса ячӗҫ. Иккӗшӗ те пӗр-пӗринчен вӑтанчӗҫ.

– Венера йӑмӑкӑм, эпӗ сана питӗ хытӑ хӗрхенетӗп. Эсӗ те тӑлӑх ача. Кам хӗрхенӗ, кам пулӑшӗ сана?

– Халь ман пеккисем нумай. Ҫапах эпир тăван ҫĕршыв-ра пĕччен те, тăлăх та мар.

– Йăмăк вилнĕ хыççăн, эсĕ маншăн тăван пекех пулса тăтăн.

– Пичче, сирĕн патра хĕрачасем те, арçынсем те пур. Ан тунсăхла, туслă пурăнăр.

– Вĕсем маншăн ҫывăх юлташсем, эсĕ вара – тус, вĕсенчен те ҫывăхрах. Сана эпĕ хăнăхрăм.

## Мĕн-ши вăл туслăх?

Таçта инçетре, анăçра, вăйсăр сасăсем илтĕнчĕç, кĕмсĕртетнĕ пек туйăнчĕç.

– Хамăрăннисем тăшмана чĕтретеççĕ пулас, – савăнăçлăн калать Ларченко.

– Пĕртен-пĕр йăмăкăм! Салтакран таврăннă чух эпĕ сирĕн пата кĕретĕп. Юрать-и?

– Ун çинчен пуплеме иртерех-ха. Малтан вăрçă хуйхи пĕттĕрччĕ. Иксĕмĕр салтака кайиччен чылай вăхăт иртĕ. Халлĕхе эпир вĕренекен ачасем çех-ха. пурăнсан, куç курĕ. Туслă юлташсем пек, çырусем çӳретĕпĕр.

– Çĕнĕ çул ёлкипе Мускава пыма юрать-и?

– Пичче, ыран ăçта пулассине эпĕ хам та пĕлейместĕп. Çавăнпа...

– Пĕлетĕп, йăмăк, ăнлантăм. Айван сăмахсемшĕн каçар мана. Çапах та эпĕ сан пата яланах çыратăп.

– Йĕркеллĕ туслăх кашни кунах çырусем çырнинче мар, Вова. Çыраканĕ тĕрĕс те кăмăллă пулнинче.

– Эппин, пионерла сăмах...

– Сăмах пама ан васка. Малтан ĕçне ту, лайăх вĕрен. Юлташ тенин сăпайлă та ĕçчен пулмалла. Çынсемпе йĕркеллĕ калаçмалла.

– Эпĕ мĕн пĕлетĕп ĕнтĕ, – кăмăлсăрланчĕ арçын ача. – Пĕчĕклех кĕтӳ кĕтнĕ, ялтан ниçта тухман. Шупашкарта пулса та Атăл çине тинкермен. Пăрахутпа яраплана çывăхран курман.

– Аплах ан кӳренсем, пичче.

– Çак йывăççем патĕнче уйрăлăпăр пулĕ, йăмăкăм. Ку юманпа çăкана ял çыннисем, «яла хураллакан ватă арçынпа хĕрарăм» теççĕ. Кирек хăçан та илемлĕ вĕсем. Патвар юманĕ çулăн пĕр енче, кăмăллă çăки тепĕр енче ӳсеççĕ. Тепĕр чухне тураттисемпе хăлаçланаççĕ, анчах алă параймаççĕ. Апла пулин те туслă вĕсем: пĕр-пĕрне сыхлаççĕ, сĕнӳсем параççĕ. Таврари халăх ку вырăна «юманпа çăка уйĕ» тесе ят хунă.
– Ытла сăнарлă калатăн эсĕ, пичче. Ытарлă та.

Икĕ кăвакарчăн ферма енчен вĕçсе килчĕç. Арман тĕлĕнче çаврăнкаларĕç те кунта килсе ларчĕç. Турат çинчи пас шăпăрах тăкăнчĕ.

– Акă кăвакарчăнсем сана ăсатса яма çитрĕç, – тет Карпов. Унтан вăл кĕсйинчен тырă пĕрчисемпе çăкăр тĕпренчĕкĕсене çулваррине силлерĕ.

– Сийĕр, сунатлă тусăмсем. Выçă ан çӳрĕр. Тен, эсир мана палларăр та пулĕ.

Пирĕн кил хушшинче те мăшăр кăвакарчăн яланах апатланать. Халĕ эсир çак хĕрачана вăрмана çитиччenex ăсатăр. Телейлĕ çул кăтартса ярăр, сывлăх сунăр.

– Ну, йăмăк, каçар, – малалла калать пиччĕшĕ. – Эпĕ сана ăсатма хулана пыраймастăп. Анне сывмар. Паян воскресник. Маншăн шкулта та пионерла ĕç чылай. Ĕнер стена хаçачĕ кăлартăмăр. Тепĕр эрнинче сбор пулать. Унтан Çĕнĕ çул ёлкине хатĕрленмелле. Хăвах пĕлетĕн, эпĕ дружина совечĕн председателĕ.

– Тата класри староста, – хушса калать Ларченко.

– Каланине итлес, хушнине тăвас пулать. Унсăрăн йĕрке пулмасть.

– Çавăнпа сана вĕрентекенсем пурте хисеплеççĕ. Ан кулян, пичче: мана Петрусьпа Петренко хулана çитиччenex ăсатса яраççĕ.

– Тата мăшăр кăвакарчăн, – хушса хучĕ Вова.

Ирхи хĕвел. Раштав пасĕ. Хăрпăк юр ӳккелет. Икĕ ача икĕ йывăç умĕнче тăраççĕ. Çул варрипе икĕ кăвакарчăн илемлĕн утса çӳреççĕ, апатне сăхаççĕ. Ялтан тулли лавсем тухрĕç. Венера ассăн сывласа пуçне усрĕ. Вова хаçатпа чĕркенĕ пионер галстукне кĕсйинчен кăларчĕ, хĕрача майĕнчен çыхса ячĕ.

– Васкарах, Вова. Çынсем çитеççĕ. Эпĕ вăтанатăп.

– Ырă сунса пирĕн çемьене пулăшнăшăн. Телейлĕ пул, Венера тусăм. Тăванусене хăвăртрах тупмалла пултăр.

Ларченко парăмра юлмарĕ. Вăл та пĕчĕк парне малтанах хатĕрленĕ иккен. Кофта кĕсйинчен пĕчĕк тутăр кăларса Карпова тыттарчĕ. Унта тĕрлĕ тĕслĕ çипсемпе тĕрленĕ илемлĕ чечексем.

– Мана тăван пек усранăшăн, хĕрхеннĕшĕн, Вова тусăм, – терĕ. Унтан Вовăна питĕнчен хăвăрт чуп туса илчĕ те малалла чупрĕ. Кĕрĕк арки çех ик еннелле уçăлса пычĕ.

– Хай живе дружбе!

– Туслăх çирĕп пултăр!

Çынсем Вовăран иртсе кайрĕç. Утсем хуллен юртаççĕ. Ларченко çуна çине ларсанах виçĕмкун мĕн пулнине аса илчĕ.

... Тунсăх хĕвел пуçне кăтартрĕ. Колхоз садĕнче ĕç пуçланчĕ. Ачасен сасси таврана ян та ян каять. Вовăпа икĕ юлташĕ вăкăрпа вăрмантан килчĕç. Хăйсем тарланă. Вăкăрĕ те хашкать. Çуни çине хыр, чăрăш тураттисем тиенĕ. Хĕрачасем вĕсене улмуççи вулли тавра вырнаçтараççĕ. Арçын ачасем пушăт таткипе çыхса пыраççĕ, юрне таптаççĕ. Ларченкопа хĕр тантăшĕсем армутипе хĕвел çаврăнăш тунисене çĕклесе килеççĕ. Вĕсем те улмуççисене чĕркеме юрăхлă. Пахчан ял енчи кĕтессинче улттăмĕш класри арçын ачасем тĕрмешеççĕ. Улмуççи вуллисене тислĕк шĕвекĕпе сĕреççĕ. Вĕсемпе пĕрле ватă пахчаçă кĕрт çийĕн утать, хăй ăсталанă пĕчĕк çил арманĕсене юр ăшне чике-чике пырать. Шалча çинчи çав йывăç теттесем кăлтăртатса авăрни, ирхаç килен куянсене шиклентерет. Шкул директорĕ хастар вĕренекенсемпе хавхаланать. Кашни ушкăн патне пырса ăнлантарать, пулăшать. Хĕвел пăхать. Çурçĕр çилĕ пит-куçа чĕпĕтет. Венера аякран Вовăна асăрхарĕ, унăн пичĕ тата хытăрах пĕçерсе кайрĕ. Шухăш çăмхи малалла сӳтĕлет.

«Вова кам-ха вăл маншăн? Палланă ача, юлташ. Илемлĕ кĕлеткеллĕ, чипер сăн-питлĕ. Ĕçре маттур, калаçура лăпкă. Утни-чупни васкав, тепĕр чухне ытлашши хыпаланчăк та çемçе чунлă. Юлташĕсем ăна юратаççĕ, унпа пĕрле пулма тăрăшаççĕ. Çынна усă тума тăрăшать, хĕрхенет. Çамрăк пулин те хура-шур нумай тӳснĕ. Тепри, тен, хăй ĕмĕрĕнче те ун чухлĕ нуша курман-тăр. Мĕнле пулса тухрĕ-ха? Хăçан эпĕ ăна хĕрхенме пуçларăм. Вăл ача малтанхи хут курсанах мана килĕшрĕ. Йĕркеллĕ, сăпайлă, кăмăллă та тĕрĕс пулнишĕн. Октябрь уявĕ тĕлĕнче, йăмăкне пытарса

тавраннă чухне, вăл ман хулпуççи çине хăрах аллине хучĕ. Манăн шăмшак сăрăлтатса кайрĕ, чĕре хăвăртрах тапма пуçларĕ. «Венера, сана хам йăмăк пек шутлама, сăмахлама юрать-и?» – терĕ. Ман çине чăр! пăхса, куççульне шăла-шăла илчĕ. Мана халиччен никам куçран ун пек ачашшăн пăхман. Атте-аннепе тăвансем те, юлташ-тантăш хĕрсем те. Чĕрем те ун пек вĕриленмен, ӳт-пӳ кансĕрлемен, пуç ыратман. Мĕн ку? Çакă пулчĕ-ши манăн туслăх туйăмĕ? Çавăнтанпа эпĕ унран вăтанма, хамран хам именме пуçларăм. Тем çитмест, тем кансĕрлет мана. Тен, кăмăлланипе хĕрхенӳ туслăх пуçланнине систерчĕç?

Çук, малашне ун пек çемçешкеленме юрамасть, хăюллăрах та çирĕпрех пулмалла. Туслăх тени çамрăксене кулленех пулăштăр, малалла хавхалантартăр, телей хĕвелĕ патне илĕрттĕр».

– Санăн аçу-аннӳ пур-и? – шăппăн ыйтрĕ вăтам çулхи хĕрарăм, лаша тытса пыраканни. Анчах хирĕç хуравлакан пулмарĕ. Венера илтмерĕ пулас. «Шел ăна, тăлăхскерне. Чăрмантарас мар, шутлатăр. Хулана çитиччен калаçăпăр, çул вăрăм».

Лавсем вăрмана кĕчĕç. Вăрман хуралçин килхушшинче йытă вĕрет. Урамри пахча умĕнче, çултан инçех мар, тарасаллă кивĕ çăл. Унта çап-çамрăк хĕрача тăрать. Хăй çарамасах.

Витрери шыв çине пăха-пăха, çамки çинчи çӳçне тӳрлетет, тутăр ăшне чикет.

– Сывă пул, Венера! – аллине сулса калать чипер хĕрача. – Çамрăк кун-çулу телейлĕ те илемлĕ, пурнăçу икĕ витрери шыв пекех тулли те таса пултăр.

– Тавах, тусăм. «Лесник хĕрачи вăл, пĕрле вĕреннĕскер. Епле илемлĕ, çамрăк хурăн пек. Тĕрленĕ чăваш кĕпипе. Ахальтен мар пулĕ чăваш тĕррине Парижри выставкăра та кăтартнă теççĕ. Тата чăвашсем килĕшӳллĕ сăн-питлĕ пек туйăнать».

Çил тухрĕ. Çул айлăмалла тăсăлчĕ. Утсем ерипен юртма тытăнчĕç. Йывăççем хумханаççĕ, тураттисемпе сулланаççĕ.

Инçетрен килнĕ хĕрачана пуç таяççĕ, ăсатса яраççĕ. Муска-ва çитсенех тăвансене шырама тытăнатăп, – малалла шу-хăшлать украинка. – Украинăна, Çĕпĕре çырăп. Малти лав çинчи Петруськпа Петренко хĕрачасем Венера патне куçса ларчĕç. Виçĕ хĕрача савăнăçлăн шакăлтатма пикенчĕç.

Лавсем куçран çухалчĕç. Вова хĕрача тутрипе куçĕсене шăлса илчĕ. «Мĕн амакĕ ку? Мĕншĕн вăл мана чуп турĕ-ха? Çĕтĕк-çатăк тумтирлĕ ачана. Туслăх тени мĕнле япала? Çурхи сирень чечекĕ, е кĕрхи панулми? Шурă юр пĕрчи, çумăр тумламĕ-кĕмĕшке? Усăллă е сиенлĕ, тунсăх е телей? Эпĕ хăюсăр, ташша-юрра ăста мар. Чееленме е ултавлă калаçма пĕлместĕп. Халиччен мана никам та чуп туман, куçран пăхса макăрман. Ун кăвак чечек пек куçĕсем вара манăн чуна çемçетрĕç.

Эх, пит çăмарти халĕ те пĕçерет. Шăннă пек, ыратнă пек туйăнать. Мĕне пĕлтерет ку? Тен, ачалăхпа сывпуллаш-нине? Çук, ачалăх кунĕсенчен эпĕ виç-тăват çул каяллах уйрăлнă. Аттепе пĕрле хирте-вăрманта ĕçленĕ чухнех. Вăрçă пуçланнăранпа вара çитĕнни пекех ĕçе кӳлĕнмелле пулчĕ. Чим, куççуль тата мĕнле шăрçа е кĕмĕшке шăрçа? Эх, куççулĕм, куççуль... Кашни çыннăнах пур-ши вăл, е пурин те мар?

Карпов çаврăнса пăхрĕ, Чулкаç уйĕнче çынсем юр ку-палаççĕ. «Тепĕр тесен, тунсăху, туслăху. Эпĕ хулари ачаш хĕрача мар. Манăн тислĕк кăларма васкамалла. Тем тума кирлĕ пулĕ ку япаласем. Халь вĕсемпе аппаланма вăхăт çук». Çулпа тислĕк тиенĕ çунасем килеççĕ. Кашни лавĕ çинчех икшер ача. Малта Орлик лаша, хыçалта вăкăрсем. Вова малти лавĕпе кайрĕ. Часах тислĕке пушатрĕç. Вова çара çуна çине тăчĕ, тилхепине хытă тытрĕ – Орлик фер-măналла вĕçтерчĕ.

– Вова, Орлик та сана палласа илчĕ, кĕçенет.

– Хĕрачана вăрман хĕрнех çитертĕн-и мĕн?

– Эсĕ украинкăпа туслă теççĕ. Тĕрĕсех-и? – йĕплеççĕ юлташĕсем Карпова.

– Туслă, туслă, – кăмăлсăрланчĕ Вова. – Эпĕ пур ачапа та туслă. Халиччен никама кӳрентермен, суеçтерсе курман.

– Вова, хăçан колхоз валли кĕл пухатпăр? Килĕрен çирĕмшер витре кĕл, 5 витре кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пама килĕшнĕччĕ.

– Хĕллехи каникул вăхăтĕнче, – хуравларĕ Карпов.

– Виççĕр çирĕм килте сахал мар пухăнать. Çуркунне тата пуçтарăпăр.

– Тата акă мĕн, тусăмсем. Çĕнĕ çулта танксемпе самолетсем тума укçа пухма тытăнмалла. Ку ĕçе кашни пионер, кашни вĕренекен хутшăнма пултарать. Вăй çитнĕ таран. Анне маншăн пилĕк, шăллăмшăн виçĕ тенкĕ паратăп тет.

«Çапах та мĕн-ши вăл туслăх? – çиçет Вова пуçĕнчи шухăш. Усăллă-и е сиенлĕ? Тунсăх е телей? Ӳссе çитсен, кирлех пулсан, ăнланăп. Халлĕхе эпĕ çакна çех пĕлетĕп. Туслăх ачана лайăх вĕренме, ĕçлеме пулăшать. Пур çĕрте те йĕркеллĕ пулма хистет. Хĕрлĕ Çарти салтаксем туслă. Çавăнпа вĕсем тăшманпа паттăррăн çапăçаççĕ.

## Çулпуçпе калаçни

Каçхине вулав çуртне çамрăксемпе вĕренекенсем пухăнчĕç. Кино пуçланас умĕн Яковлев коммунист чăваш çынни Ленина курни çинчен каласа пачĕ.

– Эпĕ 1914–1916 çулсенче вăрçăра çапăçрăм, амантăм. Питĕрте сывалтăм. Тепĕр çулĕнче патшана сирпĕтсе антартăмăр. Ноябрĕн çиччĕмĕшĕнче эпир, хĕрлĕ гвардеецсемпе матроссем, Зимний двореца илме, Вăхăтлăх правительствăна арестлеме приказ илтĕмĕр.

Граждан вăрçи пуçлансанах хам ирĕкпе Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм, каллех йывăр амантăм, Мускаврa сывалтăм. Мана чухăн çын ачи шанчăклă тесе Кремле хураллама илчĕç. Темиçе хут та Ленина курма, вăл калаçнине илтме тӳр килчĕ. Ильич Атăл тăрăхĕнчи çынсене тепĕр чух ентеш тесе чĕнетчĕ.

Паянхи пекех астăватăп, 1918 çулхи пуш уйăхĕн 13-мĕшĕнче, ирхине, Кремле Ленинпа Крупская тата Бонч-Бруевич пычĕç, пӳлĕмсене кĕре-кĕре тухрĕç, тулта уçăлса çӳрерĕç. Ку вăхăтра Кремль çурчĕн кантăкĕсем çĕмрĕкчĕ, стенисем арканнă, хăрăмпа вараланнăччĕ. Çак кунтан пуçласа Совнарком кунта ĕçлеме тытăнчĕ. Ĕнер вĕсем, Совнаркомпа ВЦИК-ра ĕçлекенсем, Петроградран Мускава куçса килнĕ пулнă.

Тепĕр кунне, Кремль кил хушшинче, Ленинпа Дзержинский уçăлса çӳреççĕ. Эпĕ вĕсене хирĕç пултăм, саламларăм, çул парса, иртсе кайма тăтăм. Ильич кăшт чарăнса тăчĕ те:

– Яковлев ĕçсем мĕнле, ентешсенчен çыру илтĕн-и? – терĕ.

– Манăн ялта çывăх тăвансем çук çав, Владимир Ильич, – терĕм эпĕ питĕ хурланнипе. Хам йăрăс тӳрленсе тăтăм.

– Пĕлетĕп, ентеш, çавăнпа ыйтатăп та, – тет куçĕсене кăшт хĕсерех пăхса, – хĕрсем çыраççĕ пулĕ-ха?

– А, вĕсем çыркалаççĕ хушăран, – терĕм эпĕ пуçа чиксе, çулпуç кăмăлне хирĕçлес мар тесе. Хам çавăнтах ăшăр-

хаса кайрăм: ара, ман пата нимĕнле хĕрупраç та халиччен çыру яман-çке.

Ильич эпĕ хумханнине сисрĕ, кăштах суеçтернине туйрĕ пулас.

– Çук, тусăм, эсĕ мана тĕрĕссине каламарăн, – тет вăл кула-кула. – Сан пата халлĕхе хĕрсем çырмаççĕ. Çапах та ан кулян, акă часах интервентсене хуса ярăпăр та киле кайăн.

– Çапла, Владимир Ильич, – терĕм эпĕ савăннипе. – Эсир мана каçарăр, тархасшăн.

– Ку темех мар, Яковлев. Анчах малашне кирек кама та тĕрĕссине çех кала, нимĕн те ан пытар, ан кукăрт.

– Манăн Сирĕн кăмăла пăсас килмерĕ, Владимир Ильич.

– Юрĕ, юрĕ. Ял-йышсене пирĕнтен салам çырса яр, – килĕшрĕ çулпуç юлташĕ çине пăхса. Дзержинский кăмăллăн килĕшсе, пуçне кăшт сулса илчĕ. – Манăн атте чăвашсене сăпайлă та ĕçчен пулнишĕн хисеплетчĕ, май килнĕ таран яланах пулăшма тăрăшатчĕ.

– Илья Николаевич вăл ĕççыннисемшĕн, уйрăммăнах вак наци халăхĕсемшĕн, питĕ тăрăшнă. Хăй кĕпĕрнере çирĕм çула яхăн ĕçленĕ хушăра тăватçĕр аллă ытла шкул уçнă, – пĕлтертĕм эпĕ.

– А эсĕ, Яковлев юлташ, Карл Маркс чăвашсем çинчен мĕн каланине пĕлетĕн-и? – кăсăкланчĕ Ильич.

– Çук, пĕлместĕп, Владимир Ильич, – терĕм эпĕ. – Илтмен те.

– Апла пулсан итле, – терĕ вăл. – Карл Маркс, 1871 çулхи материалсене тĕпченĕ май, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи чăваш хресченĕсен пурнăçĕ ытла та хĕсĕккине палăртнă. Ну, сывă пул, тусăм. Тепре куриччен.

– Сывă пулăр, –терĕм эпĕ, юпа пек тăнăскер, вырăнтан тапранаймасăр.

– Мĕнлерех çынччĕ вăл, Ильич, – чăтаймарĕ Вова Карпов.

– Патвар та çўллех мар кĕлеткеллĕ, – пĕлтерет коммунист. – Янахĕ катрам, куçĕсем илемлĕ. Пысăк пуçĕ çинчен кукша курăнать. Хырнă сухалĕ тапса тухнăччĕ. Ун чухне

вăл кивĕрех костюмпа, шăлаварĕ кăшт вăрăмрах пек курăнатчĕ.

Ленинпа соратникĕ пĕр-ик утăм ярса пусрĕç. Дзержинский сăмах хушрĕ.

– Владимир Ильич, – терĕ Дзержинский тем аса илсе, – Чĕмпĕре поэтсен хули тенине илтнĕччĕ эпĕ. Унта вара чăнахах та нумай çыравçăсем пурăннă-и?

Ильич утма чарăнчĕ, аллисене хыçалалла тытрĕ, куçĕсене кăшт хĕстерсе, хĕвел çине пăхса илчĕ.

– Чăнахах, Феликс Эдмундович, – терĕ вăл, тăван хула ятне илтнипе тата хавхаланса кайса. – Эпĕ çуралса ӳснĕ хулана чăннипех поэтсемпе писательсен хули теме пулать. Кунта Н.Карамзинпа Н.Гончаров тата Николай Огарев ĕçлесе пурăннă. Чĕмпĕр çĕрĕ çинче çыравçăсем сахал мар пулнă, вĕсенчен кашниех тăван Атăл хĕрринче хайĕн ăсхакăлĕн пĕр пайне хăварнă.

Унтан вăл пирĕн еннелле çаврăнчĕ те:

– Ман шутпа Чĕмпĕре кăна мар, Вăтам Атăл тăрăхне те çыравçăсемпе аслă çынсен çĕршывĕ теме пулать. Çапла-и, Яковлев юлташ?

– Тĕрĕс, Владимир Ильич, – терĕм эпĕ пĕчĕк ача пек савăнса. Хамăн çак самантра çулпуç патне пырса ăна тăван пек ыталас килсе кайрĕ.

Калаçу вĕçленчĕ. Ильичпа соратникĕ Боровицкий хапхи еннелле утрĕç. «Мĕнле сăпайлă та лăпкă çын вăл Ильич! Нихăçан мăнкăмăлланмасть, сассине хăпартмасть, çынсемпе пуринпе те тăван-пĕтен пек калаçать: вĕсем калаçнине яланах тимлĕн итлет, шута илет. «Нивушлĕ Ильич Кремĕле хураллакан кашни часовоях пĕлет, хушамачĕпе чĕнет пулĕ, – шухăшларăм эпĕ. – Е манпа хамăр енчи çын тесе ытларах кăсăкланнă-им? Темле пулсан та, хайсене хураллакан салтаксене вĕсем пĕлме пултарнă ĕнтĕ. Шанчăксăр та пĕлмен çынсене правительство çуртне сыхлама шанманни такама та паллă».

– Акă тата тепĕр тĕслĕх каласа парам, – малалла пĕлтерет ватă коммунист. – Октябрĕн юлашки хĕвеллĕ

кунӗнче Ленин Бонч-Бруевичпа уҫӑлса ҫӳретчӗ, кӑнтӑр апачӗ вӑхӑтӗнче канатчӗ. Ильич ун пек чухне хура костюмпа шурӑ кӗпе, кивӗрех кепкӑпа пӗчӗк пушмак тӑхӑнатчӗ. Пушмакӗсем тап-таса та ҫап-ҫутӑччӗ. Шурӑ пӑнчӑллӑ хура галстук ҫыхнӑ, аллисене кӗсьене чикнӗ. Хӑй кӑшт салхуллӑрахчӗ. Куҫлӑхлӑ Бонч-Бруевич ҫӳхе пальтопа, хура шлепкепе. Шӑп ҫав вӑхӑтра вӗсене пӗр фотограф сӑн ӳкерсе илчӗ. Владимир Ильич, тарӑн шухӑша путнӑскер, инҫете тинкерет. Кунтан, Кремль тӳпеменчен, Мускав питӗ илемлӗн курӑнать. Авалхи Кремль стенисем мӗнлерех илемлӗ тата? Шӗвӗр тӑрӑллӑ башнисем еплерех капӑр? Кашни хӑйне евӗр юмах пекех туйӑнать. Хӗрлӗ те кӗрнеклӗ шӑллӑ-шӑллӑ стенасем тӑрӑх ҫил шӑхӑрса чупать. Ҫӳллӗ башня тӑррисем хӗвелпе ялкӑшаҫҫӗ.

Председатель калама чарӑнчӗ. Питне пӗчӗк тутӑрпа шӑлса илчӗ те, сӑмахне малалла тӑсрӗ.

– Октябрь революцин пӗрремӗш уявӗнче, 1918 ҫулхи ноябрӗн ҫиччӗмӗшӗнче, эпир те пултӑмӑр. Вӑл кун Мускав ирех вӑранчӗ. Хулан пур кӗтессинчен те ҫынсем, оркестрсемпе пӗрле «Интернационал» юрласа, хӗрлӗ ялавсем ҫӗклесе Кремль патнелле утрӗҫ. Ҫанталӑк сивӗ, вичкӗн ҫил касать, ҫапах ҫынсем ҫуркуннехи пек савӑнаҫлӑ, кашнин чӗринчех – ҫуркунне.

Ленин ирхине Маркспа Энгельсӑн вӑхӑтлӑх палӑкне уҫнӑ ҫӗрте пулчӗ, унтан Ильич, колоннӑри ытти демонстрантсемпе пӗрле, Хӗрлӗ площаде пычӗ, революци паттӑрсен Асӑну хӑмине уҫнӑ ҫӗрте сӑмах тухса каларӗ.

... Чус хӑмасенчен ҫапса тунӑ ҫӳллӗ трибунӑна хӗрлӗ ҫитсӑпа чӗркенӗ. Трибуна ҫумӗнчи вӑрӑм шӑчӑ ҫинче хӗрлӗ ялав. Ун ҫине йывӑҫ пусма картлашкисем тӑрӑх Ильич улӑхрӗ, аллине ҫӗклесе ҫынсене саламларӗ. Хӑй хура пальтопа, ҫӗлӗкпе.

Ҫынсем хӑшӗ карттус-шлепкесемпе, теприсем ҫӗлӗксемпе. Шинель-курткӑсем ҫинче хӗрлӗ бантсем. Кунта рабочисемпе салтаксем, хресченсемпе вӗреннӗ ҫынсем, хулари ал ӑстисемпе сӑхман тӑхӑннӑ ҫапаталлӑ батраксем пурччӗ.

Акă Хĕрлĕ площадре курсантсем пырса кĕчĕç. Хăйсем пурте çарамасах, çĕнĕ кĕпесемпе. Вĕсем, саваннипе, шинель тăхăнма та килĕшмен. Курсантсем хыççăн çуран салтаксем-пе пулеметчиксем, утлă салтаксемпе тупăсем иртрĕç. Пуç тăрринче самолетсем вĕçсе çӳрерĕç, демонстрантсем çине листовкăсем сапаларĕç. Тепĕр çулне шурă Деникин салтакĕ-сенчен туртса илнĕ пĕр танкне парадра кăтартнă терĕç. Ку танка Францире тунă пулнă.

Яковлев каласа пĕтерчĕ, стена çинчи Ленин сăнĕ çине пăхса илчĕ. Çулпуçăн портрет айĕнчи çак сăмахĕсене тепĕр хут вуларĕ. «Никогда не победят того народа, в котором рабочие и крестьяне узнали, что они отстаивают свою, Советскую власть».

Стенан тепĕр енче «наше дело правое, победа будет за нами» тесе çырни пур. Унта «Остановить врага» тата «Отстоим Москву» ятлă витринăсем çакăнса тăраççĕ. Вĕсене хаçат-журналсенчи ӳкерчĕксене касса илсе майлаштарнă. Кĕтесре, кĕнеке шкапĕсем патĕнче, радио репродукторĕ, çӳхе те хура тарелка евĕрлĕскер, çакăнса тăрать.

**x x x**

Пĕр хĕрарăм урампа пырать. Вĕренекенсем ăна çитрĕç те сывлăх сунчĕç.

– Хĕрачасем, – терĕ вăл, – эсир ютран килнĕ çынсем. Пирĕн ял историне пĕлместĕр пулĕ?

– Кăштах илтнĕ, – хуравларĕ белоруска. – Вата коммунист Яковлев каласа панăччĕ.

– Карпов Вова амăшĕ те чăвашсен ĕлĕкхи йывăр пурнăçĕ çинчен сахал мар каласа кăтартатчĕ, – хушса хучĕ Ларченко.

– Пит аван. Çапах та манăн сире Ленин ашшĕ çинчен каласа парас килет. Вăл çак ял витĕр тухакан хурăнлă мăн çулпа сахал мар çӳренĕ. Урам тăрăх çуран та утнă.

Хĕрарăмсем, ерипен утса-калаçса, урлă урам кĕтессине çитрĕç.

– Çавăнпа та çак анлă тăкăрлăка Илле тăкăрлăкĕ теççĕ. Урамĕ те ун ячĕпе хисепленет. Ялăн кăнтăр енчи, пысăк

кĕпер çинчи, вырăна Ульянов уйĕ тесе калатпăр, – кăмăллăн хуравларĕ Ентер хĕрачи, аллипе хирелле кăтартса.

– Халĕ малалла итлĕр, – пĕлтерет хĕрарăм. – Пирĕн атте ямшăк пулнă, Ленин ашшĕне те сахал мар илсе çӳренĕ. Пĕррехинче...

... 1873 çулхи раштавăн 13-мĕшĕ. Ирхи шартлама сивĕ пит-куçа çатăр чĕпĕтет, çурçĕр çилĕ касать, кайăксем çĕре ӳкеççĕ... Йывăççем шартлатса çурăлаççĕ. Пас тытнă йывăç тураттисем аялалла лапсăрккан усăннă. Шурă юр пĕрчисем кĕмĕшке евĕр йăлтăртатаççĕ. Пуштă çулĕ тăрăх виçĕ лаша кӳлнĕ пĕр çуна пырать, кăвак лашасем хуллен юртаççĕ, хыçлă çуни чĕриклетет. Ял урамĕсенчи сăхман тăхăннă, çăпата сырнă хресченсем ăна çĕлĕкĕсене çĕклесе, пуçĕсене тайса кăмăллăн ăсатса яраççĕ. Самаях кайсан, Тукас тăвайккине çитрĕç, урхамахсем чарăнчĕç: çула юр хӳсе кайнă.

– Малалла кайма çук пулĕ, – терĕ ларкăч çинче ларса пыраканни, аллинчи пушшине çуна ăшне шалалла чиксе. Хыçлă çуна çинчи çынни кĕрĕк сухавине антарчĕ, çĕре анчĕ те йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. Темиçе çухрăмра чиркӳ тăрри йăлтăртатать.

– Итле-ха, тусăм, – йăвашшăн ыйтать хура сухаллă, типшĕмрех питлĕ çынни сылтăм аллипе анăçалла кăтартса, – авă çав пысăк ял мĕн ятлă?

– Ентер ятлă, господин инспектор, – хыпарлать ямшăкĕ. – Унпа юнашарри Тăванкас ялĕ.

– Эх, шел, – тет Илья Николаевич. – Унта çитнĕ пулсан питĕ аванччĕ. Вăл ялта шкул уçас пулать. Чăвашсем ĕçчен халăх, вĕренме те пултараççĕ.

Инспектор çуна тавра ик-виç хутчен утса çаврăнчĕ, кĕсйинчен хутпа кăранташ кăларчĕ те, шăнса кӳтнĕ чĕтрекен аллисене вĕре-вĕре çапла çырса хучĕ:

«В селении, расположенном в пяти-шести верстах от Ходар, имеется церковь. Мыслю, там живет не менее одной тысячи душ. Необходимость открытия школы назрела и там».

– Илья Николаевич, пӳрнӳсене тăм илет вĕт, – хăраса ӳкрĕ ямшăк. – Ара сурчăк та çĕре ӳкиччен пăрланса ларать-иç!

Ульянов кăштах куланҫи турĕ, шĕвĕр кĕске сухалне якатса илчĕ. Вак халăхсем хушшинче шкулсем уҫасшăн Чĕмпĕрте епле тăрăшнине, мĕнле тертленнине аса илчĕ. Вăл шăнса кайнă урисене выляткаласа ҫуни ҫине ларчĕ, хура ҫухавине ҫĕклерĕ. Ямшăк лашисене уттарчĕ. Ульянов шухăша кайрĕ. «Шăнса кӳтрĕм, чĕтреме ертĕм. Хĕвăртрах Выла ялне ҫитес, Чамжаев патне кĕрсе ăшăнас, вĕри чей ĕҫес. Кивҫен илнĕ укҫине те тавăрса памалла, распискине каялла илмелле. Федор Кузьмич – чăваш. Йĕркеллĕ те ăнланакан ҫын, вĕреннĕ, пултаруллă».

– Акă епле ырă ҫын пулнă Ленин аппĕ! – терĕ юлашкинчен хĕрарăм. – Вăл чăвашсемшĕн хытă тăрăшнă: хĕрхеннĕ, пулăшнă, шкулсем нумай уснă.

– Чăвашсемшĕн кăна мар, – пĕлтерчĕ вырăс хĕрачи, – ытти вак халăхсемшĕн те, вырăссемшĕн те нумай тăрăшнă.

*Р.З. Вуланă ҫак икĕ сыпăка документсем тăрăх ҫырнă. (Автор).*

## Мускав парӑнмасть

Вова тулалла тухрӗ. Пӗр ватӑ ҫын вулав ҫурчӗн алӑкне ерипен шакӑртаттарса, уҫрӗ, мӑнукӗсене чӗнсе илчӗ.

– Атьӑр киле хӑвӑртрах, – терӗ вӑл кӗреҫе сухалне шӑлкаласа. – Ватӑ сурӑх йӗкӗреш путексем тунӑ. Пӳрте ҫӗклесе кӗмелле. Аннӳ ӗҫрен таврӑнман-ха. Эпӗ пӗччен пултараймастӑп. – Икӗ ача аслашшӗ хыҫҫӑн васкаса утрӗҫ. Хайсем шакӑлтатса пуплеҫҫӗ.

– Микулки вӑрҫӑри виҫӗ ывӑлӗнчен пӗр харӑсах ҫырусем илнӗ. Пурте сывах, тет.

– Кӳршӗри Ваҫҫук пиччен вара вилни ҫинчен хут килнӗ. Лайӑх ҫынччӗ вӑл. Пасартан килсен, мана кулач касса паратчӗ. Ҫырла, панулми те ҫитеретчӗ. Вӑт.

Ватӑ ҫынпа ачасем курӑнми пулчӗҫ. Карпов та вӗсем хыҫҫӑн ерипен утрӗ. Тавралӑх лӑпкӑ. Тӗксӗм уйӑх хуйхӑллӑ урамсем ҫине кӗмӗл сапать. Ура айӗнчи юр пусмассерен качӑртатать. «Ха, ирхине юр кӑмӑллӑн ҫех кӑчӑртатса пуплетчӗ. Халӗ авӑ ҫиллессӗн шатӑртатать. Хушӑран ҫинҫе саспа чӗриклетсе илет. Ҫанталӑк тата сивӗтет ӗнтӗ. Вулав ҫуртӗнчен ача-пӑчасем тӗркӗлтетсе тухрӗҫ, икшерӗнвиҫшерӗн ушкӑнланса, тӗрлӗ еннелле саланчӗҫ. Вӗсен уҫӑ сассисем кашни урамрах илтӗнме пуҫларӗҫ.

– Ки-но кур-ма пы-мал-ла! – тесе сӑмахсене сыпӑкӑнсыпӑкӑн каласа, темиҫе хут кӑшкӑрашма тытӑнчӗҫ. Пырсан-пырсан татах харӑссӑн кӑшкӑраҫҫӗ. Вовӑна хирӗҫ икӗ хӗрача, урамӑн тепӗр енӗпе калаҫса килеҫҫӗ.

– Кун пек йӗркене хӑҫан пӑрахтармалла?

– Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа ҫавӑн пек кӑшкӑрма тытӑнчӗҫ, унчен пӗлтерӳсем ҫырса ҫапатчӗҫ. Халӗ хучӗ те, вӑхӑчӗ те сахалрах. Капла кино кӑтартакансене ҫӑмӑл.

– Кӑшкӑрашса ҫӳренӗ ачасене укҫасӑрах кинона кӗртеҫҫӗ пулас.

– Ку вара тӗрӗс мар. Ун пирки механике асӑрхаттарӑпӑрха. Эпир комсомолкӑсем.

– Тепĕр тесен, вĕсене те шел. Хăш чухне кино хатĕрĕсене ҫунашкапа туртаççĕ. Ялтан яла, арăмĕпе иккĕш. Ҫитменнине тата хăй уксах. Вăрçăран та çавăншăн юлнă теççĕ.

– Лашасем сахал çав, яланах тивĕçмеççĕ. Патшалăх вăрманне турттармалла. Госпитальсемпе шкулсене, ытти учрежденисене вутă кирлĕ.

«Эх, вăрçă, вăрçă! Мĕншĕн эсĕ çынсене муритлетĕн? Фашистсем айăплă: вĕсем тĕнче халăхне чура тăвасшăн, – шухăшлать Карпов.

– Халĕ манăн кино курма та укçа çук. Пилĕк пус. Енчен те, укçи веçех çук мар. Анне вăтăр тенкĕ ытларах пулмалла. Атте вунă тенкĕ парса хăварчĕ, вилнĕ выльăхсемшĕн (страховка) илтĕмĕр. Анчах аннерен мĕнле укçа ыйтăн-ха! Вăл хăй те сывмар. «Тырă илме кирлĕ тет. Вăл хаклансах пырать. Хам вилсен те...» Атте! Ăçта эсĕ халĕ, атте? Сывах-и е госпитальте? Тен, çапăçура ӳксе юлтăн? Эсĕ партине кĕме хатĕрленнĕччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕн. Уншăн ан кулян.

Юратнă атте. Ӳссе çитсен сан вырăна эпĕ унта кĕрĕп. Тивĕçлĕ пулсан. Тивĕçлĕ пуласахчĕ, хамăр чыса, ял-йыш ятне варалас марччĕ. Тепĕр икĕ çултан акă комсомолец пулатăп. Атте, манăн тата тепĕр ĕмĕт пур. Сана калама юрать-и? Эсĕ вилнех пулсан, сан вилтăпру çине çитсе куратăпах. Шантарсах калатăп, сăмах паратăп. Эсĕ çапăçнă вырăнсемпе çуран утса тухăп, çынсенчен ыйтса пĕлĕп. Хаçат çине те çырса кăларăп. Ну, çитĕ, сывă пул. Хастар çапăç, паттăр пулса Ентере таврăн. Кĕтетпĕр. Хытă-хытă кĕтетпĕр. Эсир çук чухне пире те пурăнма çăмăл мар. Атте, санăн саплăклă çăматтуна, черетлĕн çемйипех сĕтĕретпĕр. Шкула кайнă чух, пĕр кун эпĕ, тепĕр кунне шăллăм тăхăнать, анне тăхăнса ярать. Вырсарникун та унпах çӳрет. Кивĕ пулин те, çăматă çăпатаран хӳтĕрех.

Вова ашшĕ сăмахĕсене аса илчĕ. Вăрçа кайиччен, пӳртрен тухас умĕн, вăл мана çапла каланăччĕ: «Кулленех вĕрен, ĕçле, тăрăш. Унсăрăн пурнăç тытăнса тăраймасть. Пурнăç вăл – кĕрешӳ. Йывăрлăх, çитменлĕхсене çĕнтер.

Çынсемпе йĕркеллĕ пул, туслă пурăн. Тăван çĕршыва юрат. Пурнăç питĕ кăткăс япала. Хăш-пĕр ăнланман çынсемпе калаçмалла. Путсĕр çанталăкпа та кĕрешмелле, анчах чи йывăрри – вăрçа тӳссе ирттересси, тăшмана çĕнтересси».

Карпов хăйсен тĕлне ситрĕ. Улăм витнĕ пӳрт хĕрринче çерçисем чĕвĕлтетсе илчĕç. Ахăртнех, вĕсен йăви патне шăши пычĕ е кушак тустарать. Икĕ çерçи йăваран пăр! вĕçсе тухрĕç те йăмра çине пырса ларчĕç. Анăçра темле сасă илтĕнсе кайрĕ. Карпов хыçалалла çаврăнса пăхрĕ. «Тăхта, ку тата мĕн кĕмсĕртетет? Таçта инçетре. Нивушлĕ вăрçă кунталлах сулăнчĕ? Пулма пултараймасть! Те ман хăлхана çавăн пек илтĕнчĕ? Э, Мускав патĕнчи çапăçусем хĕрсе çитрĕç пулас. Çапла, Мускав парăнмасть. Мускав кĕрешет. Унăн сасси пире те хавхалантарать, вăй парать. Сывă пултăр Хĕрлĕ Мускав!»

**x x x**

Раштавăн вунвиççĕмĕшĕ, шăматкун. Янкăр уяр. Питĕ сивĕ, лăпкă. Коридорта ача-пăча хĕвĕшет. Пурте савăнăçлăн калаçаççĕ, кулаççĕ. Акă картă умĕнче пилĕк-ултă хĕрача пухăннă та ун çине пăхса ăмăртмаллах калаçаççĕ. Пӳрнисемпе Мускав тĕлнелле кăтартаççĕ. Кантăк патĕнче арçын ачасем тăраççĕ, пĕр-пĕрин çине пăхса хĕрсе кайсах пуплеççĕ.

Паян радиопа савăнăçлă хыпар пĕлтернĕ.

– Мускав патĕнче Хĕрлĕ Çар нимĕçсене каялла хăвалать, – пĕлтерет пĕр ачи.

– Урра! – кăшкăрса ячĕ тепри. – Часах вăрçă пĕтет, аттесем киле таврăнаççĕ.

– Нимĕçсен шалчи тулчĕ. Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар!

– Вырăс ачисем киле кайма хатĕрленеççĕ. Телеграмма илнĕ.

– Килех мар, – тӳрлетет тепри, – малтанлăха Тихвин хулине çеç каяççĕ.

Вĕренекенсем пурте картă умне пычĕç.

Шăнкăрав янăрарĕ. Савăнăçлă линейка пуçланчĕ. Ачасем те, вĕрентекенсем те кăмăллă, пичĕсем çинче ирхи хĕвел кулать.

– Нимĕçсем Мускава çавăрса илмелли плана «Тайфун» тесе ят панă, – каласа парать шкул директорĕ. – Вĕсем ăна çуллах пурнăçлама тытăннă.

– Хула вырăнне тинĕс хумханĕ, – тесе каппайланнă Гитлер çынçиен. – Манăн мĕльюн ытла салтака икĕ фельдмаршалпа икçĕр генерал ертсе пыраççĕ. Вĕсене пин самолетпа пин те çичçĕр танк тата вунвиçĕ пин тупăпа миномет пулăшаççĕ. Октябрь уявĕ тĕлĕнче Мускавра нимĕç салтакĕсен парачĕ пулĕ. Тăшман кунталла çиçĕмле хăвăртлăхпа килсе пирĕн тĕп хулана вăйлă çавра çил пек кĕрсе кайма шухăшланă. Сентябрь вĕçĕнче нимĕçсем паллă наступлени пуçланă. Вĕсен танксемпе самолетсем нумайрах пулнă, анчах пирĕн çарсем каялла чакнă пулин те вĕсене вăйлă аркатнă. Пĕр уйăх каялла фашистсем юлашки хут кунталла вăйлăн килме хăтланнă, Мускав патнех çывхарнă. Çапах та Хĕрлĕ Çар вĕсене хулана кĕртмен. Раштавăн 5-мĕшĕнче хамăрăннисем тăшмана каялла хăвалама пуçланă, чылай хуласемпе ялсене ирĕке кăларнă. Тăшман «Тайфунĕ» малтан хурчка евĕр çӳлелле вĕçсе хăпарчĕ. Халĕ вăл чул пекех çĕре персе анчĕ, супăнь хăмпи пекех çурăлса кайрĕ. Пирĕн халăхăн вăйĕпе çилли «Тайфун» çилĕнчен хăрамарĕ. Гитлерăн Мускав ĕмĕчĕ-планĕ путланса ларчĕ.

– Урра! – кăшкăрса ячĕç линейкăра тăракансем. Пурте алă çупаççĕ, кулаççĕ, теприсем куçĕсене шăла-шăла илеççĕ.

– Вăрçă ултă уйăх пырать, – малалла пĕлтерет вăл. – Çав вăхăтра каялла чакнă май, пирĕн çарсем тăшмана сахал мар аркатнă. Хăш-пĕр ял-хуласене темиçе хутчен турта-турта илнĕ. Икĕ эрне каялла кăнтăрти Ростов хулине ирĕке кăларнă. Мускав патĕнчи хальхи çапăçу пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унти тăшмана тытса чарнă, çапса аркатнă. Халь нимĕç çарĕсем талккишпех каялла чакаççĕ, тараççĕ. Нимĕç фашисчĕсене Калинин, Хĕвел анăç тата Кăнтăр хĕвел анăç фрончĕсем хăвалаççĕ.

– Ачасем, паян пирĕн малтанхи савăнăç. Анчах тăшмана хамăр çĕршываран пĕтĕмпех хуса кăлармалла. Ку çăмăлах мар. Хĕрлĕ Çарпа халăхăн нумай вăй хумалла, нумай тă-

рăшмалла пулать. Шкулта лайăх вĕренни, вăй çитнипе колхозра ĕçлени – фронта пулăшниех. Колхозниксемпе пĕрле аслăрах классенче вĕренекенсен вăрлăх тасатма тытăнмалла. Çĕнĕ çул тĕлне хамăр шефа илнĕ дивизисем патне парнекучченеçсем ямалла.

– Лайăх вĕренме, тăрăшса ĕçлеме пионерла сăмах паратпăр, – пĕр харăс каласа тупа турĕç шкул ачисем.

– Çитес ытларикун, яланхи пекех, классенче политинформаци пулать, – терĕ юлашкинчен директор. – Халь асăннă çапăçусем çинчен, унччен аслăрах ачасем хаçатсем тупса вулăр. Тата тепĕр сăмах. Кăçал пирĕн шкулта вĕренӳре ĕлкĕрсе пыман ача çук. Малашне те çавăн пекех пуласса шанатпăр.

Линейка хыççăн уроксем пуçланчĕç. Кĕтесри пӳлĕм. Çиччĕмĕш класс. Доскаран инçех мар «Выпускник» стена хаçачĕ. Вырăс чĕлхи урокĕ пырать.

– Ачасем, – терĕ Полина Карповна учительница. – Халĕ эпир «Малтанхи савăнăç» ятлă сочинени çырăпăр. Унта хăвăр шухăш-кăмăлсемпе туйăмсем тата пĕлни, курни-илтни çинчен ытларах çырăр. Хĕрлĕ Çар вăйлă наступлени пуçлани, сирĕн тăвансем вăрçăра паттăрла çапăçнине те кăтартмалла. Хаçат-журналсенче вулани тата кино курни сире пулăшĕ.

– Сочинени ятне урăхла пама юрать-и?

– Сăвă çырсан тата аванрах пулĕ, – илтĕнчĕç сасăсем.

– Сăвăсем çырма та, урăх ятлă сочинени çырма та юрать, – тет шкул директорĕ. – Камăн мĕнле вăй çитет. Анчах тĕп шухăшĕ çакă пулмалла: нимĕçсене Мускав патĕнче çапса аркатни.

Пӳлĕмре сулхăн, анчах вĕренекенсем пурте хĕрӳллĕ. Çарамасах, çара пуçăн лараççĕ.

Вова Карпов хыçалти партăра ларать. Шухăшлать, çырать. Шăннă кантăк çине пăха-пăха илет. Унта витĕр курăнакан çутă эрешсем. Шап-шурă та илемлĕ чечексем ăна илĕртеççĕ, хавхалантараççĕ. Тен пулăшаççĕ те пулĕ. Вовăна вĕсем Мускав вăрманне аса илтерчĕç. «Акă ман атте ма-

лалла чупать, пăшалтан перет. Тăшман салтакĕсем ӳке-ӳке юлаççĕ. Атте, эсĕ сывах иккен. Хăвăртрах хăвала вĕсене, тискер кайăксене тата хытăрах хăвала».

Малтанхи пысăк çĕнтерӳ – малтанхи пысăк савăнăç, – малалла çырать Карпов. – Пĕтĕм халăх кĕтнĕ савăнăç. – Хĕвел шевли Вова пичĕ çине ӳкрĕ, кăтăкларĕ, тулалла пăхса астарчĕ. «Э, ку кантăк çинче танксемпе самолетсем те пур иккен. Акă вĕсем – малта. Утлă салтаксем вăрман хĕрринчи тăшмансене хăвалаççĕ, çите-çите хĕçпе касаççĕ. Çырма хĕрринчи «Катюша» анăçалла вут-хĕм сирпĕтет. Акă кунта, тунката хыçĕнче, ман аттен «Максимка» пулемĕчĕ сас парать. Атте, вăйлăрах çунтар çичĕ юта. Сана çын вĕрентес çук, эсĕ сержант-командир. Çапах та асăрхан. Суккăр пульăсемпе бомба-йĕтре е мина ванчăкĕсем никам çук çĕре ӳксе путланччăр. Сывă пул, атте. Хăвăн юлташусемпе командирсене пирĕнтен салам кала. Тăшмана çĕнтерсе хăвăртрах киле таврăнмалла пултăр».

Чӳречерен хуллен шаккарĕç. Вова шухăшĕ татăлчĕ. Кăсăя килсе ларнă иккен, пулăшу ыйтать. «Тăхта, тусăм. Пысăк переменăра столовăйра апат çинĕ хыççăн, сан валли паян та çăкăр таткисем илсе килĕп. Эсĕ хĕл илемĕ. Чиперкке хĕрача пекех. Ĕçчен, сăпайлă. Симĕс пурçăн шупăрпа. Пĕсехӳне, сарă кĕпе çиййĕн, сарлака хура галстук çыхнă. Юрататăп эпĕ кайăксемпе йывăç-курăксене».

Полина Карповна типтерлĕ çи-пуçлă, çӳçне шакла касарнă, лăпкă Карпов çине пăхса илчĕ. Вова шурă кĕпе çиййĕн кивĕ пиншак тăхăннă. Мăйĕнче хĕрлĕ галстук. «Ашшĕ вилнĕ хыççăн, вăл самаях пусăрăнчĕ, туртăнчĕ, – шухăшлать вĕрентекен. – Йăваш куçĕсем путса кĕчĕç, питне шуранка çапрĕ. Хуйхă тени çынна ырă тумасть, хĕрхенмест çав! Ачасене те хăртать, вĕсен савăнăçне таптать. Авă Карпов халь сахалтарах калаçать, ытларах тунсăхлать. Çапах хăйне, вăрçăри паттăрсем пекех, çирĕп тытать, кĕрешет, йывăрлăхсене çĕнтерет. Кирлĕ пулсан, хăюллăн калаçать. Ӳрĕксӳрĕк вĕренекенсене тата йĕркене пăсакансене хытă сивлет, усăллă канашсем парать. Унăн тепĕр лайăх енĕ – юл-

ташӗсене вӗренӳре кулленех пулӑшни, вӗсемшӗн вута-шыва кӗме те хатӗр пулни. Пирӗн тунсӑхпа хуйхӑ вӑхӑтлӑха ҫех. Савӑнӑҫпа кулӑ, юрӑ-ташӑ пирӗнтен ҫӗтмен. Вӗсем сӳнми! Клубра концерт-спектакльсем тӑтӑшах кӑтартатпӑр, кино та пулать. радио итлетпӗр. Вӑрҫӑри ҫапӑҫусем ҫинчен халӑха яланах каласа ӑнлантаратпӑр».

Вӗрентекен партӑсем хушшипе ерипен утса ачасене сӑнать, вӗсем ҫинчен шухӑшлать. «Хаяр вӑрҫӑ пырать. Йывӑр. Ҫапах вӗренекенсем хӑйсен тӑванӗсем киле ҫӗнтерӳпе таврӑнасса хытӑ кӗтеҫҫӗ, шанаҫҫӗ. Кашниех ҫав ӗмӗтпе ҫунатланса пурӑнать. Чылай ачасен килӗсене виҫ кӗтеслӗ салтак ҫырӑвӗ килсех тӑрать. Мускав патӗнчи ҫӗнтерӳ пире хавхалантарать, ҫӗнӗ вӑй парать».

Ачасем ҫамка ҫинчи тарне шӑла-шӑла ӗҫлеҫҫӗ, шухӑшласа ҫыраҫҫӗ. Класра хӗвел шевли вылять, Ленин портретне ҫутатать.

---

## Эпилог

Уничере, Ентер шывĕ хĕрринчи тӳпемре, пĕр йывăç аякранах курăнать. Ял çыннисем ăна таврари чи ватă та çӳллĕ йывăç теççĕ. Çывăхра ун юлташĕсем юлман ĕнтĕ, хăрса, çĕрсе пĕтнĕ. Темиçере вăл – çĕрте, икçĕрте е пилĕкçĕр çулта, ăна никам та пĕлмест. Кăштрака хупăллă çак пĕччен юман, вăйлă çил вăхăтĕнче сайра турачĕсемпе çапкаланса çилленнĕ пек пулать. Вăштăр-вăштăр çилпе хуллен кашлать. Тӳлек çанталăкра, темскер аса илнĕ пек, хăй тĕллĕн калаçать, пăшăлтататать. Хĕвел-уйăхпа çăлтăрсене сума сăвать. Унăн аса илмеллисем пайтах. Çын пек ăслă пулас пулсан, хăйĕн ĕмĕрĕнче мĕн-мĕн курса илтни çинчен нумай-нумай каласа кăтартнă пулĕччĕ.

Ĕлĕкхи нушаллă пурнăçа лайăх астăвать вăл. Вăрмантан çунашкапа вутă туртни е пӳртре ачасем выçă макăрса ларни, йывăç суха пуçпе сухалани е çуркунне крахмал пухса мăян икерчи пĕçерни халĕ те унăн куçĕ умĕнчех.

Çуллахи пĕр ирхине пĕлĕтелле кармашакан патвар юман хăрушă хыпар пĕлнĕ, вăрçă. Çынсем куляннă, куççулĕсене шăла-шăла тăванĕсене фронта ăсатнă. Ĕлĕкхи кĕрнеклĕ йывăç та пуçне салхуллăн пĕкнĕ, шăпланнă, вăрттăн хуйхăрнă. Çак йывăр кунсенче хирте вăкăрпа суха туни, çынсем плуг туртса пахчара çĕрулми лартни, вăрçăран хура конвертлă çырусем килни унăн асĕнчен нихăçан тухас çук. Астăвать, пурне те астăвать сăпайлă та лăпкă йывăç. Миçе арçын вăрçăран таврăнайманнине, камсем аманса йывăрлăха лекнине те пĕлет, манмасть, вĕсемшĕн хурланса пăшăрханать. Фронтра пуçĕсене хунă вилĕмсĕр кăйкăр-паттăрсене манманшăн, яланах асра тытнăшăн чĕррисемпе пĕрле мухтанса савăнать. Ял-йышсемпе иртен-çӳрене хăрма пуçланă турачĕсемпе мăнаçлăн сулса саламлать, ырлăх-сывлăх сӳнми телей сунать. Ирхине ачасем шкула чупни е каçхине кино курни, уявсенчи урам тăрăх хĕрлĕ ялавсемпе утни е ёлка тавра çаврăнса юрлани-ташлани кăмăла каять, савăнтарать ăна. Ачасем урокра лайăх паллă илнине пĕлсен е

колхоз хирĕсенчен ывăнса таврăннине курсан, вăл тата хĕпĕртет, сывлăм тумламĕ-куççульне шăла-шăла илет, кукăр пӳрнисене вылятса алă çупать.

Кайăксем тăтăшах ун патне пыраççĕ чĕр çине лараççĕ те юрă кĕвĕлеççĕ. Вара вăл хĕпĕртет, хăйĕн йĕкелĕ-ачисемпе пупленĕ евĕр пакăлтатать. Çуллахи симĕс, кĕрхи сарă çулçисемпе тата шултра çимĕçпе йăпанать, вĕсене этеме парнелет. Хĕвел шевлипе çил ачисем, çумăр шăрçипе юр пĕрчи-чечекĕсем – унăн яланхи хăнисем.

Ĕмĕрхи йывăç патĕнчи икĕ ача выляççĕ. Пĕри карттуспа, тепри чечеклĕ тутăр çыхнă. Хăйсем савăнăçлă.

– Хисеплĕ асатте, вăрçă юмахне каласа памăн-ши.

– Тепĕр чухне, пепкесем, – йăваш саспа хуравлать асатте-йывăç. Самантлăха шăпланать, тунсăхлать. Унтан тураттисемпе ял варринчи мăн палăк çине кăтартать:

– Ăна ан манăр! – тет.

Мухтавлă та паттăр юман-улăп хăрман-ха, малашлăха ĕмĕтленсе пурăнать. Тавралăха çивчĕ хураллать, анăçри хура пĕлĕтсене тимлĕн сăнать. Хурлăхлă куççуль ан пултăрччĕ тек.

1980-мĕш çулхи ака-юпа уйăхĕсем.

*429004, ЧР,*
*Шумерлинский р-н,*
*дер. Лесные Туваны.*
*Афанасьев Анатолий Трофимович.*

## ТУПМАЛЛИ


Пролог ........................................ 4

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Ем-ешĕл уйăх ........................................ 6
Чечек кăшăлĕ ........................................ 10
Иккĕмĕш хуйхă ........................................ 17
Сереп пулăшать ........................................ 21
Пилотка ........................................ 26
Тăлăх текерлĕк ........................................ 32
Хурлăхлă хыпар ........................................ 40
Вĕрентнĕ вăкăрсем ........................................ 44
Кĕр илемĕ ........................................ 50
Шурă çерçи ........................................ 60
Сывă пулăр, тăрнасем! ........................................ 68

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Инçетри хĕрача ........................................ 71
Вĕре çĕленпе чечек ........................................ 76
Эсĕ пионер пулсан ........................................ 84
Аттесем вăрçăра чухне ........................................ 91
Хĕллехи шăпчăк ........................................ 98
Тилĕ ташши ........................................ 109
Раштаври чĕпĕ ........................................ 114
Кавĕрле юсанчĕ ........................................ 121
Мĕн-ши вăл, туслăх? ........................................ 130
Çулпуçпе калаçни ........................................ 135
Мускав парăнмасть ........................................ 143

Эпилог ........................................ 150

**Афанасьев Анатолий Трофимович**

**Рассказы из писем**

Компьютерная вёрстка *Е.В. Шабалкиной*
Дизайн обложки *Н.Л. Лукиной*

Подписано в печать 03.09.2020.
Формат 60x84/16. Бумага офсетная.
Печать оперативная. Физ. печ. л. 9,5
Тираж 20 экз. Заказ № К-146.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034 г. Чебоксары, ул. М. Павлова, 50/1
Тел.: (8352) 41-27-98, 323-353
E-mail: newtime1@mail.ru

280.00